К С(Чув)
Д13
31917 чув

Васлей Давыдов-Анатри.

# Аттесен çулĕпе



ББК 84 Чув 7
Д 13

Для детей среднего школьного возраста

**Василий Иванович ДАВЫДОВ-АНАТРИ**

ДОРОГАМИ ОТЦОВ

Повесть и рассказы

На чувашском языке

Редактор В. П. Тимаков. Художник И. Л. Андреев. Художественный редактор М. Д. Давлятшин. Технический редактор Н. В. Васильева. Корректор Л. К. Егорова.

ИБ 2244

Сдано в набор 04.11.88 г. Подписано к печати 28.06.89. НТ 26388. Формат $84 \times 108^1/_{32}$. Бумага типографская № 2. Гарнитура литературная. Печать высокая. Усл. печ. л. 5,88. Усл. кр.-отт. 6,30. Учетно-изд. л. 5,16. Тираж 6000 экз. Заказ № 3680. Изд. № 70. Цена 20 коп. Чувашское книжное издательство. 428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4. Типография № 1 Государственного комитета Чувашской АССР по делам издательств, полиграфии и книжной торговли, 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

**Давыдов-Анатри В. И.**

Д 13 Аттесен çулĕпе. Повесть. Калавсем.— Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1989.— 112 с.

3191 чув

Калавсенче писатель ачасен пурнăçне, ăйăи-куллине, вĕренĕвне тĕрлĕ енлĕн кăтартса парать. «Сатин кĕпе»—автобиографиллĕ повесть.

**ББК 84 Чув 7**

Д $\frac{4803710201-109}{М 136 (03)-89}$ 70—89

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1989 ç.

ISBN 5—7670—0180—4

ПРОВЕРЕНО
2010

Национальная библиотека ЧР
4-031917

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

М т 3 3835 Т 5000 1989г

Васлей Давыдов-Анатри

# Аттесен çулĕпе

Повесть. Калавсем



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
1989

тырӑ акнӑ, тырӑ вырнӑ, вӑрман каснӑ, турттарнӑ. Пӗррехинче ҫапла атте шартлама сивӗ кун вӑрмантан ҫав тери шӑнса таврӑннӑ, ӑшӑнас тесе, тўрех вӗри кӑмака ҫине улӑхса выртнӑ. Анчах вӑл ун пек тунинчен нимле сиплӗх те курайман, сиенӗ вара калама ҫук пысӑк пулнӑ: атте хӗне кайнӑ, ӗмӗрлӗхе хӑрах урасӑр тӑрса юлнӑ.

Вӑл уксахласа утатчӗ. Ҫавна пула мана ачасем мӗншӗн те пулин кўреннӗ, ҫилленнӗ вӑхӑтра «Уксах! Уксах!» тесе йӗкӗлтетчӗҫ. Паллах, ку ман чуна ҫав тери пырса тиветчӗ, ыраттаратчӗ.

Ӳссе киччӑ пулса ҫитсен, атте хамӑртан сакӑр ҫулхӑмри Сӗнтӗр ялӗнчи Санюк ятлӑ хӗре качча илнӗ. Вӗсем пӗрле, алла-аллӑн тытӑнса, пурнӑҫ тума тӑнӑ, пӗрле телей шырама пуҫланӑ.

## АННЕҪӖМ, АННЕ...

Халӗ эпӗ анне ҫинчен шухӑшлатӑп та куҫӑмран куҫҫуль тухать...

Мӗн кӑна курман-ши ман анне хӑйӗн вӑрӑм кунҫулӗнче?

Акӑ 1921 ҫул. Уй-хирсенчи тырпула хӗвел ҫунтарса ячӗ, халӑх выҫӑ тӑрса юлчӗ. Ҫак йывӑр кунсенче вӑл, ачисене вилӗмрен хӑтарса хӑварас тесе, мӑян ҫӑнӑхӗнчен пашалу пӗҫеретчӗ, уткӑшкартан пӑтӑ туса ҫитеретчӗ...

Вӑрҫӑ хыҫҫӑн вӑрҫӑ. Ҫуклӑх, ҫитмен пурнӑҫ унӑн хавшак чӗрине мӗн чул ҫунтарман-ши? Ун ҫинчен чунчӗререн калас тенӗ сӑмахсем ҫав тери нумай, унӑн пуҫламӑшӗ те, вӗҫӗ те пулас ҫук. Вӑл, хӑй хут вӗренмен пулсан та, пире ҫутта кӑларас тесе нумай тӑрӑшрӗ: ирсерен, апат ҫитерсе, шкула ӑсататчӗ, киле таврӑнсан, уроксем мӗнле иртни ҫинчен ыйта-ыйта пӗлетчӗ. Хӗллехи кунсенче, урамран шӑнса кӗрсен, алӑсене вӗре-вӗре ӑшӑтатчӗ, пире валли пир-тӑла тӗртетчӗ, кӗпе-йӗм ҫӗлетчӗ, чӑлха-алсиш ҫыхатчӗ, кӗрӗк-сӑхман саплатчӗ. Эпир мӗнле те пулин айӑпа кӗрсен вара

йĕре-йĕре ятлатчĕ, çынпа лайăх пулма вĕрентетчĕ. Хырăм выçсан, пире хăй çиес тенĕ çăкăр татăкне тыттаратчĕ. Эпир лайăх тунă ĕçшĕн савăнатчĕ, начарришĕн хурланатчĕ. Пирĕн çинчен ялйыш усал каласран çав тери шикленетчĕ вăл. Пăртак çунат сарма пуçласан вара çĕре хисеплеме, ĕçе юратма хăнăхтарчĕ, тус-тăвана чунтан савма, тăшмана кураймасăр пурăнма вĕрентрĕ...

## «ТИМĔР ҪАРТА»

Пурнăç пĕрре те ăнса пымасть. Ҫашни килтех хуйхă-суйхă асать. Выçлăх çулĕ пĕтĕм халăха хуçса хăварчĕ. Çав çулах кĕркунне пирĕн пус айкки ишĕлсе анчĕ, унта пăрулас ĕне кайса вилчĕ. Мĕн тăвăн, эпир юр-варсăр тăрса юлтăмăр. Ирĕксĕрех типĕ тытатпăр. Пахчаран пухса кĕртнĕ çĕрулми вара çур хĕле те çитмерĕ. Аттепе анне тем те шухăшласа пăхаççĕ, анчах ĕç çаплах ăнса пымасть.

— Инкек-синкек йăлтах турăран, ун умĕнче хамăр çылăха кĕнĕрен пулса пырать пулĕ,—теççĕ хăйсем.

Вĕсем турра пуççапаççĕ, унтан çăмăллăх ыйтаççĕ. Ҫу та пулăшмасть. Çĕнĕ çул каçĕ атте чӳречепе алăк янахĕсем çине шурă пурпа хĕрес туса тухрĕ, киле инкек-синкек çĕмĕрсе ан кĕтĕр тесе, хăй çине акапуç тимĕрĕсем çакрĕ, çурт тавра виç-тăвата хут чупса çаврăнчĕ, «тимĕр карта» хыврĕ. Эпир, ачасем, атте мĕн тунине нимĕн те ăнланмастпăр, çав вăхăтрах хамăр та турăран çăлăнăç, çăмăллăх ыйтатпăр. Анчах тура пире пĕрре те итлемест.

Çулла та çитрĕ. Вара анне кунсерен тенĕ пек уткăшкар яшки пĕçере пуçларĕ. Хутран-ситрен вăл пысăк хурана, вĕттĕн-вĕттĕн тураса, пĕрер çĕрулми яратчĕ. Эпир, çиме ларсан, çĕрулми турамĕ кашăка çаклантăр тесе, яшкана мĕн чухлĕ пăтратман пулĕ. Çук, темле тăрăшсан та, темле шырасан та çĕрулми кашăка лекместчĕ. Ĕмĕртен пыракан выçăллă-тутăллă пурнăç пуç çинчен çаплах анасшăн мар. Анчах чун-чĕрери шанчăка çухатма юрамасть — малалла тапаланмалла.

# ҪĂЛЮҪ АППА

Пирĕн ҫемье пысăкчĕ. Хĕлле сурăхсем пăранланă вăхăтра пĕчĕк пӳртре выртса тăма та вырăн ҫукчĕ. Ачасенчен асли Ҫăлюк аппаччĕ. Вăл чипер хĕрачаччĕ. Мăшăр куҫĕ хуп-хураччĕ. Ҫырла пек тути яланах кулса тăнине пула ун сăнĕнче сӳнми хĕвел ҫиҫсе тăнăн туйăнатчĕ. Ахальтен мар пулĕ ĕнтĕ, ӳссе ҫитĕнсен, ун патне тĕрлĕ ялсенчен хăтана пыратчĕҫ. Анне ăна качча хамăр яла парасшăнччĕ, яланах: «Арапуҫ ачисем мĕнрен кая, пĕринчен пĕри лайăх. Ҫĕтнĕ телейӳ алăк умнех килĕ-ха»,—тетчĕ.

Чăнах та, аппан ялтах Микуль ятлă тус-каччи пурччĕ. Питĕ маттур, сăпай каччăччĕ вăл. Ăна анне те хисеплетчĕ, кăмăллатчĕ. Анчах Микуль ăнсăртран чирлесе ӳкрĕ те ура ҫине тăраймарĕ, часах ҫĕре кĕчĕ. Ҫу аппана питĕ амантса, хуҫса хăварчĕ. Вăл хытă кулянма, пуҫне усса ҫӳреме пуҫларĕ, пĕр вăхăт хушши урама вăййа тухма та пăрахрĕ. Анне унăн хуйхине пусарма тăрăшатчĕ:

— Хытă кулянса мĕн тăвăн ĕнтĕ? Чĕррисен вилнисем хыҫҫăн кайма ҫук. Турă ҫырни тупăнĕ-ха,—тетчĕ вăл.

Ҫун хыҫҫăн кун, эрне хыҫҫăн эрне иртрĕ. Пĕррехинче аппа хамăртан вуникĕ ҫухрăма, Мăрата, Михала пиччесем патне ларма кайрĕ. Ун чухне ăна Тукай ачи, Тимуш ятлă каччă, куҫ хывнă-мĕн. Аппа лармаран таврăнсан, пĕр ҫич-сакăр кунтанах, пирĕн ҫурт умне хыҫлă ҫуна кӳлнĕ лайăх лаша килсе чарăнчĕ. Ҫуна ҫинчен икĕ ҫын хăвăрт сиксе анчĕҫ те пӳрте кĕчĕҫ Вĕсенчен пĕри — ватă, вăрăм сухаллă, тепри — ҫамрăк. Ҫу вăл хайхи аппана куҫ хывнă каччă, Тимуш, пулнă иккен. Эпĕ, пĕчĕк ача, вĕсем мĕншĕн килнине, паллах, чухлайман ĕнтĕ.

Мана, улача йĕм тăхăннă ачана, аппа пӳртрен тула ҫавăтса илсе тухса кайрĕ:

— Эсĕ, Ваҫлей, ҫак ҫынсем каймасăр, тархасшăн, ан кĕр пӳрте. Сан кăвапу тĕлĕнчен кĕпӳ шăтнă. Намăс,

аван мар. Хăнасем кулĕç. Кÿрше, Тарье инке патне, кайса лар,— терĕ вăл.

Пĕчĕк ачан хăнасене курас килнĕ пуль çав,— эпĕ аппа хыççăнах пÿрте йăпшăнса кĕтĕм те кăмака хыçне пытантăм.

Унта калаçу пуçланчĕ.

— Эпир сирĕн тына пăру пур тенине илтрĕмĕр. Эсир хирĕç мар пулсан, пирĕн ăна туянас кăмăл пур,— пуçласа ячĕ хăйĕн сăмахне ватă хăна.

Вăл каласа пĕтеричченех, анне ăна:

— Çук, çук, ан та калаçăр: вуникĕ çухрăм таран, Тукая çити, хĕр памастпăр!— тесе хучĕ.

Хăнасем сĕтел çине эрех кăларса лартрĕç. Малтанхи черккене аттене тыттарчĕç. Атте, ĕçме пăртак юратакансккер, сĕнтерсе тăмарĕ, шалтах ĕçсе пачĕ. Анне çав тери тарăхса кайрĕ.

— Намăссăр, эрехшĕн хĕрне те сутса яма хатĕр иккен,— тесе аттене вăрçма пуçларĕ. Пÿрт кĕрлесе çеç тăрать.

— Эс, Санюк, мана ан вăрç-ха. Хĕртен хăйĕнчен ыйтса пăхас. Вăл мĕн калĕ,— терĕ атте, аннене лăплантарса.

Кăлюк аппана, кăмака умĕнчи пÿлĕмре пуçне чиксе ларакансккерне, сĕтел умне чĕнсе кăларчĕç.

— Ну, Кăлюк, Тукайран сана çураçма килнĕ. Мĕнле шутлатăн, каяс кăмăлу пур-и?—ыйтрĕ атте.

Аппа ватă çын çумĕнче ларакан каччă çине вăтанараххăн пăхса илчĕ те:

— Эпир Тимушпа калаçса татăлнă. Вăхăт çитрĕ, кайма шутлатăп. Сиртен пиллĕх ыйтатăп,— терĕ.

Аппа сăмахĕсем хăтана килнĕ çынсене савăнтарса ячĕç, аннене вара пуçран чукмарпа çапнăн туйăнчĕ пулас. Вăл йăлтах урса кайрĕ. Хăтана килнĕ çынсене темтепĕр каласа тăкрĕ...

Хăнасем калаçса татăлаймасăрах тухса кайрĕç. Кăлюк аппа макăрса юлчĕ...

Çакăн хыççăн Кăлюк аппа килтен темиçе хутчен те вăрттăн тухса кайма тăчĕ, анчах ĕç кăлараймарĕ.

Утă çийĕ çитрĕ. Пĕр ирхине атте лаша кӳлчĕ те, пире пурне те лартса, утă çулма илсе кайрĕ. Кăлюк аппа пирĕнпе пыма килĕшмерĕ. Анне унăн вăрттăн шухăш-кăмăлне сисрĕ пулас, ăна кĕлете хупса, пысăк çăрапа питĕрсе илчĕ.

— Эпĕ сана çуратнă, ӳстернĕ. Хамран уйăрса, таçта çити качча парас çук,— терĕ вăл ăна.

Эпир çаранран хĕвел ансан тин таврăнтăмăр. Лав картишне кĕнĕ-кĕменех, анне, витререн алтăрпа шыв ăсса илсе, кĕлет еннелле чупрĕ.

— Тем курса тăрăн, Кăлюка шыв та парса хăварман вĕт,— терĕ вăл, пĕтĕм чунтан пăшăрханса. Вара кĕлет алăкне уçнă-уçманах кăшкăрса ячĕ:— Çук! Кăлюк çук! Кĕлет виттине сирсе тухса тарнă!

Çапла, аппа, темле чăрмав пулсан та, темле сыхласан та, хăй юратнă çынна, Тимуша, качча кайрĕ.

## ТĔРĔС КАЛАТЬ АННЕ...

Çуллахи çанталăк чуна уçса ярать. Пахчасенче çимĕçсем пулса çитнĕ ĕнтĕ. Кăçал пирĕн пахчара акнă кишĕр шăтмарĕ. Ку пурне те çав тери тарăхтарчĕ. Мĕн тумалла? Эпĕ Пăлька йăмăкăма хам пата чĕнсе илтĕм те:

— Сан кишĕр çиес килет-и?—тесе ыйтрăм.

— Килмесĕр. Илюксен те, Ястуксен те—пурин те пур. Пирĕн кăна çук,—терĕ вăл.

— Апла пулсан итле: Çăнахви пиччесен пахчине кишĕр вăрлама каятпăр.

— Çаклансан мĕн тăвăпăр?

— Чее пулмалла, çакланма юрамасть.

Улма йăранĕсем хушшипе хырăмпа шăва-шăва, çын пахчине каятпăр. Çитрĕмĕр. Кишĕр кăлара-кăлара хĕве тултаратпăр. Унччен те пулмарĕ, Çăнахви пиччесен хыçалти хапхи чĕриклетни илтĕнсе кайрĕ. Эпĕ те, Пăлька та, хамăр ăçтине манса, кил еннелле чупатпăр. Ним тума та çук. Хĕве тултарнă кишĕрсем ӳке-ӳке юлаççĕ. Картишне çитсе выртрăмăр. Иксĕмĕр те сиксе чĕтрет-

пĕр. Пире никам та курман пулас. Пĕр сас-хура та илтĕнмерĕ. Эпир вăрланă кишĕре васкаса чăланти çўп-çе тĕпне пытарса хутăмăр.

Хĕвел те анчĕ. Аттепе анне Пўртлĕ вăрманĕнчен вут-шанкă, çапă тиесе килчĕç. Пурте йĕркеллĕ, аван пырать темелле. Атте пўртре. Анне лаçра яшка çакать. Эпир, Пăлькапа иксĕмĕр, хуран патĕнче вут çуннине пăхса тăратпăр.

Сасартăк атте сасси илтĕнсе кайрĕ:

— Ваççапа Пăлька халех пўрте кĕччĕр, калаçмалли пур!

Эпир атте куçĕнчен пăхса тăратпăр. Сĕтел çинче пĕр чашăк кишĕр.

— Ну, ачамсем, калăр: паян эсир ăçта пултăр, мĕн турăр?—ыйтать пиртен атте.

Эпир нимĕн те чĕнместпĕр.

— Эпĕ эсир ăçта пулнине яла кĕрсенех пĕлтĕм. Ну, мĕн калас тетĕр, калăр...

Эпир каллех, çăвара шыв сыпнă пек, ним чĕнмесĕр тăратпăр. Аттене ку килĕшмерĕ пулас, вăл мана ярса тытрĕ те:

— Эсĕ—асли. Ак сана çын пахчи, ак сана кишĕр!—тесе пĕр-икĕ хутчен питрен çупса ячĕ. Эпĕ халиччен атте мана çапла питрен çупнине астумастăп. Намăс. Пăлька тухса тарма ĕлкĕрчĕ. Эпĕ те атте аллинчен вĕçерĕнтĕм. Хам ниçта кайса кĕме пĕлместĕп, йĕретĕп...

Ку ĕç пулса иртнĕ хыççăн темиçе кун хушши эпĕ атте куçĕ умне курăнмарăм. Чылай вăхăт иртсен, атте ман пата пычĕ те хуллен çеç çапла каларĕ:

— Ну, Ваçça, пĕр кун сана мĕншĕн питрен çупса янине ăнлантăн-и ĕнтĕ?—терĕ.

Эпĕ каллех нимĕн те чĕнмерĕм.

— Урăх ют çын япалине ыйтмасăр тытнă ан пултăр!.. Астуса юл çакна.

Астуса юлтăм — халь те манмастăп.

## ХУСАНА — ВЁРЕНМЕ

Ман аттепе анне иккёшё те вёренмен, хут пёлмен ҫынсем пулнă. Паянхи пек астăватăп: пёр ҫулхине аттене ялти кётӳ ачисем валли тырă, укҫа пухма хушнăччё. Атте кётӳ хырҫи кам мён чухлё панине патак ҫине картса пычё.

Хут ҫине алă пусмалла пулсан, вăл хамăрăн ана паллине — икё пёкё — ӳкерсе хуратчё.

Аннепе атте пире чăтма ҫук вёрентесшён ҫунатчёҫ.

— Халь сире Ленин, совет самани ҫул уҫса пачё. Пирён пек вёренмесёр тăрса ан юлăр,— тетчёҫ вёсем.

Пирён ялта икё сыпăклă шкул пурччё. Ялти ватă ҫынсем каланă тăрăх, ăна уҫма Ленин ашшё, Илья Николаевич Ульянов, пулăшнă-мён. Ҫак шкулта пирён Макҫăм пичче вёренетчё. Вăл ҫамрăклах питё ёҫчен, тавҫăруллă ачаччё. Ăна атте хăйпе пёрле уй-хир, вăрман ёҫёсене илсе ҫӳретчё. Макҫăм пичче хамăр ялта комсомола малтан кёрекенсенчен пёри пулнă. Ун патне тăтăшах каччăсемпе хёрсем пыратчёҫ, вёсем пёрне-пёри хăйсен шухăш-кăмăлне кала-кала паратчёҫ.

Пиччен Матёрне ятлă юратнă хёрё пурччё. Вăл пиртен тăвата кил урлă ҫеҫчё. Хăй йăрăс пӳллё, хӳхём,васкамасăр калаҫакан хёрачаччё. Пичче уйпа каҫхи вăйăсенче тёл пулма тăрăшатчё.

Ялти шкултан вёренсе тухсан, Макҫăм пичче Хусана вăрман институтне кайма шут тытрё. Аттепе анне унăн шухăшне чун-чёререн ырларёҫ.

— Питё аван, вёренсе тухсан вăрман улпучё пулатăн,— терё ăна атте пăртак кулараххăн.

Кёркунне те ҫитрё. Пиччен хулана вёренме каймалла. Анне ун валли апат-ҫимёҫ, кёпе-йём хатёрлерё. Атте тăхăр пушăтран ҫёнё ҫăпата турё...

Пичче, кутамкка ҫакса, пёрремёш хут инҫе ҫула тухрё. Эпир ăна укăлчаран тухиччен аннепе иксёмёр ăсатса ятăмăр.

— Ну, ывăлăм, ҫулу телейлё пултăр. Ҫăмăл пурнăҫ шырама ан тăрăш. Вёрен. Пирён ята ан яр, сыру сыр,—

терĕ ăна анне, хăйĕн питне саппун вĕçĕпе хупласа.

Эпĕ анне çине пăхса илтĕм: ун куçĕнчен куççуль юхать. Пичче пире, аннепе иксĕмĕре, ыталаса чуптурĕ те хăвăрт малалла утса кайрĕ.

Эпир ăна вăл мĕн курăнми пуличченех пăхса тăтă-мăр.

## САТИН КĔПЕ

Макçăм пичче хулара институтра вĕренме пуçланă-ранпа çур çул иртрĕ.

Пĕр хĕллехи кун пиччерен çыру илтĕмĕр. Унта вăл раштава киле канма пыратăп тесе çырнă. Атте Йĕпреç станцине, вăтăр пилĕк çухрăма, пиччене илме лашапа кайрĕ. Эпир, киле юлнисем, савăннипе ниçта кайса кĕме пĕлместпĕр: пичче, хула çынни, «вăрман улпучĕ», яла канма таврăнать!

— Килеççĕ, килеççĕ,— тесе кăшкăрса ячĕ Иван пичче, урамран пÿрте чупса кĕрсе.

Вырăсла хапха яриех уçăлса кайрĕ. Пирĕн ума хула тумтирĕ тăхăннă çÿллĕ те яштака çамрăк çын тухса тăчĕ. Хăйне паллама та çук. Ку Макçăм пичче пулчĕ. Эпир пурте ун патнелле ыткăнтăмăр. Пичче малтан аннене, унтан пире, пĕчĕккисене, пĕрерĕн-пĕрерĕн чуптурĕ. Пÿртре савăнăçлă калаçу пуçланчĕ.

— Халĕ пирĕн пек çынсене, хресчен ачисене, çул уçă. Мана, ялтан килнине пĕлсенех, ятарласа чăвашсем валли уйăрнă çурта вырнаçтарчĕç. Вĕренме патшалăх пулăшать, укçа парать. Эпир—вырăсĕ, тутарĕ, чăвашĕ— пурте пĕрле килĕштерсе, туслăн пурăнатпăр,— каласа парать пичче.

Вара вăл хăйĕн пысăк хутаçне салтрĕ те унтан пĕр шурă хут тĕрки туртса кăларчĕ. Вăл Ленин сăнĕ пулчĕ. Атте ăна çавăнтах, лайăх тикĕслесе, стена çумне çыпăçтарса хучĕ.

— Пÿрт ăшчикки уçăлсах кайрĕ,— терĕ вăл.

Пичче хутаççинчен тепĕр тĕрке, сатин тĕрки, туртса кăларчĕ.

— Ку пӗчӗк Ваççапа пӗчӗк Пăлюк валли кӗпелӗх,—терӗ.

Пӗр кунне анне мана пичче парнинчен пӗрремӗш хут сатин кӗпе çӗлесе пачӗ.

## ПĂРЛĂ ÇУМĂР

Шуралса шурăмпуç хăпарать. Хутран-ситрен автансем авăтни илтӗнсе каять. Пăхатăп та — пуç вӗçӗнче анне тăра парать, мана тутлă ыйхăран вăратать.

— Тăр, ачам: тыр вырма каймалла. Çанталăк лайăх,— тет хăй.

Куç уçăлмасть, чăтма çук çывăрас килет. Анчах ним тума та çук — тăмаллах. Картишӗнче атте лаша кӳлсе тăратнă, пире кӗтет. Маюк аппа çыхă тумалли кӗлтесене йӗпетрӗ, хирте çиме хăяр татса кӗчӗ.

— Пурте хатӗр, ларăр,—терӗ атте.

Вара эпир хире, тырă пуссине васкарăмăр.

Хӗвел те тухса сарăлчӗ, хăйӗн хӗрӳ, ылтăн хӗлхемӗсене çӗр çине сапалать.

Эпир хӗрсе ыраш выратпăр. Пӗшкӗнме те çук, пӗшкӗнсен — çӗкленме çук: пилӗк ыратать. Пуçа тӗрлӗ шухăш килсе кӗрет. «Мӗншӗн-ха капла? Ялти пуянсен тырă вырмалли машинăсем пур. Пирӗн вара çурлапа çавасăр пуçне нимӗн те çук. Ӗмӗрех çапла пилӗке авмалла, шăмшака ыраттарса пурăнмалла-шим?»— тесе шухăшлатăп.

Алăра çурла, каллех тырă вырма пуçлатăп: кăчăрт! кăчăрт!

Унччен те пулмарӗ, ман куç умӗ хуралса кайрӗ...

Эпӗ çурлапа кача пӳрнене каснă-мӗн. Пурте ман пата чупса пычӗç. Мӗскер тумалла?

Анне пуçне çыхнă тутăра хӗрринчен хăвăрт çурса илчӗ те ман сурана тăпра сапса çыхса ячӗ.

Алăра каллех çурла. Анне васкатать.

— Каç пуличчен каçалăка пӗтересчӗ,—тет.

Кăнтăрла та сулăнчӗ. Эпир апатлантăмăр: çăкăрпа квас, хăяр çирӗмӗр. Унтан пăртак выртса канма çеç

шутланӑччӗ — тӳпере хура пӗлӗтсем явӑнма тытӑнчӗҫ. Нумай та вӑхӑт иртмерӗ, хаяр ҫил ҫӗкленчӗ, асар-писер тӑвӑл пуҫланса кайрӗ. Ҫиҫӗм ҫиҫет, аҫа ҫапать. Пӑрлӑ ҫумӑр тӑкса антарчӗ. Пирӗн ыраша йӑлтах ҫапса-аркатса хӑварчӗ. Анне чӑтаймасӑр йӗрсе ячӗ.

— Мӗн калас тен: ҫип ҫинҫе ҫӗртенех татӑлать ҫав,— терӗ атте.

Инкек куҫа курӑнса килмест ҫав.

## ЕНТЮК ТУЙӖ

Эпӗ хамӑн ӗмӗрте туйра сахал мар пулнӑ, анчах та Ентюк аппа туйӗ пек туй курман.

Ентюк—Пӑлапуҫ Пашъелӗнчи аннепе пӗртӑван Наҫка аппа хӗрӗ. Унӑн ашшӗ, Ванюк йысна, ӗҫчен, лайӑх пурӑнакан хресчен пулнӑ. Ентюк аппа юратнӑ каччи Арҫук та Пашъелӗнчех ҫуралса ӳснӗ. Унӑн ашшӗ-амӑшӗ те ҫӑкӑр-тӑвартан ҫителӗклӗ пурӑннӑ.

Ентюкпа Арҫук иккӗшӗ те ҫынсем пӑхса савӑнмалла чиперччӗ. Халӗ эпӗ вӗсене аса илетӗп те, куҫ умне ытарма ҫук хӳхӗм сӑнлӑ Нарспипе Сетнер тухса тӑнӑн туйӑнать. Ванюк йыснапа Наҫка аппа хӑйсен юратнӑ хӗрне вӑйлӑ туйпа пама килӗшнӗ-мӗн. Туя чылайччен хатӗрленчӗҫ. Пирӗн атте Пикшӗкрен, пуян Тямачран, эрешлӗ ашӑк, пӗкӗ ҫине ҫакмалли кӗмӗл шӑнкӑравсем кайса илчӗ.

Хӗр туйӗ те, арҫын туйӗ те ҫулла ҫимӗк вӑхӑтӗнче пуҫланчӗ. Хӗр туйне пирӗн килтен Иван пиччепе Маюк аппа кайрӗҫ. Туй Арапуҫне килмелли кун урамра иртенпех ҫамрӑк-кӗрӗм, ача-пӑча хӗвӗшме пуҫларӗ.

Унччен те пулмарӗ, пӳрт умӗнче:

— Килеҫҫӗ, килеҫҫӗ! Пашъел Ентюк туйӗ!— тенӗ сасӑсем илтӗнсе кайрӗҫ.

Хапхана уҫса ячӗҫ. Картишне лав хыҫҫӑн лав ҫӗмӗрттерсе кӗчӗ. Шӑнкӑрав сасси, лашасем кӗҫенни, туй каччисемпе хӗрӗсем юрлани... Пӗтӗм тавралӑх кӗрлесе тӑрать. Малти кӳме ҫинче, шур пӗркенчӗк айӗнче, Ен-

тюк аппа. Вăл ура çине тăчĕ те кӳме çинчен аничченех хĕр йĕрри пуçларĕ.

Эй, йыснаçăм, аппаçăм,
Сиртен ытла тăван çук!—

тесенех, ăна хĕр-тантăшĕсем çăкăр-таварпа кĕтсе илме тухнă аттепе анне патне çавăтса пычĕç. Анне пĕркенчĕк айĕнчи хĕре алтăрпа сăра тыттарчĕ те пăшăлтатса сăмах каларĕ. Туй халăхĕ пӳрте кĕчĕ. Сăвă-юрă, ташă-кулă янăрама пуçларĕ.

Ачамăр та маттур Арçук пур,
Кинĕмĕр та чипер Ентюк пур...

Вăйçă ура тапса купăс калать. Пашъел хĕрĕсемпе Арапуç каччисем мăшăрăн-мăшăрăн туха-туха ташлаççĕ.

Ентюк аппа, пĕркенчĕкне пичĕ çинчен пăртак сирсе, пирĕн тăвансене Кăлюкпа Макçăма, Иванпа Маюка, Вихтăрпа Пăлькана асăнса йĕме пуçларĕ. Черет ман пата та çитрĕ.

Çу кунĕсем çитсессĕн,
Эп хăнана килсессĕн,
Чупа-чупа кĕреттĕн,
Аппа тесе чĕнеттĕн...

Çак сăмахсене илтсен, эпĕ те чăтаймарăм, ĕсĕклесех йĕме тытăнтăм: чĕре çумĕнчен ĕмĕрлĕхех темĕн уйрăлса кайнăн туйăнчĕ.

Туй çаплах кĕрлет. Аттепе анне сĕтел çумне, тĕпелти сак çине, ларчĕç. Вĕсен умĕнче Ентюк аппа. Пиллĕх пуçланчĕ.

— Лайăх, пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнăр. Пурнăçра тем те пулать, лайăххине те, усаллине те курма тĕл килет. Йывăр кунсенче пуçăра-аллăра усса ан ларăр,— терĕ анне.

— Ваттисене çынлăхран ан кăларăр. Урайăр тулли ача-пăча чупса çӳремелле пултăр,— тесе хушса хучĕ атте. Пиллĕх вĕçленсен, хĕрçумĕсем пĕр çаврăм юрă юрласа ячĕç:

Кӳлнĕ лаша нумай, ай, тăрсассăн,
Хăмăт пăявне вăй тивет.
Туй çыннисем нумай, ай, ларсассăн,
Аппа-йысна, сире вăй тивет...

Туй юрри пĕтĕм таврара янраса тăрать. Çапла, Ентюк аппа туйĕ ĕмĕрлĕхех ман асăмра тăрса юлчĕ.

## АТТЕ ТУСĔ

Аслă Арапуç — пасарлă ял. Унта эпĕ ача чухне те кашни кĕçнерникун пĕтĕм тавраран çын пухăнатчĕ. Эрне сиктерсе тенĕ пек пасара Люля вырăсĕ Николай Сосков килетчĕ. Вăл яланах пирĕн пата кĕретчĕ. Эпир ăна Куля пичче тесе чĕнеттĕмĕр. Куля пиччепе атте тĕл пулсан ыйхă çинчен те манса каятчĕç, çĕрĕпе калаçатчĕç. Ăçтан кăна сăмах тупăнатчĕ-ши вĕсен?

Куля пичче пурăнакан Люля — Сăр вăрманĕ варринче ларакан ял. Тен, çавна пула-и, вăл час-часах пирĕн валли чĕреспе çырла е кăмпа, е тата çăпата тума çĕнĕ пушăт илсе килетчĕ. Эпир те ăна ахаль тумастăмăр: çĕрулми е купăста парса яраттăмăр.

Пĕррехинче пирĕн анне кăмака умĕнче ăнсăртран вĕри шывпа урине пĕçертрĕ. Нумай тертленчĕ вăл. Çак инкек çинчен Куля пичче илтнĕ-мĕн. Вăл пирĕн пата персе те çитрĕ, пурăш çăвĕ илсе килчĕ.

— Санюк йăмăкăм, эсĕ инкек курнине илтсен, эпир çемйипех çав тери кулянтăмăр. Эпĕ пурăш çăвĕ илсе килтĕм акă, вăл ӳт пиçнине тӳрлетме пулăшаканччĕ,— терĕ вăл.

Куля пиччен ырă кăмăлĕ аннене чун-чĕререн савăнтарчĕ. Вăл уринчи суранĕсене пурăш çăвĕпе сĕрчĕ. Пулăшрĕ хайхи: нумай та вăхăт иртмерĕ, аннен ури самайланчĕ, тӳрленчĕ. Вăл килте те, уй-хирте те ĕçлеме пуçларĕ.

Пĕррехинче Куля пичче аттене хăнана чĕнчĕ. Атте хайпе пĕрле мана та лартса кайрĕ. Хăна пулнă хыççăн Куля пичче пире вăрмана улма-çырла, кăмпа нумай вырăна илсе тухрĕ. Чылай çӳрерĕмĕр эпир вăрманта.

Мĕн-мĕн кăна курмарăмăр пулĕ унта: тарăн çырмасем, пин-пин сасăллă кайăксем, ниçта курман ӳсентăран... Хамăр виççĕмĕр шăкăл-шăкăл калаçса пыратпăр. Унччен те пулмарĕ, атте хаяррăн кăшкăрса ячĕ: малта, вĕтлĕхре—упа!

— Иван Давыдч, ан шавла, ан çиллентер... Упа тапăнма пултарать,— терĕ Куля пичче.

Эпир шăплантăмăр, упа мĕн тунине пăхса тăратпăр. Упа, пирĕн еннелле пăхса, пуçне пĕр-икĕ хутчен çӳлелле каçăртса илчĕ те малалла утса кайрĕ. Çав вăхăтрах ăна хирĕç виçĕ упа çури сике-сике тухрĕç.

Çапла эпĕ Сăр вăрманĕнче пĕрремĕш хут упа куртăм.

## ШĂРТТАН

Пирĕн çичĕ çулхи ватă така пурччĕ. Вăл пурăннăçемĕн усалланса пыра пуçларĕ. Хамăр урамри пĕчĕк ачасене мĕн чухлĕ сĕксе йăвантарман, мĕн чухлĕ йĕртмен пулĕ.

— Çук, капла юрамасть. Ватă такана питрав çитсен пусатпăр,— терĕ атте.

Чăнах та, пĕр çуллахи хĕвеллĕ кун çак такана пусрĕç. Анне така хырăмлăхне вĕри шывпа çуса тасатрĕ те ун ăшне аш, ӳпке-пĕвер вакласа тултарчĕ, шăрттан турĕ. Ăна виçĕ хутчен вĕри кăмакана лартса пĕçерчĕ, чăлана, кашта çине çакса хучĕ.

— Аван пулчĕ-ха ку япала. Хире илсе кайма та юрать. Трихвун кукку хăнана килсен, сĕтел çине лартма та кăмăллă,— терĕ вăл.

Чăлана кĕме çук сăмсана тутлă шăршă çапать. Мĕн тăвас? Эпĕ шăрттан çинелле пуçа çĕкле-çĕкле пăхатăп. Чăтаймарăм, шăрттана кашта çумĕнчен салтса илтĕм те—шăтартăм. Çак пĕчĕк шăтăкран пӳрне вĕçĕ пек аш татăкĕ кăлартăм та каллех питĕрсе хутăм.

Шăтăк кунсерен ӳссе, пысăкланса пычĕ, унта алă та кĕрекен пулчĕ. Юлашкинчен шăрттан йăлтах пушанса юлчĕ. Кашта çумĕнче унăн хутаççи çеç çакăнса тăрать.

Ун çине пăхсан, пĕтĕм çанçурăм, çӳçпуç чĕтресе каякан пулчĕ.

Пĕр кунхине хайхи Трихвун кукка хăнана персе çитрĕ. Анне чупкаласа çеç çӳрет: сĕтел çине лартма апат-çимĕç хатĕрлет. Вăл васкаса чăлана кĕрсе кайрĕ. Паллах, унта мĕн пулса иртнине эпĕ каласа пама пултараймастăп. Анчах та анне тарăхса: «Эх, мур илесшĕсем, пĕр татăк та хăварман. Пушă хутаççи çеç çакăнса тăрать!»—тенине халĕ те лайăх астăватăп.

Трихвун кукка хăнаран кайсан, мана шăрттаншăн хытах лекрĕ: питçăмарти чылайччен хĕрелсе çӳрерĕ.

## СИЕНЛĔ ВĂЙĂ

Çуллахи шăрăх кун. Тӳпере хĕвел хĕртет. Хĕрӳ ĕç вăхăчĕ. Халăх хирте тырă вырать. Ял хушшинче пĕр сас-чĕвĕ те илтĕнмест. Хушăран çеç ача-пăча кăшкăрашкалани, йытăсем вĕркелени илтĕнкелет.

Çав кун анне мана хире тырă вырма илсе каймарĕ, кил сыхлама хăварчĕ. Эпир, касри ачасем, пĕрле пухăнса Пăларан шыва кĕрсе хăпартăмăр та пирĕн картишĕнче аслăк çинчен сикмелле выляма тытăнтăмăр. Пĕри сикрĕ, тепри... Черет мана та çитрĕ. Эпĕ темле хăраса, çӳçенсе илтĕм, анчах та ыттисенчен юлас мар терĕм — сикрĕм. Ман çавăнтах куç умĕ хуралса кайрĕ, хам хаяррăн кăшкăрса ятăм. Ҫайран пăхатăп та—сулахай алă кăкăр шăмми айне пулнă. Ана хускатма та çук, çав тери ыратать. Ман тавра ача-пăча хĕвĕшет. Никам ним тума пĕлмест. Ваттисен сăмахĕ — вăйăран вăкăр тухать тени тĕрĕсех-мĕн.

Пиртен инçех те мар пĕр ватă Алюç карчăк пурăнатчĕ. Ана ал-ура сиксен, суранлансан сиплеме ăста тетчĕç. Эпир йăвасенчен пĕр теçетке çăмарта пухрăмăр та ун патне кайрăмăр.

— Санăн, ачам, аллу сикнĕ. Лартас пулать, унсăрăн юрамасть, чăлах пулса юлатăн,—терĕ Алюç инке. Хăй çавăнтах манăн алла ăшă шывпа, супăньпе çемçетсе



Республиканская библиотека им. М. Горького
31917 чув

турткалама пуҫларĕ. Анчах те лартрĕ вырăнне, те лартаймарĕ — алă ҫаплах сурать те сурать...

Эпĕ хам алла амантнине чылай вăхăт хушши аттепе аннерен пытарса пурăнтăм. Вăл темле ыратсан та, шăла ҫыртаттăм, шарламастăм. Ун пек тума юраман иккен: ман алă ĕмĕрлĕхех сиенленсе юлчĕ.

## ҪАҪХИ ВĂЙĂРА

Хĕвел Сăр вăрманĕ хыҫне анса пытанчĕ, каҫ пулчĕ. Хĕрсемпе каччăсем, алла-аллăн тытăнса, Пăла хĕрринчи ҫерем ҫине вăййа васкаҫҫĕ. Шурă кĕпе тăхăннă хĕрсем акăшсем пек ярăнса утса пыраҫҫĕ. Ҫăкăрĕсем ҫинче тенкисем утнă май чăнкăртатса илеҫҫĕ. Юррисем мĕнле тата! Ҫам шухăшласа кăларнă-ши вĕсене?

> Ҫас суханне касмăттăм,—
> Ҫиес килни пĕтерет.
> Ҫаҫхи вăййа тухмăттăм,—
> Тухас килни пĕтерет.

Е тата:

> Йăмра ҫине тăм ӳкет,
> Хĕвел пăхать—ирĕлет.
> Выльăр-кулăр, тантăшсем,
> Ҫамрăк ĕмĕр час иртет.

Ăҫтан каласа пĕтерĕн вĕсене! Юрă хыҫҫăн юрă янăрать. Ҫаччăсем, виҫшерĕн, тăватшарăн тытăнса, вăйă карти тавра уткаласа ҫӳреҫҫĕ, хĕрсем ҫине ăшшăн-ăшшăн пăхса илеҫҫĕ. Тĕлĕнмелле илемлĕ картина вăл, пирĕн енчи ҫамрăксен вăййи. Хăйне евĕрлĕ балет темелле.

Эпир, пĕчĕккисем, вăйăваррине кĕре-кĕре тухатпăр, пĕр-пĕрне тытмалла вылятпăр.

Анчах савăнăҫлă вăхăт хăвăрт иртет ҫав, часах ҫур ҫĕр те ҫитсе килет. Арапуҫ хĕрĕсем пĕр енне, Анат Чакă хĕрĕсем тепĕр енне кайса тăраҫҫĕ те «Ҫерем уҫса вир акрăм» юрра шăрантарма тытăнаҫҫĕ:

> — Ҫерем уҫса вир акрăм, вир акрăм!
> — Эпир ăна таптатпăр, таптатпăр.
> — Эсир мĕнпе таптатăр, таптатăр?
> — Кĕтӳ кĕртсе таптатпăр, таптатпăр.

— Эпир ăна тытатпăр, тытатпăр.
— Эсир мĕнпе тытатăр, тытатăр?
— Чĕн йĕвенпе тытатпăр, тытатпăр.
— Эпир ăна илетпĕр, илетпĕр.
— Эсир мĕнпе илетĕр, илетĕр?
— Пин сум парса илетпĕр, илетпĕр.
— Пин сумăр та кирлĕ мар, кирлĕ мар.
— Сире тата мĕн кирлĕ, мĕн кирлĕ?
— Пире кирлĕ сарă хĕр, сарă хĕр.

Юрă-вăйă вĕçленчĕ, яш-кĕрĕм саланма тытăнчĕ.

Çав самантра çеремре пĕр хĕр чуна çӳçентермелле кăшкăрни илтĕнсе кайрĕ. Унăн çинçе сасси каçхи сывлăшра ян! ян! туса саланчĕ:

— Тантăшсем, çăлăр!

Мĕн пулнă тата?

— Тытăр, хĕр вăрлаççĕ!— кăшкăрчĕ çавăнта пĕри.

— Хальхи саманара хĕр вăрлаттармалла-и?

Пĕтĕм тавралăх кĕрлесе кайрĕ. Хĕр пирĕн кӳршĕ Татюк пулнă-мĕн. Çакна пĕлсен, эпĕ те пĕтĕм чун-чĕререн тарăхса кайрăм, çамрăксем пăлханакан вырăна чупса çитрĕм.

Çук, Татюк аппана вăрлама памарĕç. Çĕнĕ самана, çĕнĕ саккун. Хĕр вăррисене такамсем ĕнселесе те илчĕç. Вĕсем вара çаврăнса пăхмасăр тарчĕç.

Арапуç çамрăкĕсем каллех карталанса тăчĕç те, юрă юрласа, кил еннелле уттарчĕç:

Шур саппунăр хуралсан,
Çакассăр та килĕ-ха.
Кунтан вăйă иртсессĕн,
Тухассăр та килĕ-ха.

## ПРАÇНИК

Эпĕ çиччĕ тултартăм. Вăхăт çитрĕ, манăн шкула каймалла.

Сентябрĕн 1-мĕшĕ тенĕ кун вырăн çинчен шурăмпуç киличченех сиксе тăтăм, урана васкаса анне тĕртнĕ шурă тăла чăлха тăхăнтăм, атте туса панă çĕнĕ çăпатана сыртăм, хыçа пиртен çĕленĕ сумка çакса ятăм.

Шкула, пĕрремĕш класа, анне ăсатса ячĕ. Вăл мана учительницăпа паллаштарчĕ, ăна ятпа хушамата çыртарчĕ. Учительница эпĕ миçе çултине, аттепе анне, пиччесемпе аппасен ячĕсене ыйта-ыйта пĕлчĕ.

Хут çине кăранташпа çырма пуçличчен эпир чылай вăхăт тăмран тунă доскасемпе, грифельсемпе усă куртăмăр. Шутлама вĕренме хулăран кĕске патаксем туса каяттăмăр.

Эпĕ часах саспаллисене хуша-хуша вулама вĕрентĕм, пăхса çырма тытăнтăм, шутлама ăнкара пуçларăм.

Пĕр кунхине эпир вĕренекен класс стени çине вăрăм шур хут тĕрки çыпăçтарчĕç. Эпир, ачасем, унта мĕн çырнине кашни хăй пĕлнĕ пек вулама пуçларăмăр. Унта хĕрлĕ сăрăпа «Сывă пултăр Октябрь революцийĕ 8 çул тултарни!» тесе çырнă.

Учительница пирĕн хушăмăра пырса тăчĕ те:

— Ыран пысăк уяв. Сирĕн аçăр-аннĕрсем, пиччĕрсемпе аппăрсем, пĕтĕм халăх ирĕке тухнă кун,—терĕ.

Вăл ачасене уяв кунĕнче шкула лайăхрах тумланса килме хушрĕ.

Тепĕр кунне эпир, ретĕн-ретĕн тăрса, ялваррине тухрăмăр. Пĕтĕм таврара хĕрлĕ ялавсем вĕлкĕшеççĕ, купăс сасси, сăвă-юрă янăраса тăрать. Уяв пуçланчĕ. Ятарласа тунă çӳллĕ вырăна салтак тумĕ тăхăннă пĕр ватăрах çын тухрĕ. Вăл пирĕн еннелле пăхса сăмах каларĕ, юлашкинчен:

— Сывă пултăр Совет влаçĕ, сывă пулччăр рабочисемпе хресченсем!—терĕ.

Таврана алă çупни, урра! кăшкăрни янăраса кайрĕ.

Салтак тумĕ тăхăннă çын хыççăн сăмах калакансем татах пулчĕç. Вĕсем халăха Октябрь революцийĕ, Ленин çинчен кала-кала пачĕç.

Çынсем килĕсене саланма пуçласан, пире, шкул ачисене, пĕр çĕре пухрĕç те канфетпа пĕремĕк, тетрадьсем, кăранташсем, илемлĕ кĕнекесем парнелерĕç.

Эпĕ килте хам парнесене Вихтăр пиччепе Пăлька йăмăка та уйăрса патăм. Вихтăр пичче хăйне панă кĕ-

неке ятне ҫавӑнтах вуласа тухрӗ. Унта вырӑсла «Сам себе агроном» тесе ҫырнӑ. Уяв ячӗпе анне пире тутлӑ апат — улма хӑпартни тата пӑри пӑтти ҫитерчӗ.

## ХӖРЕС

Хура ҫӗр шур юрпа витӗнчӗ. Хаяр сивӗсем пуҫланчӗҫ.

Эпир вӗренекен шкул Исмук мучи ҫуртӗнчеччӗ. Вӑл пиртен инҫеччӗ. Ман тумтир начарччӗ: ҫире кивӗ сӑхмансӑр, хӑрах хӑлхаллӑ ҫӗлӗксӗр пуҫне нимӗн те ҫукчӗ темелле. Шартлама сивӗсенче эпӗ мӗн чухлӗ шӑнман, мӗн чухлӗ чӗтресе шӑла шаккаман пулӗ.

Пӗррехинче ҫапла эпӗ хӗл варринче чирлесе ӳкрӗм. Ман пата киле Шурут больницинчен тухтӑр илсе килчӗҫ. Тухтӑр хӑйӗн пӗчӗк трубкине ман кӑкӑр ҫине лар-та-ларта итлерӗ, пӳрнисемпе ӑҫтан кирлӗ, унтан шакка-шакка пӑхрӗ те:

— Сирӗн ачӑр йывӑрах чирлӗ: ун ӳпки шыҫнӑ,— терӗ.— Эпӗ сире эмел парса хӑвараттӑп. Чирлӗ ачӑра халех алӑк патӗнчен тӗпеле — ӑшӑ ҫӗре куҫарса вырттарӑр. Хӗвел, ҫутӑ аптӑратасран ӑна мӗнпе те пулин карсан аван пулӗччӗ.

Тухтӑр ассӑн сывласа илчӗ те сӗтел патне пырса ларчӗ, пӗчӗк арчинчен хут кӑларса ҫырма пуҫларӗ. Анне ман ҫине хурлӑхлӑн пӑхса илчӗ.

Ман чир вӑраха кайрӗ. Эпӗ йӑлтах начарланса кайрӑм, шӑмӑсем ҫеҫ тӑрса юлчӗҫ. Юлашкинчен калаҫайми те пултӑм. Атте кун сиктерсе тенӗ пек лавккаран мӗн те пулин илсе килетчӗ. Вӑл ман ҫума пырса ларатчӗ те пуҫран шӑла-шӑла ачашлатчӗ, хӑй илсе килнӗ апат-ҫимӗҫе ҫитересшӗнччӗ. Анчах ним тума та ҫук: ӑша нимӗн те анмасть...

Пӗр ирхине эпӗ аран-аран куҫа уҫрӑм та аттепе анне пуҫ вӗҫӗнче сӑхсӑхса тӑнине куртӑм. Иккӗшин те куҫӗсенчен куҫҫуль тумламӗсем юха-юха анаҫҫӗ. Турӑш умӗнче ҫурта ҫунать. Нимӗн те ӑнланмастӑп.

— Эй, ырӑ туррӑмӑр, ачамӑрӑн мӗскӗн чунне ҫӳлти патшалӑха яр. Пирӗн пӗтӗм шанӑҫӑмӑр сан ҫинче,— пӑшӑлтататать анне.

Атте ман куҫӑм уҫӑлнине курнӑ-мӗн. Вӑл хӑвӑрт чӗркуҫленсе ларчӗ те:

— Тавтапуҫ турра, чӗрӗ, чӗрӗ!—тесе, питӗмрен пӗрикӗ хутчен чуптуса илчӗ...

...Ҫу кунӗсем килсе ҫитсен, эпӗ пӑртак самайлантӑм, ура ҫине тӑтӑм, картишне тухакан пултӑм. Пӗррехинче ҫапла, хӗвеллӗ ӑшӑ кун, пӗчӗк витене кӗрсе курма шут тытрӑм. Кӗтӗм те хӑраса ӳкрӗм: лар ҫинче пысӑк йывӑҫ хӗрес выртать. Эпӗ, васкаса, пӳрте кӗтӗм. Хам сиксе чӗтретӗп, калас тенӗ сӑмаха та калаймастӑп. Анне ман пата чупса пычӗ те:

— Мӗн пулнӑ сана, Ваҫҫа? Мӗн пулнӑ?!—тесе кӑшкӑрса ячӗ.

Эпӗ, сывлӑш ҫавӑрсан, пӗчӗк витере хӗрес курни ҫинчен каласа патӑм. Вӗсем мана лӑплантарма тӑрӑшрӗҫ, ҫук, вӑл нимӗн те мар терӗҫ. Анчах пӑртак вӑхӑт иртсен, чӗрӗлсе ҫитсен, эпӗ ҫакна пӗлтӗм: мана ялйыш та, пӗлӗш-тӑвансем те вилетех, чӗрӗлесси пулмастех тесе шутланӑ-мӗн. Ялти Маруҫ ятлӑ юмӑҫ карчӑк вара: «Ачӑршӑн кулянса хӑвӑра ан та хавшатӑр, чун-чӗререн ан татӑлӑр: унтан ура ҫине тӑрасси, ҫын пуласси пулмастех»,—тенӗ иккен.

Ҫапла вара, атте ман валли виличченех хӗрес хатӗрлесе хунӑ-мӗн. Кайран та уншӑн вӑл чылайччен кулянса-пӑшӑрханса пурӑнчӗ.

## ХӖРЛӖ ГАЛСТУК

Кӑнтӑрла сулӑнсан, шкултан Вихтӑр пичче чупса килчӗ. Хӑй калама ҫук савӑнӑҫлӑ, мӑйне хӗрлӗ галстук ҫыхнӑ. Эпӗ ун патне чупса пытӑм, хӗрлӗ галстука вӗҫӗнчен темиҫе хутчен тыта-тыта пӑхрӑм. Анне те, уйран уҫлама пӑрахсах, пичче ҫине пӑхса ларчӗ.

— Мӗн пулнӑ сана, Вихтӑр? Питӳ ҫинче хӗвел сиксе ташланӑн туйӑнать,— терӗ вӑл, кулкаласа.

— Эпĕ — пионер,— уççăн каларĕ пичче.

Вăл паян шкулта хăйне пионера илни çинчен сывлăш çавăраймасăр хĕпĕртесе кала-кала парать.

— Пионерăн вĕренӳре те, ĕçре те яланах малта пулмалла,—тет хăй.

Пичче çĕрулмипе уйран çирĕ те урама тухса вĕçтерчĕ.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, урамра такам çăри-çари çухăрни илтĕнсе кайрĕ. Анне çавăнтах:

— Ах, мĕн пулнă-ши тата? Ку Вихтăр сасси-çке!— тесе, урама васкарĕ.

Эпĕ те ун хыççăн тапса сикрĕм. Пĕтĕм урам кĕрлет. Пуян Хĕветĕр пиччене галстукран ярса тытнă та:

— Пионера кĕтĕн апла, чунна шуйттана сутрăн пулать!—тесе çӳлелле çĕклет. Пичче пĕрре шуралса, теппе кăвакарса кайрĕ...

Анне ун патне вут-çиçĕм пек ыткăнса çитрĕ, ăна ыталаса илчĕ. Вара, мĕнпур çиллине пухса, Хĕветĕре тĕртсе ячĕ. Кӳршĕсем те ун майлă пулчĕç. Вĕсем те Хĕветĕре:

— Намăссăр, айăпсăр ача çине аллуна çĕклетĕн. Халь çĕнĕ самана: текех сире ашкăнма парас çук!— тесе ятласа тăкрĕç.

Хĕветĕр халăха хирĕç пĕр сăмах та чĕнеймерĕ, пуçне усса килнелле васкарĕ.

## ИКСĔМĔРЕ ПĔР КАРТТУС

Çĕнĕ самана. Пурнăç пăртак лайăхланса пыни сисĕне пуçларĕ. Аттепе анне пире валли лавккаран кĕпейĕм çĕлеме пусма-таварсем те иле пуçларĕç.

Пĕррехинче атте пахчара çĕрулми çумлакан аннене:

— Итле-ха, Санюк, лавккана карттус, çĕлĕк нумай килнĕ. Вихтăрпа Ваççана иккĕшне пĕр карттус илсе парар мар-и?—терĕ.

Анне хирĕçех пулмарĕ.

— Укçине тупайăпăр-ши вара?—тесе çеç хучĕ.

Атте çав кунах пире, Вихтăрпа иксĕмĕре, лавккана

ертсе кайрӗ. Эпир ҫич-сакӑр карттус тӑхӑнса пӑхрӑмӑр. Пурте пӗринчен пӗри лайӑх. Хӑмӑртарах тӗслине, йӑлтӑртатса тӑракан хура сӑмсаллине суйласа илтӗмӗр. Эпӗ те, Вихтӑр та чикесӗр савӑннӑ: пирӗн ятпа пӗрремӗш хут карттус туяннӑ-ҫке-ха!

Чылай вӑхӑт хушши тӑхӑнтӑмӑр ӑна. Ҫарттус тӑрри те, кӑшӑлӗ те кивелсе ҫӗтӗле пуҫларӗҫ, сӑмси те икӗ ҫӗртен ҫурӑлса кайрӗ. Анчах, ҫак карттуса аса илсен, халӗ те чӗре сӳлетсе каять: унпӑн эпир Вихтӑрпа кун сиктерсе пӗрре вӑрҫса илеттӗмӗр. Пӗр вӑхӑтрах карттуса эпӗ те, Вихтӑр та тӑхӑнасшӑнччӗ. Ҫам вӑйлӑрах, ҫав ҫӗнтеретчӗ, ҫапла вара карттус ялан тенӗ пекех Вихтӑр пуҫӗнчеччӗ.

## ҪУНТА ЛЕНИН ВӖРЕННӖ

Хӗллехи шартлама сивӗ кун. Эпир Хусантан, Максӑм пиччерен, ҫыру илтӗмӗр. Пичче аттепе аннене Хусана хӑнана чӗнет иккен. Пуриншӗн те пысӑк савӑнӑҫ темелле. Эпӗ йӑпшӑнараххӑн атте ҫумне пырса тӑтӑм та мана та хӑйсемпе пӗрле хулана илсе кайма ыйтрӑм.

— Ачам, сывлӑху начар: ҫул ҫинче шӑнса пӑсӑлсан, мӗн курӑпӑр. Санӑн шкула каймалла. Пыраймастӑн пулӗ,— терӗ мана атте.

Эпӗ кулянма пуҫларӑм. Анне ҫакна сиснӗ-мӗн. Пӗр каҫхине вӑл аттене, сӑхман саплакансkерне, ӗҫлеме ларсах:

— Ванька, Ваҫҫана та пиччӗшӗ патне хамӑрпа пӗрле илсе каяр мар-и? Вӑл питӗ пырасшӑн ҫунать. Ача ӗмӗтне татас мар,— терӗ.

Аннен ҫак сӑмахӗсем манӑн ҫамрӑк чун-чӗрене йӑлтах уҫса ячӗҫ. Эпӗ атте куҫӗнчен пӑхса тӑратӑп, вӑл мӗн каласса кӗтетӗп. Атте те хальхинче хирӗҫ пулмарӗ.

— Учительтен кайса ыйтас. Вӑл мӗнле канаш парӗ,— терӗ.

Эпӗ тепӗр куннех кун ҫинчен хамӑра вӗрентекен учителе, Гаврил Викторовича, каласа патӑм. Учитель пӗрре те хирӗҫ пулмарӗ, Ҫу ҫеҫ те мар, вӑл мана хулана

кайса килни çав тери усăллă пуласси çинчен кала-кала ăнлантарчĕ.

Инçе çула çитиччен мана килтисем пурте лайăх, ăшă тумлантарма тăрăшрĕç, хамăн тăла сăхман çине Маюк аппан кĕрĕкне тăхăнтарчĕç, пилĕк тавра хĕрлĕ пиçиххи çыхса ячĕç. Пирĕн Хусана чугун çулпа каймалла. Йĕпреç станцине лашапа çитрĕмĕр, унта пире Тукайри Тимуш йысна ăсатса ячĕ.

Атте станцинче пĕр хĕрлĕ карттуслă пуçлăх патне кĕчĕ. Пуçлăх ăна Хусана, пичче патне, эпир пыни çинчен пĕлтерсе, телеграмма çырма пулăшрĕ.

Хусана эпир ирхине çитрĕмĕр. Куç умне халиччен нихçан курман çӳллĕ çуртсем, фабрикăсемпе заводсен трубисем тухса тăчĕç. Станцире халăх туллиех. Йалт аташса, çухалса каймалла.

Пĕр кĕтмен çĕртен çынсен хушшинчен Макçăм пичче персе тухрĕ. Вăл эпир Хусана лайăх çитнишĕн савăннă пулас, ăшшăн кула-кула илет. Пичче çавăнтах лав тупрĕ. Аттепе анне лав çине ларчĕç, эпĕ вĕсен чĕрçи çинче, Макçăм пичче ямшăк çумĕнче. Ямшăкăн таканлă лаши, чул сарнă урамсене шак-шак! тутарса, илемлĕ сасă парса пырать. Урам хыççăн урам иртсе юлать. Акă, пирĕн ума вăрăм та шап-шурă çурт тухса ларчĕ. Умĕнче кĕрешрен те хулăн, çӳллĕ чул юпасем. Вĕсем те шап-шурă.

— Ку — университет. Унта Ленин вĕреннĕ!— терĕ пичче.

Çак сăмахсене илтсен, атте çĕлĕкне хыврĕ, пуçне çак пысăк çурт енне тайса илчĕ.

Макçăм пичче пире çитнĕ кунах лавккасене илсе кайрĕ. Çапла, пĕр пысăк лавккара çӳренĕ чух анне кĕтмен çĕртен атте еннелле çаврăнчĕ те:

— Ак тамаша! Куратăн-и, Ванюк, кунта та ман пекех чăвашла тумланнă хĕрарăм çӳрет!—терĕ.

Эпир пурте кулса ятăмăр.

— Вăл — эсĕ. Сана кунти пысăк тĕкĕр çапла кăтартать. Акă халĕ эпир утса кайрăмăр та, чăваш хĕрарăмĕ те пирĕнпех пырать,— терĕ ăна атте. Анне хăйне

тĕкĕр улталанине ăнланса илчĕ, вăл та пирĕнпех кулчĕ.

Эпир Хусанта пĕр эрне пурăнтăмăр. Ăçта кăна çитмерĕмĕр пулĕ. Кунта пурнăçра чи малтанхи хут музей, кино куртăмăр.

Киле таврăнсан, эпĕ хулара хам мĕн курни çинчен шкул ачисене хавхаланса кала-кала патăм.

— Маттур; курнине асра тытма пултаратăн,— мухтарĕ мана учитель.

## ПĂР КАЯТЬ

Пĕр çулхине çуркунне ир килчĕ. Хĕвел хытă хĕртнипе юр та васкаса ирĕлчĕ, йăлăма шыв анса тулчĕ. Ял хушшинчи çырмасем васкаса, шавласа юхаççĕ. Ачапăча кулли ир пуçласа мĕн каç пуличчен кĕрлесе тăрать. Пĕри пĕве пĕвелет, тепри хăй тунă шыв арманне авăртать, виççĕмĕшĕ йăмра çине хăпарнă, шăнкăрч йăви çакать... Ытла та илемлĕ çав çуркунне!

Вăхăт çитрĕ. Пĕтĕм ялйыш Пăла урлă хывнă аслă кĕпере пăр илсе каясран сыхлама тухнă. Унччен те пулмарĕ, кай енчен Пăла çĕкленсе килнĕн туйăнса кайрĕ. Пăр шатăртатать, çырана пыра-пыра çапать. Кĕпер силленсе çеç тăрать.

— Ара, кĕперсĕр мĕнле пурăнмалла, ăçталла каймалла? Ăна мĕнле те пулсан çăлса хăвармалла!— кăшкăраççĕ пакурсемпе пăра ватакан çынсем. Мĕнпур халăх, ватти-вĕтти пурте тăрăшать.

Акă каллех пăр йăтăнса килчĕ, кĕпере çӳлелле çĕклесе илчĕ те ун айĕнчи сăвайсене шатăртаттарса çĕмĕрсе кайрĕ... Тĕлĕнмелле: канатсемпе пур енчен те çирĕп çыхса лартнă кĕпер ванмарĕ, тĕрĕс-тĕкел тăрса юлчĕ, вăл аслă Пăла урлă яланхи пекех мăнаçлăн карăнса выртать.

Арапуççем тăрăшни харама каймарĕ. Ахальтен мар иккен çав: «Пĕр çын сурать — типсе пырать, халăх сурать — кӳлĕ пулать»,— тенĕ ваттисем.

## КИМĔПЕ

Каçхине ăшă çумăр çуса иртрĕ. Ирхине çав тери ырă, ăшă çанталăк пуçланчĕ — мĕн касчен хĕвел хĕртрĕ. Эпир, касри ачасем, пĕрле пухăнса, кăнтăрла Пăла хĕррине вĕçтертĕмĕр. Вăл кун шыва миçе кĕнине шутласа та кăлараяс çук: çӳç типессе çеç кĕтсе ларатпăр. Çав хушăра пурте шыв çинче вĕçекен шуркутсене сăнатпăр. Ĕсчен кайăк темерĕн çав! Мĕн кăна тумаççĕ вĕсем. Çыран хĕрринчи йăвисене кĕре-кĕре тухаççĕ, чĕпписене апат парса хăвараççĕ, шыв çинче çăвăнса илеççĕ. Чĕвĕл-чĕвĕл сассисем чуна уçсах яраççĕ хăйсен. Эх, çутçанталăк илемĕ! Пĕтĕм чĕрчуна савăнăç кӳрет çав, иçмасса!

Эпир килсене саланма çеç шутланăччĕ, çав самантра Пăла тăрăх, аҥат енчен, кимĕсем хăпарнине курах кайрăмăр. Вĕсем çинче каччăсемпе хĕрсем. Таврана юрă сасси илемлĕн янăраса кайрĕ:

Шур-шур аппа, шур аппа,<br>
Чӳрече витĕр пăх, аппа.<br>
Ытла пĕвӳ çитмесен,<br>
Арча лартса пăх, аппа...

Ха, кимĕсем çинчи яш-кĕрĕм пурте хамăр паллană çынсем. Малти кимĕ çинче — Альтюк аппа, Тимахви пичче хĕрĕ. Вăл аллине вылята-вылята илет, юрă хыççăн юрă пуçласа ярать.

Альтюк аппа хулара вĕренет, халĕ яла канма килнĕ. Унăн шăнкăрав пек уçă сасси, хӳхĕм кулли пирĕн пĕтĕм чун-чĕрене çĕклесе ячĕ.

Çамрăк хĕр сăн-сăпачĕ çуллахи ылтăн хĕвел пек çиçет. Альтюк аппана пĕтĕм ялйыш — ватти-вĕтти хисеплет, юратать.

— Альтюк ĕсчен, ырă кăмăллă хĕрача — пурне те пултарать,— тет вара пирĕн анне.

Çак чунтан килекен сăмаха вăл ахалех каламан-тăр çав. Альтюк аппа, чăнах та, çĕнĕ саманан çĕнĕ çынни. Вăл пирĕн ялти хĕрсенчен чи малтан комсомола кĕнĕ.

Хӗрӳллӗ комсомолка халӗ хамӑр ял каччисемпе хӗрӗсене ҫутталла туртӑнма, ҫӗнӗлле пурӑнма вӗрентет.

Акӑ вӑл паян та вӗсен хушшинче, вӗсен пуҫӗнче.

## ЧУТАХ СУРӐХСӐР ЮЛАТТӐМӐР

Ҫӗрхи каҫ. Таврара пӗр сас-чӗвӗ те ҫук. Хушӑран ҫеҫ йытӑсем вӗрни илтӗнкелет.

Анне картишӗнчен пӳрте васкаса кӗчӗ те хыпӑнса ӳксе:

— Эх, ачамсем, ӗмӗрне пулман япала: шурӑ сурӑх киле таврӑнмарӗ!— терӗ.

Вара ҫавӑнтах кивӗ сӑхманне тӑхӑнчӗ те хире сурӑх шырама тухса кайрӗ. Эпӗ те унпа пӗрле вӗҫтертӗм. Таҫта та ҫитрӗмӗр: Ҫӑкасарта та, Шӑхаль ҫырминче те пултӑмӑр, сурӑх ниҫта та ҫук.

Умра — тӗттӗм хир. Нимӗн те курӑнмасть.

Анне кӗсйинчен шӑрпӑк кӑларчӗ, ҫутрӗ.

— Ҫашкӑрсем нумай теҫҫӗ. Вӗсем вут ҫутинчен, сасран хӑраҫҫӗ. Ваҫҫа, шӑхӑр: кашкӑрсем тарччӑр. Сурӑха сыхласа хӑварар,— тет хӑй.

Эпӗ, пӳрнене ҫӑвара чиксе, ши! ши! шӑхӑратӑп. Унтан пӑхатӑп та — эпир улӑха ҫитсе тӑнӑ-мӗн, утӑ капанӗсем хушшипе пыратпӑр. Ак тамаша: пӗр капана качакасемпе сурӑхсем тустараҫҫӗ кӑна!

— Ав пирӗн сурӑх! Ах, ӑш ҫунтармӑш! Ҫиле хӑвала ӑна,—тет мана анне.

Сурӑх итлесшӗн мар, утӑ капанӗнченниепле те уйрӑлмасть.

Эпир киле ҫур ҫӗр иртсен тин таврӑнтӑмӑр.

Ҫитме ӗлкӗртӗмӗр кӑна — сасартӑк, пӗр кӗтмен ҫӗртен, Сител енчен хаяррӑн уланӑ сасӑсем илтӗнсе кайрӗҫ.

— Ара, кашкӑрсем улама пуҫларӗҫ вӗт! Лайӑх-ха, сурӑха тупса таврӑнтӑмӑр. Ҫӗҫӗр ӑна ҫав усалсем туртса ҫуратчех,— терӗ хӗпӗртенӗ анне.

Нумай ҫӳресе ывӑннӑскер, эпӗ выртнӑ-выртманах ҫывӑрса кайнӑ.

## ИВАН ЕВГЕНЬЕВИЧ

Алăк уçăлса кайрĕ. Пăхатпăр та — Иван Евгеньевич, Остроумов хушаматлă учитель. Вăл атте патне килнĕ-мĕн. Хăй чăвашла лайăхах калаçаймасть, такăнать.

— Ванька пичче, мана та пăртак çĕр пачĕç. Акса хăвармалла. Мĕн тусан аван, пĕлместĕп. Санран ăс ыйтма килтĕм,— тет вăл, кăшт калаçкаласа ларсан.

— Ним калама та çук. Яла тин килнĕ çынна пулăшмаллах. Лаша пăртак пушансанах сухаласа, сӳресе парăп,— тет ăна атте.

Çынна тăванла алă панине кам манма пултартăрха? Иван Евгеньевич аттене питех те хисеплетчĕ, юрататчĕ. Хăй пирĕн патăмăртан тухма та пĕлместчĕ. Çапла пĕррехинче вăл ман валли кĕнекесем илсе килчĕ. Кĕнекисене пурне те хитре ӳкерчĕксемпе илемлетнĕ. Çав тери пысăк савăнăç пулчĕ маншăн. Эпĕ лара-тăра пĕлместĕп, кĕнекесене уçа-уçа пăхатăп. Мĕнле кăна ӳкерчĕксем çукчĕ пулĕ вĕсенче: вăрман, уй-хир, çуртйĕрсем, лапталла вылякан ачасем...

Иван Евгеньевич пире часах хăйĕн ачисемпе паллаштарчĕ. Вова, Евгений, Надя ятлăччĕ вĕсем. Хăйсем, ашшĕ пекех, калаçма юрататчĕç, мана вара яланах вырăсла сăмахлама вĕрентетчĕç.

— Товарищ — юлташ, корова — ĕне, привет — салам тени пулать,— тетчĕç.

Иван Евгеньевич мăшăрĕ, Любовь Дмитриевна, мана киле кайнă чухне нихăçан та пушă алăпа кăларса ямастчĕ: вылямалли теттесем е мĕн те пулин çимелли тыттаратчĕ. «Кусем сире валли купченеç»,—тетчĕ вăл.

Аслă Патăрьелĕнче педагогика техникумĕ уçсан, Иван Евгеньевича унта ĕçлеме куçарчĕç. Çакă пире питĕ кулянтарчĕ, хамăртан çывăхран та çывăх тăвансем уйрăлса кайнăнах туйăнчĕ пире. Эпир çемйипех вĕсене ăсатма кайрăмăр.

Иван Евгеньевич çавăн чух ман кăкăр çине хĕрлĕ çăлтăр çакса ячĕ.

— Санăн умăнта, ачам, Ильич уçнă çул выртать.

Çав çулпа хăюллăн, паттăррăн ут. Ӳссен аçу пекех лайăх, ырă кăмăллă çын пул,— терĕ те чуптуса илчĕ.

Тулли лав хускалса кайрĕ.

## «ХĔРЛĔ ХĔЛХЕМ»

Ял варринчи шкулта халăх туллиех. Эпир, вĕренекен ачасем, ниçта кайса кĕме пĕлместпĕр, çынсем хушшине хĕсĕнсе кĕресшĕн çӳретпĕр. Халăх çаплах шавлать, пысăк пуху пырать. Ялти ятлă çынсем, коммунистсем, чухăнсем пĕрин хыççăн тепри тухса сăмах калаççĕ, халăха колхоза кĕме чĕнеççĕ.

Акă сăмах илмесĕрех парта çине Мăран Мирун хăпарса тăчĕ те:

— Çук, эпĕ колхоза тем тусассăн та çырăнмастăп! Эпĕ пурăнасшăн-ха, выçă вилесшĕн мар! Унта кĕрсен, арăмсене те, ача-пăчасене те пĕрлештерсе яраççĕ. Вара пурте пĕтрĕмĕр, пурин те пĕр хурантан çимелле пулать!— тесе кăшкăрма пуçларĕ.

Чухăн, аран-аран пурăнакан çын çапла кăшкăрни халăха кӳрентерсе ячĕ, ăна çавăнтах парта çинчен туртса антарчĕç.

Шкул çурчĕ çаплах кĕрлесе тăрать. Пĕрисем колхозшăн, теприсем çук, яхăнне те ямаççĕ. Пуху варрине Ундалов хушаматлă вырăс çынни тухса тăчĕ. Ăна, Ленинград рабочине, пирĕн пата ятарласа колхоз тума янă-мĕн.

— Тусăмсем, сирĕн умăрта халь çеç Мирун сăмах тухса каларĕ. Вăл, арапуçсем каланă тăрăх, хăй ĕмĕрĕнче нихçан та тăраниччен çăкăр çисе курман. Анчах çак çын колхоза кĕресшĕн мар, ăна хирĕç тăрать. Çук, юлташсем, кунта Мирун хăйĕн шухăшне каламарĕ. Ăна пуянсем хăйсем майлă çавăрнă, вăл вĕсен урапи çинче ларса пыракан çын. Сире, хресченсене, вăл шутра Мируна та, пĕрлешӳллĕ хуçалăх çеç тулăх пурнăç пама, вилĕмрен хăтарма пултарать,— терĕ Ундалов.

Вăл каланă хĕрӳллĕ, çулăмлă сăмах пухури çынсене тарăн шухăша ячĕ пулмалла: арапуçсем пĕрин хыççăн

тепри колхоза çырăнма пуçларĕç. Михаил Қатынов, Александр Хромов, Петр Романов...

Вĕсем чи малтан çĕнĕ пурнăç сулĕ çине тăчĕç, пĕрлешӳллĕ хуçалăх йĕркелерĕç. Хуçалăха «Хĕрлĕ хĕлхем» ят пачĕç.

## ТРАКТОР, ТРАКТОР!

Яла трактор килет!

Қу хыпар яла çав тери хăвăрт сарăлчĕ. Пурте кĕтеççĕ.

Қĕркунне пулин те, хĕвел пайăркисем çуллахи пек ăшă. Йывăççен сарала пуçланă çулçисем савăнăçлăн шĕпĕлтетеççĕ.

Қĕçĕн Атăк енчен сасартăк тем кĕрленĕ сасă илтĕнсе кайрĕ. Унччен те пулмарĕ, ачасем:

— Трактор! Трактор!—тесе кăшкăрса ячĕç.

Тем пысăкăш хура хурçă машина, аслă кĕперпе Пăла урлă каçса, колхоз йĕтемĕ çинелле çул тытрĕ. Қу хайхи трактор тени пулчĕ ĕнтĕ. Ун çинче пĕчĕк хăмач ялав вĕлкĕшсе пырать. Пĕтĕм ял, ватти-вĕтти, пурте трактор хыççăн чупать.

Йĕтем çинче халăх туллиех. Пĕр яштака çамрăк каччă трактор çинчен сиксе анчĕ те сăмах пуçларĕ.

— Қу машинăпа çĕр сухалама та, тырă акса çапма та пулать. Ăна Ленинградра, «Путиловец» заводра тунă,—терĕ вăл.

Вара трактор мĕнле ĕçлени çинчен каласа кăтартрĕ пире.

— Халĕ Арапуçне те çĕнĕ ĕмĕр палли, совет саманин палли — трактор килчĕ. Пире çакăн пек хаклă парне панă революци хулин рабочийĕсене пĕтĕм чунчĕререн мухтав! Хулапа ял хушшинчи тăванла çыхăну, туслăх маттала та ӳссе, хăватланса пытăр!—терĕ колхоз председателĕ Ундалов юлташ.

Кун хыççăн çамрăк каччă ялти ватă çынна, Қалля пиччене, хăй çумне трактор çине лартрĕ те йĕтем тавра

виçĕ хутчен çаврăнчĕ. Қалля пичче чăтаймарĕ, пĕтĕм чунтан хавасланса:

— Эх, пурнăç, виличчен çак япалана та курмалла пулчĕ иккен!— терĕ.

## ЙĂМРА АЙĔНЧЕ

Пирĕн пӳрт çумĕнчи ватă йăмра айне хамăр урамри çынсем пухăнса ларнă. Вĕсем каçса кайса пурнăç çинчен пуплеççĕ.

Йăмра çумне Иван Васильевич Янаслов учитель пырса тăчĕ. Унăн аллинче «Қанаш» хаçат.

— Иван Васильевич, санăн çĕнĕ хаçат пулас. Вулаха, мĕнле хыпарсем пур унта?—терĕç ăна касри çынсем.

Учитель хаçат вулама тытăнсан, ман атте ун патнерех сиксе ларчĕ. Вăл сулахай аллине хăлхи çумне тытрĕ те хаçатра мĕн çырнине пĕр сăмах сиктермесĕр итлеме пуçларĕ.

Хаçатра ырă хыпарсем пĕлтереççĕ: хресченсем пур çĕрте те колхоза çырăнаççĕ, пĕрлешсе ĕçлеççĕ.

— Ванька тете, сан та шухăшласа пăхмалла. Кая юлса кĕтĕм тесе кулянмалла ан пултăр,— терĕ Иван Васильевич аттене.

Киле таврăнсан, атте чылайччен каллĕ-маллĕ уткаласа çӳрерĕ, аннепе канашласа пăхрĕ. Эпĕ атте шухăшкăмăлне сисрĕм, чун-чĕререн хĕпĕртеме тытăнтăм. Кĕтнĕ кун çитнĕн, умра шурăмпуç хăпарнăн туйăнать.

Атте мана, сĕтел хушшинче ларакансскере, шур хут листипе кăранташ тыттарчĕ те:

— Çыр, эпĕ халăхпа пĕрле пуласшăн, колхоза кĕресшĕн,— терĕ.

Пирĕн çемье колхоза кĕнĕ хыпар таврана хăвăрт сарăлчĕ. Часах Хусантан, Макçăм пиччерен, çыру илтĕмĕр. Унта вăл хăй савăнни, атте тĕрĕс тупи çинчен çырнă.

# ЧИПЕР ИНКЕ

Кĕркунне. Йывăç çулçисем сарала пуçланă. Эпир колхоз йĕтемĕнче авăн çапатпăр.

Атте Йĕпреçрен патшалăха тырă леçсе таврăнчĕ. Унпа юнашар, лав çинче, палламан çынсем лараççĕ. Камсем-ши вĕсем? Çав тери пĕлес килет. Эпĕ, алăри кĕреплене пăрахсах, аттене хирĕç чупрăм.

— Ваççа, ан васка, такăнса ӳкĕн,— тет атте.

Унччен те пулмарĕ, лав çинчен пĕр çын сиксе анчĕ.

— Питĕ аван. Пысăкланнă, çын пулнă,— тет хăй. Пăхатăп та — Макçăм пичче!

Лаша тăпах чарăнчĕ. Пичче мана икĕ аллипе тытрĕ те çӳлелле çĕклерĕ, вара лав çинчи çынсемпе паллаштарма пуçларĕ.

— Ку санăн инкӳ, Мария Тимофеевна, пулать. Ку, пĕчĕкки,— ман ывăл Гера,— терĕ вăл.

Ним калама та пĕлместĕп. Кĕтмен япала, кĕтмен тĕлпулу.

— Тырра пушатнă хыççăн çула тухма çеç хатĕрленнĕччĕ — станцăна кĕрсе тухас терĕм. Пăхатăп та, платформа çинче пиччӳсем лара параççĕ. Вĕсем яла канма килеççĕ иккен. Аван та пулчĕ. Тулли лавпа кайрăм, туллипе килтĕм,— тет атте.

Эпĕ часах Марье инкепе, Герăпа паллашса çитрĕм. Инке питĕ калаçма юратакан çын пулчĕ. Вăл хулара ӳснĕ, ырăс. Хăй питĕ ятуллă, чипер хĕрарăм. Яла килнĕ кунах вăл аннене пулăшма тытăнчĕ: кĕпе-йĕм çурĕ, пахчаран çĕрулми кăларса килсе, яшка пĕçерчĕ...

Эпĕ ăна чипер инке тесе чĕнеттĕм. Пĕррехинче вăл ман çине кулараххăн пăхса илчĕ те:

— Чипер инке тени мĕне пĕлтерет?— тесе ыйтрĕ.

Пиччесем ялта нумай пурăнмарĕç, каллех хулана кайрĕç. Вĕсене ăсатнă кун çав тери кулянтăм: çывăх тăвансене инçе çула ăсатма çав тери йывăр иккенне тепĕр хут туйса илтĕм.

# АКАТУЙ

Çак куна эпĕ нумайранпа кĕтеттĕм. Пĕр ирхине вара атте мана тутлă ыйхăран вăратрĕ те:

— Ну, ачам, тăратăн пулĕ, Патăръелне акатуйне каймалла,— терĕ.

Анне те хатĕрленнĕ иккен. Вăл хăйĕн хĕр чухнехи тĕрленĕ шурă кĕпине тăхăннă, çĕнĕ сурпан çакнă.

Эпĕ вырăн çинчен сиксе тăнă-тăманах сивĕ шывпа çăвăнтăм та атте нумаях пулмасть илсе панă пиншака, сăран атта тăхăнтăм.

Кунĕ питĕ те илемлĕ, тÿпе тап-таса, сеп-сенкер. Сывлăм шывĕ курăк çинче пин-пин шăрçа сапнăн йăлтăртатса выртать.

Патăръел — питĕ те илемлĕ ял, Пăла шывĕн ик айккипе сарăлса ларнă. Кунта кашни çулах таврара чи чаплă акатуй пулать. Ăçтан кăна пуçтарăнмаççĕ-ши унта?! Паян та кунта таврари ялсенчен çав чаплă уява халăх пуçтарăннă. Акă пире хирĕç тăрантас çине ларнă каччăсемпе хĕрсем хаваслăн юрласа килеççĕ. Пĕр каччи малти ларкăç çине ларнă та илемлĕн янраттарса хуткупăс калать. Пăла шывĕ хĕрринче, улăхра, ав тутар каччисемпе хĕрĕсем карталанса тăнă та ташша çапаççĕ.

Пирĕн лаша аттен сывăх тусĕ Çемен мучи çурчĕ умне çитсе чарăнчĕ. Пÿртрисем эпир килнине курнăмĕн, пурте урама сиксе тухрĕç.

— Ай, пит лайăх, Ванюк хăта çитрĕ! Ванюк хăта çитрĕ! Салам, салам!— тет Çемен мучи.

Çемен мучи ывăлĕсем, Сантăрпа Илюш, лашана тăварчĕç те хăйсен пахчи çумĕнчи çерем çине кăларчĕç. Пире пÿрте илсе кĕчĕç. Нумай та вăхăт иртмерĕ, Çемен мучи мăшăрĕ, Кулине аппа, хурантан кукар яшки антарса лартрĕ. Пысăк чашăк çинче така пуçĕ пăсланать. Унтан вăл турилккесем çине акатуй ячĕпе пĕçернĕ кукăльне, тăварлă çуне, шăрттанне каса-каса хучĕ. Эпир пурте сарă сĕтел тавра ларса тухрăмăр. Лайăх хăна турĕç пире Çемен мучипе Кулине аппа.

Атте пуçне «симĕс кайăк» та сăхса илчĕ пулас, вăл чăтаймарĕ, хамăр ял юррине юрласа ячĕ:

Сăрт тăррипе нумай утрăм,
Лаппипе те, лаппипе те утас-ха.
Хурлăхне эп нумай куртăм,
Ыррине те, ыррине те курас-ха...

Қăштахран эпир акатуйне тухрăмăр, ял çумĕнчи укăлча умĕнче уяв пуçланчĕ. Тĕрлĕ ялсенчен килнĕ лашасем, пуçĕсене уха-уха, пĕрин хыççăн тепри ăмăртса чупмалли вырăна кайрĕç. Халăх кĕтет.

— Қам мала тухĕ-ши?— теççĕ сынсем пĕр-пĕрне.

Акă, унччен те пулмарĕ, аслă çул çинче çăра тусан çĕкленчĕ.

— Қилеççĕ! Қилеççĕ!— кăшкăрса ячĕ такам хыттăн.

Пĕтĕм халăх хускалса кĕрлесе кайрĕ.

— Шăнкăртам лаши!

— Нĕркеç лаши!

— Çук, Анат Туçа лаши!

Анчах вăл та, ку та пулмарĕ, малта Пикшик колхоз лаши иккен! Мала тухнă лаша çине сурпансем, пурçăн тутăрсем, сĕлкĕсем урта-урта ячĕç. Лаша та хăйне чысланине туйса илчĕ пулмалла: пуçне уха-уха, хуçи хыçĕнчен мăнаçлăн утса пырать.

Унтан ем-ешĕл çаран çинче йĕкĕтсем кĕрешме тытăнчĕç, теприсем чупма кайрĕç. Ачасемпе пĕрле эпĕ те чупса пăхрăм. Ытла начарах чупмарăм пулмалла: мана кăранташ парнелерĕç.

## СĂВĂ-ЮРĂ ЯНĂРАТЬ

Кĕрхи тĕттĕм каç. Шкулта халăх туллиех. Кĕçĕр кунта ялти комсомолецсемпе çамрăксен концерчĕ пулать. Алăк уçăлчĕ те, çынсем хушшине пальто, хура путек тирĕнчен çĕленĕ кăтра çĕлĕк тăхăннă çамрăк çын кĕрсе тăчĕ.

— Шупашкартан Митта килнĕ,— терĕç ман çумра

тăракан хĕрсемпе каччăсем. Çаврăнса пăхатăп та, чăнах та, хамăр ял ачи, сăвă-юрă ăсти Митта Ваçлейĕ тăра парать. Ăна часах ялйышсем, тус-тăвансем хупăрласа илчĕç.

— Спектакль пуçланиччен Ваçлейрен сăвă вуласа пама ыйтас,— терĕ пĕри.

Митта килĕшрĕ, çавăнтах сцена çине хăпарса тăчĕ те хăйĕн сăввисене вулама пуçларĕ:

Мала, комсомол!
Çулсем тăвалла.
Ытах тăвалла-тăк —
Çине тăмалла!
Мала, комсомол!
Çулсем такăр мар.
Ытах такăр мар-тăк—
Тавай такăрлар!..

Ваçлей, сăввисене вуласа пĕтерсен, халăх еннелле пуçне тайрĕ. Алă çупни, «Пире хисеплĕненĕшĕн сана рехмет, тавтапуç!» тенĕ сасăсем янраса кайрĕç.

Концерт малалла пырать. Ялти çамрăксем пĕрин хыççăн тепри сăвă, юптару вулама тытăнчĕç. Манпа пĕрле вĕренекен Марине хăйĕн уçă та илемлĕ сассипе «Вĕлле хурчĕ ылтăн хурт» юрра шăрантарчĕ. Черет ман пата çитсен, эпĕ Петĕр Хусанкай çырнă «Ирĕк тимĕрçĕ» сăвва хавхаланса вуласа патăм:

Вăйлă кăкăрăм
Çăмăллăн сывлать.
Хăнăхнă аллăм
Пĕрмаях шаккать;
Шаккать те ватать
Асап сăнчăрне,
Çĕнĕрен хывать
Тĕнче никĕсне...

Итлекенсене эпĕ сăвă вулани кăмăла кайрĕ пулас, вĕсем хыттăн алă çупса ячĕç.

Концерт вĕçленсен, Митта Ваçлейĕ мана хăй патне чĕнсе илчĕ те:

— Маттур эсĕ, Ваçлей шăллăм, пултаратăн. Кун

çинчен, Шупашкара çитсен, Хусанкая хăйне каласа паратăп ĕнтĕ,— терĕ.

## УКÇА ЕНЧĔКĔ

Эпĕ Тури Атăка Елисса аппа патне хăнана каятăп. Йăлăмран иртсен, ыраш пуссине кĕнĕччĕ çеç, çулпала çӳрен йăйăр кӳлнĕ лав килнине курах кайрăм. Лав çинче икĕ арçын, икĕ хĕрарăм шăкăлтатса калаçса пыраççĕ. Пăхатăп та, тилхепе тытса пыраканни паллана çын, Анат Чакăри Кĕçтук пичче пулах кайрĕ. Мана курсан, вăл лашине чарчĕ те:

— Васлей шăллăм, Турхана пулсан — лар, пĕрле каятпăр,— терĕ.

— Эпĕ Атăка, Елисса аппасем патне çитиччен çеç,— терĕм Кĕçтук пиччене.

— Асту эппин.

Лав малалла вĕçтерчĕ.

Йĕри-тавра ыраш пусси. Умра ылтăн тинĕс хумханса выртнăн туйăнать. Путене авăтни чуна уçса ярать. Сисмен те, эпĕ Атăк ялĕ çумне çитсе те тăнă. Укăлча хапхине уçма кăна тăнăччĕ, çул варринче пĕр пĕчĕк енчĕк выртнине курах кайрăм. Ăна алла илетĕп, салтса пăхатăп: укçа! 80 тенкĕ! Мĕн тумалла, ăçта хумалла ăна? Апла та, капла та шутлатăп. Çавăнтах тата атте калани аса килчĕ: тупнă япалана хуçине каялла тавăрса памалла, çын куççулĕпе савăнма юрамасть теччĕ вăл. Çапла шухăшласа çеç пыраттăм, хайхи çӳрен йăйăр каялла вĕçтерсе килнине курах кайрăм. Ман пата çитсен, вăл тăпах чарăнчĕ, Кĕçтук пичче хумханать, калас тенĕ сăмахне те калаймасть. Пăртак сывлăш çавăрсан çеç:

— Васлей шăллăм, эсĕ мĕн те пулин тупмарăн-и?— тесе ыйтрĕ.

— Çук,— тетĕп эпĕ. Хам çав вăхăтра алăра укçа енчĕкне силлесе кăтартрăм. Ăна курсан, Кĕçтук пичче мана ыталаса илчĕ, пĕр-икĕ хутчен çӳлелле çĕклесе антарчĕ.

— Тавтапуç, çухалман, сан аллуна лекнĕ,— тет хăй.

Пĕр-ик кун иртсен Кĕçтук пичче пирĕн пата пычĕ. Ун аллинче пĕр çыхă кĕнеке. Вăл ăна мана тыттарчĕ те:

— Ку сана укçа енчĕкĕшĕн,— терĕ.— Унта Пушкин, Лермонтов, Шелепи, Ваçанкка сăввисем пур. Эсĕ сăвăсене юрататăн.

Эпĕ Кĕçтук пиччене хаклă парнешĕн пĕтĕм кăмăлтан тав турăм. Кĕнекесене вара темиçешер хут та вуласа тухрăм.

## НАРСПИ

Шап-шурă пуличчен хырнă хăма сĕтел çинче пĕчĕк лампа çунать. Эпир пурте ĕçлетпĕр: атте çăпата тăвать, анне кĕнчеле арлать, эпĕ атте Канашран тупса килнĕ хуплашкасăр, лутăрканса пĕтнĕ кĕнекене вулатăп. Ячĕ те çук унăн, анчах хăй питĕ килĕшрĕ. «Кам çырма пултарнă-ши вара çакнашкал чаплă япалана?»— шухăшлатăп хам тĕлĕнсе. Вулама пăртак чарăнсанах, атте хистеме тытăнать:

— Вула, ачам, вула,— тет.

Анне те ман çине пăха-пăха илет, вăл та малалла мĕн пуласса кĕтет.

Кăнтăрлапа пĕтĕм ял
Пĕççисене шарт çапать:
Нарспи виллине тупса,
Нимĕн тума аптăрать.

Çак йĕркесене вуласан, пуçа çĕклесе пăхрăм та шалт тĕлĕнсе кайрăм: аттепе анне иккĕшĕ те ĕçĕсене пăрахнă, куçĕсене шăлса лараççĕ.

— Эх, ĕлĕкхи самана! Эх, хĕрарăм шăпи!— тет анне, чунтан хурланса.

Эпĕ малалла вулатăп:

Хĕвел анчĕ, каç пулчĕ,
Чăваш çынни çывăрать.
Хĕвел тухрĕ, сутăлчĕ,
Чăваш ĕçе тытăнать.

Анчах пирӗн Нарспишӗн
Ӗмӗрлӗхе каҫ пулчӗ.
Ӗмӗр тӗттӗм тупӑкра
Хуйхи-суйхи татӑлчӗ...

Вуласа пӗтертӗм, кӗнекене хупрӑм та шухӑша кайрӑм. Куҫ умне унта ҫырса кӑтартнӑ ҫутҫанталӑкпа ҫӗршыв илемӗ, чӑваш ҫыннисен тертлӗ те хурлӑхлӑ пурнӑҫӗ, Нарспипе Сетнер кунҫулӗ тухса тӑчӗ.

Анчах ҫак кӗнекене Константин Васильевич Иванов ҫырнине эпӗ каярахпа тин пӗлтӗм, ӑна хисеплесе, пӗтӗм чун-чӗререн пуҫа тайрӑм.

## НОННА КИРИЛЛОВНА

Ачасем, савӑннипе, ниҫта кайса кӗме пӗлмеҫҫӗ.

— Ҫӗнӗ учительница килнӗ. Пире чӑваш чӗлхипе литературине вӗрентме пуҫлать!

Эпир пурте партӑсем хушшине кӗрсе лартӑмӑр та урок пуҫланасса кӗтетпӗр. Алӑк хуллен уҫӑлчӗ, пирӗн ума сарӑ ҫӳҫлӗ хӗрача кӗрсе тӑчӗ.

— Эпӗ — сирӗн учительница. Чӑваш чӗлхипе литературине вӗрентме пуҫлатӑп. Мана Нонна Кирилловна Еремеева тесе чӗнеҫҫӗ,— терӗ вӑл.

Хӑй вырӑсла та, чӑвашла та лайӑх калаҫать. Эпир ӑна часах хӑнӑхса ҫитрӗмӗр, ун урокӗсенче пӗрре те шавламастӑмӑр, вӑл каланисене яланах юратса итлеттӗмӗр.

Пӗр ҫул ытла вӗрентрӗ Нонна Кирилловна пире. Ҫак учительницӑна ял халӑхӗ те кӑмӑллатчӗ, хисеплетчӗ:

— Ытла та лайӑх хӗрача. Ватти-вӗттипе пуринпе те калаҫать. Ырришӗн савӑнать, начарришӗн кулянма пӗлет,— тетчӗҫ ун ҫинчен арапуҫсем.

Нонна Кирилловна Ульяновскри чӑваш педагогика техникумӗнчен вӗренсе тухнӑ-мӗн. Ҫавӑнпа пулӗ ӗнтӗ, вӑл яланах хӑй вӗреннӗ хулапа шкул ҫинчен кала-кала паратчӗ.

— Ульяновск — Ленин çуралнă хула. Унта Владимир Ильич ашшĕ тусĕ, чăваш çынни Иван Яковлев вĕреннĕ, ĕçленĕ. Ульяновск хамăр тăван халăхăн мухтавлă ывăл-хĕрĕсен ячĕсемпе çыхăннă. Кунта пирĕн культура вучахĕ ялкăшса тăнă,— тетчĕ вăл пире. Аван учительницăччĕ, лайăх çынччĕ Нонна Кирилловна. Анчах тепĕр çултан халăхра вăл пирĕн ялтан каять текен хыпар сарăлчĕ. Чăнах та, сăмах ахалех пулман иккен: Нонна Кирилловна хамăр ял ачине, Митта Васлейне, качча тухрĕ, унпа пĕрле Шупашкара куçса кайрĕ. Эпир пурте йăна йăсатма шкула пухăнтăмăр.

— Ну, шăллăмсем, йăмăкăмсем, эсир мана нумай савăнтартăр: тăван чĕлхепе литературăна юратса вĕрентĕр. Çакна ан манăр: тăван чĕлхене хисеплекен çын ашшĕ-амăшне те, çĕршыва та хисеплет, юратать,— тесе хăварчĕ пире Нонна Кирилловна.

Юратнă учительницăн çак сăмахĕсене эпĕ ĕмĕрлĕхех астуса юлтăм. Вĕсене шкул ачисемпе тĕл пулса каласнă чух хам та калатăп халĕ.

## МАРИНЕ

Кӳршĕ хĕрĕ, манпа пĕрле вĕренекен Марине, хăйĕн йăмăкне, Ульхана, Пăла хĕрринчен çавăтса хăпарать. Иккĕшĕ те йĕтĕн пиртен çĕленĕ кĕпе тăхăннă. Хăйсем, чĕкеç чĕпписем пек, шăкăл-шăкăл калаçса пыраççĕ.

Маринене курсан, эпĕ вăтаннă пек пултăм, вăл мана ан куртăр тесе, пĕр ватă йăмра хыçне пытантăм.

Аван хĕрача Марине. Унăн мăшăр кăвак куçĕсем икĕ çутă çăлтăр пек ялкăшса тăраççĕ. Пĕвĕ вара пĕчĕк те яштака хăва пек. Хурарах çӳçĕ çил вĕрнипе хумхана-хумхана илет.

Кăнтăрла тĕлĕнче Марине пирĕн пата пычĕ, хăй пĕчĕк çава йăтнă. Калинккерен кĕнĕ-кĕменех:

— Ванька тете килте-и? Эпĕ аннепе утă çулма каясшăн та, çава мăкалнă, туптаттарасшăнччĕ,— терĕ.

Атте мăлатук тытрĕ те сунтал умне пырса ларчĕ.

Ĕçе пикениччен пĕр-икĕ хутчен Марине куçĕнчен пăхса илчĕ, вара:

— Эпĕ хам ĕмĕрте мĕн чухлĕ çынна çава туптаса паман пулĕ, анчах сан пек çава йăтса килнĕ пĕчĕк ĕç-чене пĕрремĕш хут куратăп. Маттур, пулас лаша ти-харанах паллă,— терĕ.

Чăнах та, Марине мĕн ачаран ĕçе юрататчĕ. Вăл ваттисемпе пĕрле утă çулма çӳренине, паккус хыççăн паккус ӳкерсе пынине ял çыннисем яланах ырăпа асă-натчĕç.

Эпĕ çулленех хамăр касри ачасемпе пĕрле колхоз хирне пучах пухма çӳреттĕм. Унта Марине те Ульха йăмăкĕпе пĕрле тухатчĕ. Эпир ир пуçласа мĕн каçченех пĕрле юрла-юрла ĕçлеттĕмĕр, ыраш, тулă пуссине пĕр пучах юлмиччен тасататтăмăр.

Пĕррехинче çапла кĕтмен çĕртен Марине аллинчи кĕрепле аври çурмалла хуçălса кайрĕ. Мĕн тумалла? Яла кайма инçе. Марине кулянма пуçларĕ, куçĕ те шыв-ланчĕ.

— Ан кулян, Марине. Кунтан Пӳртлĕ ялĕ инçе мар. Халех унта кайса, çĕнĕ авăр лартса килетĕп,— терĕм те эпĕ, ун кĕреплине илсе, Пӳртлĕ еннелле вĕçтертĕм. Ва-ра унтан часах кĕреплене çĕнĕ авăр лартса килтĕм. Уншăн Марине чун-чĕререн савăнчĕ, ман çине ăшшăн пăхса тав турĕ.

Каллех хĕрсе ĕçлеме тытăнтăмăр. Эпир лайăх, тă-рăшса ĕçленине колхоз правленийĕ те пĕлсе çитрĕ.

— Пултаратăр эсир, ачасем. Эпир сире парне пама шутлатпăр,—терĕ пире пĕррехинче колхоз председателĕ Герасим Васильевич Янаслов.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, пире, хирте пучах пуха-кан ачасене, хăшне кĕпе, хăшне карттус парнелерĕç. Маринене илемлĕ тутăр лекрĕ, мана вара пионер ла-герьне кайма путевка пачĕç.

Пурăна киле Марине мана хăйĕн чипер сăн-сăпачĕ-пе, ырă кăмăлĕпе тыткăна иле пуçларĕ. Эпĕ яланах ăна шыраттăм. Ăна тĕл пулмасан, курмасан, чĕрере тем çитмен пек туйăнатчĕ.

## ВĂРĂМ ПУШĂ

Ирхине. Кăмакари вутă та çунса пĕтмен-ха. Пирĕн пата колхоз председателĕ Герасим Васильевич Янаслов пычĕ, аттепе чылайччен калаçса ларчĕ. Тухса каяс умĕн вăл атте хулпуççийĕ çине хăйĕн сылтăм аллине хучĕ те:

— Ванька тете, пĕлетĕн-и, çын кирлĕ: эпир сана сысна фермине ĕçлеме ярасшăн,— терĕ.

Çак сăмахсене илтсен, кăмака умĕнчи анне, ĕçне пăрахсах, Герасим Васильевич умне пырса тăчĕ. Нумайччен шухăшласа пăхрĕç вĕсем. Атте фермăна каймалла килĕшрĕ.

Эпĕ, шкултан таврăнсан, пушă вăхăтра, яланах фермăна вĕçтереттĕм. Иван пичче те унтан тухма пĕлместчĕ. Çапла вара эпир пĕтĕм çемйипех фермăра ĕçлеме пуçларăмăр. Çуллахи кунсем çитсен, Иван пичче сыснасене Хырай хĕрринчи çаран çине илсе тухма тытăнчĕ. Шăрăх кунсенче сыснасене ниепле те чарма май çукчĕ, хӳрисене пăра пек пĕтĕрсе хуратчĕç те ял еннелле, фермăналла вĕçтеретчĕç.

Иван хăйпе пĕрле кĕтӳ кĕтме мана та илсе тухатчĕ. Вăл мана сӳсрен вăрăм пушă явса пачĕ. Пушă хытă шаплаттăр тесе, ун вĕçне лаша хĕлĕхĕ сыпрĕ.

Эпир сыснасене çерем çине шурăмпуçпе пĕрлех илсе тухаттăмăр, фермăна вара хĕвел аничччен пăртак маларах çеç илсе кĕреттĕмĕр. Пирĕн яланах аслă урампа иртмеллеччĕ. Аслă урамра эпĕ куç хывнă, хам юратакан Марине пурăнатчĕ. Вĕсен умĕнчен иртсе кайма мана çав тери йывăрччĕ. Ун ашшĕ-амăшĕ авă кĕтӳçĕ иртсе каять тесе каласссăн туйăнатчĕ. Çавăнпа та эпĕ, Маринесен умне çите пуçласан, хамăн вăрăм пушша пĕр çĕре чĕркеттĕм те кĕпе айне чиксе хураттăм. Хам вара, пуçа тăратса, ним пулман пек утса иртеттĕм.

Çапла эпĕ, Иван пиччепе пĕрле, икĕ çул сысна кĕтĕвĕпе çӳрерĕм. Пирĕн ĕçе колхоз правленийĕ те асăрхарĕ пулас: пĕр çулхи Октябрь уявĕнче пиччене сăран атă, мана каракуль çĕлĕк парнелерĕ.

Эпӗ, хам ятӑма асӑнсан, трибуна умне вӑтанараххӑн тухса тӑтӑм.

— Ан вӑтан, Васлей. Халӗ, ҫӗнӗ саманара, кӗтӳҫӗсем мухтава тивӗҫлӗ ҫынсем вӗсем. Эсир пиччӗрпе иксӗр те ырӑ ӗҫ тӑватӑр. Уншӑн сире пӗтӗм чӗререн тав тӑватпӑр,— терӗ пире колхоз председателӗ Герасим Васильевич.

## ЧУН ХӖЛХЕМӖ

Пирӗн тавралӑх мӗн ӗмӗртенпех халӑх таланчӗсемпе пуян пулнӑ темелле. Пирӗнпе кӳршӗллӗ Анат Чакӑ ялӗнче Петр Васильевич Пазухин ҫуралса ӳснӗ. Вӑл чӑваш халӑх сӑвви-юррине пухас тӗлӗшпе питех те нумай ӗҫ тунӑ. Петр Васильевич Константин Васильевич Ивановӑн, вилӗмсӗр «Нарспи» авторӗн, тусӗ пулнӑ. Пазухинсем пире ҫывӑх тӑнӑ. Анне вара Петр Васильевича час-часах аса илетчӗ.

— Вӑл, касхи вӑйӑсене тухса, ҫамрӑксен юррисене кассса кайса тӑнлатчӗ, хӑйӗн кӑмӑлне кайнисене ҫавӑнтах ҫыра-ҫыра хуратчӗ. Петӗр питӗ ырӑ кӑмӑллӑ, пултаруллӑ ҫынччӗ,— каласа паратчӗ вӑл.

Пазухин аннене хӑй пухнӑ халӑх юррисен кӗнекине парнеленӗ пулнӑ. Анне мӗн ҫӗре кӗричченех упраса пурӑнчӗ. Ҫав кӗнекере пирӗн ял ҫынни Карсун Кавӑрлин юрри те пур. Карсун Кавӑрли, Пазухин ҫырнӑ тӑрӑх, юрӑ ӑсти пулнӑ. Салтака кайнӑ чухне вӑл хӑй ҫуралнӑ ҫурт еннелле аллине тӑсса:

Утсемех те юртать,
Ҫул юлать.
Эпирех те вилсен,
Мӗн юлать?—
Мӗн каланӑ сӑмах—
Ҫав юлать,—

тесе юрласа хӑварнӑ, теҫҫӗ.

Пазухин ятне арапуҫсем яланах ырӑпа асӑнаҫҫӗ.

1935 ҫулта пирӗн колхозра хор кружокӗ йӗркеленӗччӗ. Унта арапуҫсем, чакӑсем нумаййӑн ҫӳретчӗҫ. Ана

юрă ăсти — хамăр ялта учительте ĕçлекен Андрей Тайбинский ертсе пыратчĕ. Ун чухне хора Пазухин ятне пачĕç. Хор пĕтĕм таврари пултаруллă хорсенчен пĕриччĕ. Эпĕ те унта, хамăн тăван-пĕлĕшсемпе, тус-хĕр Маринепе пĕрле, сахал мар юрă шăрантарнă.

Арапуçĕнче чăвашсен паллă поэчĕ, чĕлхе ăсти Митта Ваçлейĕ çуралса ÿснĕ. Митта Ваçлейĕ шăллĕсем Петĕрпе Иван, Яккупа Микула, Санюк йăмăкĕ — пурте ман туссем пулнă. Эпир пĕр-пĕрне яланах тăвансем пек хисеплеттĕмĕр.

Митта Ваçлейĕн Якку ятлă шăллĕ манпа пĕрле вĕренетчĕ. Вăл, пиччĕшĕ пекех, сăвăсем хайлатчĕ. Вăл çырнă йĕркесем шăрçа пек пулса пыратчĕç. Шкулта пире асăрхарĕç пулас, «Маяк» ятлă стена хаçачĕ кăларма суйларĕç. Якку — сăвăç, эпĕ—художник, Иван—çыравçă. Хаçат уйăхра пĕрре тухатчĕ. Илемлĕ, лайăх кăлараттăмăр ăна. Пĕррехинче эпĕ те, Яккуран курса, çуркунне çинчен çĕрĕпе сăвă хайларăм:

Çÿлте тÿпере
Сар хĕвел хĕртет.
Умра — çуркунне,—
Шур юр ирĕлет.
Ачасем пурте
Тулта, урамра,
Ĕçлеççĕ хĕрсе,
Лартаççĕ йăмра.
Шăнкăрч савăнса
Юрă шăрататъ,
Çунатне çапса
Пире саламлатъ...

Сăвă аванах пек туйăнчĕ. Ăна хам тантăшсене, шкул ачисене, кăтартрăм. Сăвва вĕсем те килĕштерчĕç, стена хаçатне пама хушрĕç. Ку вăл ман малтанхи чун хĕлхемĕ пулчĕ пулас. Çав хĕлхеме сÿнме памарăм вара. Эпĕ тăван чĕлхене, тăван литературăна ачаранах питĕ юрататтăм. Константин Ивановпа Çеçпĕл Мишши, Петĕр Хусанкайпа Митта Ваçлейĕ, Уйăп Мишшипе Илле Тукташ, Яков Ухсайпа Нестер Янкас тата ытти поэтсем çырнисене каçса кайса вулаттăм, вĕсем майлă

çырма тăрăшаттăм. Ача чухне мĕн чухлĕ хут варалаdensityман пулĕ! Малтан мĕн çырни пурте кăмăла кайнăн туйăнчĕ. Пурăна киле сăвăсене районта, Шупашкарта тухса тăракан хаçат-журналсен редакцийĕсене яма пуçларăм. Анчах пур çĕртен те: «Сăввусем пиçсе çитмен, пичетлеме пултараймастпăр»,— тесе çырнă çырусем килетчĕç. Мĕн чухлĕ хуйхăрман, мĕн чухлĕ кулянман пулĕ эпĕ çакăншăн. Анчах ним тума та çук: каллех хут варалама, сăвă çырма ларатăн.

Пĕрре эпĕ, хам çырнă сăвăсене пухса, районта тухса тăракан «Коммунар» хаçат редакцине илсе кайрăм. Редакцинче ĕçлекенсем мана ăшшăн йышăнчĕç. Хаçат редакторĕ Петр Афанасьевич Жданкин мана хăй çумне лартрĕ те эпĕ çырнă сăвăсене вулама пуçларĕ, хăй кашни сăвва вуламассерен вăраммăн сывласа илет. Эпĕ Петр Афанасьевич мĕн каласса чун-чĕререн кĕтсе ларатăп.

Юлашкинчен редактор:

— Вăтăр сăвă вуласа тухрăм акă, хаçата яма юрăхлине вара пĕрре те тупаймарăм,— терĕ те мана сăвă çинчен ăнлантарса пама пуçларĕ.

Ăшă сăмах, вĕрентсе каланă сăмах усăллă пулчĕ ахăр. Эпĕ, киле таврăнсанах, хутпа кăранташ илтĕм те каллех сăвă çырма лартăм. Пуçа темле шухăш та пырса кĕрет. Кĕркунне çинчен те, хĕлле çинчен те, пурин çинчен те çырас килет. Йĕри-тавра çаврăнса пăхрăм та — куç умне çуллахи илемлĕ кун тухса тăчĕ. Хĕрӳ ĕç вăхăчĕ. Çавăнтах редактор хама: «Ху лайăх туйса, пĕлсе тăракан ĕç çинчен çырмалла»,— тени аса килчĕ. Эпĕ çуллахи ял çинчен çырма шутларăм.

Нумай тертлентĕм, темле те çырса пăхрăм, анчах сăвă хама пĕрре те çырлахтармасть. Юлашкинчен çапах та вăл картне ларнă пек туйăнчĕ. Ана темиçе хут вуласа тухнă хыççăн «Çуллахи илем» ят патăм. Тепĕр кунне каллех редакцие чупатăп. Сăвă каллех Петр Афанасьевич Жданкин аллине лекрĕ. Вăл ăна хăвăрт вуласа тухрĕ те:

— Ну, Ваçлей, ку сăвва эсĕ тăрăшарах çырнă пек

туйӑнать. Ана хаçатра пичетлеме те юрать пулӗ,—тесе хавхалантарчӗ.

Чӑнах та, пӗр-икӗ кунтан манӑн «Çуллахи илем» çапӑнса та тухрӗ:

Хавaслӑ вӑхӑт
Чуна хыпалать,
Манӑн кӑмӑла
Уя хӑвалать.
Эп те васкаса
Тухса уттартӑм,
Аслӑ улӑхпа
Хыттӑн вашлатрӑм.
Улӑхсем аслӑ,
Таçтанах выртаç.
Йӑрансем анлӑ,
Куçпа курӑнмаç...

Хаçатра ман сӑвӑ пичетленнӗ! Утмӑл йӗрке! Ниçта кайса кӗре пӗлместӗп. Сӑвва пурне те вулаттарас килет. Çапла пулмасӑр, ара: вӑл ман малтанхи чун хӗлхемӗ вӗт!

## ПИЧЧЕ — САЛТАК

Вихтӑр пичче Хусанти техникумран вӗренсе тухрӗ, хӑй ачаран ӗмӗтленнӗ ӗмӗтне пурнӑçа кӗртрӗ: художникра ӗçлеме пуçларӗ.

Ӗçлеме пуçласан, вӑл киле темшӗн чылай вӑхӑт хушши çыру çырмарӗ. Эпир пурте хӑраса ӳкрӗмӗр, пиччене мӗн пулнӑ-ши тетпӗр. Анне вара пӗтӗм канӑçне çухатрӗ, лара-тӑра пӗлмест.

Пӗр кунхине пирӗн чӳречене такам шаккани илтӗнсе кайрӗ. Пӑхатпӑр та — урамра почтальон тӑрать: ун аллинче шурӑ конверт. Эпир пурте урама чупса тухрӑмӑр. Çыру! Вихтӑр пичче çырнӑ! Атте мана урамри сак çине хӑй çумне лартрӗ те:

— Ну, вуласа пар, пиччӳ мӗн çырать,— терӗ.

Эпӗ вулатӑп, пурте итлеççӗ:

«...Салам сире, атте-анне, тӑвансем. Эпӗ тӗрлӗ сӑлтавсене пула вӑхӑтра хыпар яраймарӑм. Уншӑн каçару

ыйтатăп: ан ӳпкелĕр, ан ятлăр. Хам çинчен сире çĕнĕ хыпар пĕлтерес тетĕп: мана Хĕрлĕ Çара илчĕç. Эпĕ халĕ салтак. Çĕршыва сыхлама юрăхлă пулнишĕн пĕтĕм чунтан-вартан савăнатăп. Эсир колхозра тăрăшса ĕçлĕр унта. Эпĕ сире — тăвансене, ялйыша — çапла шантарса калама пултаратăп: тăшман пирĕн юратнă çĕршыв пахчине сăмсине чикеймĕ, чиксен те — кунта вилĕм çеç тупĕ. Эпир, хĕрлĕ армеецсем, ялан сыхă тăратпăр...»

Пичче çырăвĕ пурне те калама çук савăнтарса ячĕ. Анне сăхсăхса илчĕ те:

— Эй, турă, турă, Вихтăр та çитĕнчĕ, салтак пулчĕ. Пурнăç лăпкă тăтăрччĕ, вăрçă тавраш çеç ан пултăрччĕ ĕнтĕ,— терĕ.

## ÇĔНĔ СĂН

Пирĕн «Хĕрлĕ хĕм» колхоз малтанхи утăмсем турĕ. Ял ĕçченĕсем çĕнĕ çуртсем тума, çăкăр-тăвартан çителĕклĕ пурăнма пуçларĕç. Ку çеç те мар, вĕсем хамăр яла, Пăла шывĕ хĕррине, крахмал завочĕ лартрĕç. Ăна ĕçе янă çул, Октябрь уявĕнче, пире, ял çыннисене, пурне те завода илсе кайрĕç. Эпир заводăн çĕнĕ çурчĕсене, машинисене курса тĕлĕнтĕмĕр. Ял халăхĕ умĕнче Иван Антонович Антонов коммунист хĕрӳллĕ сăмах каларĕ.

— Вăй илсех пыратпăр, юлташсем,— терĕ вăл.— Акă, пурте пĕрле тăрăшса ĕçлесе, патшалăх пулăшнипе завод лартрăмăр. Вăл крахмал, саго кĕрпи, тутлă патка тума тытăнать. Халĕ пирĕн яла та хула сăнĕ çапа пуçларĕ акă. Куншăн эпир пурте савăнатпăр, завод тăвакан çынсене пĕтĕм чун-чĕререн тав тăватпăр.

Унччен те пулмарĕ, заводра электричество ламписем çутала-çутала кайрĕç, машинăсем кĕрлеме пуçларĕç.

Пире, Вихтăр пиччепе иксĕмĕре, атте хăй патне чĕнсе илчĕ те:

— Ачамсем, çаксем ĕнтĕ вĕсем, Ильич ламписем, Ильич машинисем,— терĕ.

Вăхăт нумай та иртмерĕ, Ильич ламписем колхоз

правленийёнче, шкулта, завод çывăхĕнчи хресченсен килĕсенче те ялкăшма пуçларĕç.

Çав çулах ял варрине питĕ çӳллĕ юпа лартрĕç. Ана, çирĕп тăтăр тесе, пур енчен те хурçă пралуксемпе турттарса çыхрĕç. Вара пирĕн ялта пĕрремĕш хут радио сасси янăраса кайрĕ. Мĕнле кăна калаçу пулмарĕ пулĕ ун чухне.

— Çук, ку ултавлă япала вăл. Ещĕке çын кĕртсе лартнă, унта çын калаçать,— теççĕ пĕрисем.

— Çын сасси мар вăл, кăрмахвун сасси,— теççĕ теприсем.

Шăпах çапла хĕрӳ тавлашу пынă вăхăтра Шупашкар сасси илтĕнсе кайрĕ. Ак тамаша: радио чăвашла калаçать. Мĕнле кăна юрă янратмарĕ пулĕ: «Кай, кай Ивана», «Вĕлле хурчĕ ылтăн хурт», «Килмен те курман Шупашкарне»... Эпир пурте тĕлĕннипе çăвара карса тенĕ пек итлесе тăратпăр.

— Ак сана пурнăç! Ак ăçта çитсе тăтăмăр! Виличчен ку япалана та курмалла пулчĕ,— терĕ пире пĕтĕм чунтан савăннă анне.

## ЭПĔ — КОМСОМОЛЕЦ

Тӳпере хĕрӳ хĕвел кулать. Шăрăх. Хирти ĕçсем пуçланман-ха.

Эпир, комсомолецсем, колхоз правленине пухăнтăмăр. Пуху пулмалла, ялти комсомол организацийĕн секретарьне суйламалла. Пуху irrтерме Патăръелĕнчи комсомол райкомĕн секретарĕ, хамăр ялсем Иван Чудаков килнĕ. Хĕрӳ калаçу пуçланчĕ. Эпир хамăр юлашки вăхăтра тунă ĕçсем çинчен калаçрăмăр, çитменлĕхсене палăртрăмăр, вĕсене пĕтермелли майсене шырарăмăр. Пуху усăллă, лайăх иртрĕ.

Колхозри комсомол комитечĕн секретарьне суйлама вăхăт çитсен, пухури çамрăксем, пĕр кăмăллă пулса, ман ята асăнчĕç. Эпĕ вăтантăм, пĕтĕм чун-чĕререн хумханса кайрăм.

— Тавăт Ваçлейĕ ялти шкултан вĕренсе тухрĕ ĕнтĕ, çичĕ класс пĕтерчĕ. Халĕ колхозра ĕçлет. Эпир ăна яланах хамăрпа пĕрле пулнишĕн хисеплетпĕр. Вăл хăй комсомол ĕçне юратнине те кăтартса пачĕ. Ваçлее секретарь пулма суйласан, йăнăш пулас çук,— терĕç çамрăксем.

Эпĕ вара çакăн хыççăн çĕрĕпе çывăраймарăм. Шухăш нумай çав: тус-тантăшсен шанчăкне тÿрре кăлармалла вĕт манăн. Колхозра хĕрÿ ĕç пуçланчĕ, пирĕн, комсомолецсен, пурин те хамăр тивĕçе туйса, хĕрсе ĕçлемелле. Эпир çапла тăватпăр та: хирте-и, выльăх-чĕрлĕх ферминче-и, вăрманта-и — пур çĕрте те комсомолецсем малта пыраççĕ. Ку çеç те мар, эпир тата — агитаторсем: стена хаçачĕсем, боевой листоксем кăларатпăр, ял ĕçченĕсене спектакльсем, концертсем кăтартатпăр.

Пире ĕçре Илья Григорьевич Григорьев, Елизавета Андреевна Андреева тата ялти ытти коммунистсем ертсе, вĕрентсе пыраççĕ. Вĕсем яланах халăхпа, ялти çамрăксемпе пĕрлеччĕ.

Паллах, ун чухне ĕçлеме ансатах пулман. Çĕнĕ тапхăр, çĕнĕ самана. Вăй-хăват илсе пыракан колхоза ялти пуянсем, вĕсен хÿрешкисем пур меслетпе те чăрмантарса пыма тăрăшатчĕç, Совет çĕршывĕ, Совет влаçĕ çинчен элек хыççăн элек саратчĕç. Кĕрешÿ пĕтменччĕ çав. Çакна эпĕ, хам çамрăк пулин те, парти ретне тасатнă вăхăтра лайăх туйса илтĕм.

...Кивĕ шкул çурчĕ. Унта халăх туллиех. Ман çумра ялти ятлă çын, вĕри чĕреллĕ коммунист Илья Григорьевич Григорьев ларать. Вăл хăй ĕмĕрĕнче хурапа шурра сахал мар курнă, выçăллă-тутăллă ÿссе çын пулнă, пĕтĕм пурнăçне халăхшăн, çĕршывшăн панă. Ун паян тĕрĕслÿ витĕр тухмалла. Кунтах, пĕр кĕтесре, ăна курайман çынсем пăшăлтатса лараççĕ. Аванах илтетĕп:

— Ăна хытă çапас пулать. Партирен кăлармалла, хур тумалла, халăх умĕнче вараламалла.

Çак сăмахсене ăнсăртран пулин те илтни ман чĕреме çĕçĕпе чикнĕнех туйăнса кайрĕ. Çапах та эпĕ ап-

траса ӳкмерӗм: Григорьев коммуниста сӳтсе явнӑ чух чи малтан сӑмах илтӗм.

— Эпир, ялти комсомолецсем, Илья Григорьевича лайӑх пӗлетпӗр. Вӑл ҫӗрне-кунне пӗлмесӗр ӗҫлет, ялшӑн, тӑван колхозшӑн тӑрӑшать. Григорьев парти членӗн ятне яланах ҫӳлте тытать,—терӗм.

Ял халӑхне ман сӑмахсем килӗшрӗҫ, ҫынсем хыттӑн алӑ ҫупса ячӗҫ. Пӑхатӑп та, Илья Григорьевич куҫӗнчен куҫҫуль тумламӗсем юха-юха анаҫҫӗ. Ку вӑл, паллах, савӑнӑҫ куҫҫулӗ пулнӑ ӗнтӗ.

Пирӗн сӑмах тӗрӗс пулчӗ, эпир ҫӗнтертӗмӗр.

Каллех хӗрӳ кунсем пуҫланчӗҫ.

## ЙӐМРАСЕМ, ТИРЕКСЕМ...

Ҫутҫанталӑк илемне такам та юратать, вӑл такама та савӑнтарать, урама тухатӑн та, куҫ умне авалхи йӑмрасем, капӑр тирексем, шурӑ вулӑллӑ йӑрӑс хурӑнсем туха-туха тӑраҫҫӗ. Садсенче ирех кайӑксем юрӑ шӑрантараҫҫӗ. Вӗсен хитре юррисем чун-чӗрене уҫса яраҫҫӗ. Пурӑнас, ӗҫлес кӑмӑл вара татах та ӳсет. Ҫуралнӑ тӑван кӗтесе, пӗтӗм ҫӗршывӑмӑра юратса ыталас килет.

Эпӗ ача чухне хамӑр пахчара сад лартса ӳстерес тесе тем чухлӗ те шухӑшланӑ. Ҫулсеренех, вӑй ҫитнӗ таран, пӳрт ҫумне хурлӑхан, хӑмла ҫырли лартса хӑвараттӑм. Анчах ман ӗҫӗм ялан тенӗ пекех харама каятчӗ: вӗсене сурӑхсем, качакасем ҫие-ҫие яратчӗҫ.

Пӗррехинче эпир, колхозри комсомолецсем, ҫуралнӑ тӑван кӗтес, тӑван ялӑмӑр илемлӗ пултӑр тесе, кашниех ял хушшине вунӑ йывӑҫран кая мар лартса хӑварма сӑмах патӑмӑр. Сӑмаха ҫилпе вӗҫтерсе ямарӑмӑр, ҫирӗп тытрӑмӑр: эпир лартнӑ йывӑҫсем часах тымар ячӗҫ, турат хыҫҫӑн турат хушрӗҫ, ҫулҫӑ кӑларчӗҫ.

Эпир хамӑр ҫурт умне лартса хӑварнӑ йӑмрасем те часах ҫӗкленсе кайрӗҫ. Урама тухсан, вӗсем мана савса пуҫ тайнӑн туйӑнчӗҫ.

«Çын хăй ĕмĕрĕнче пĕр йывăçран кая мар лартса ÿстермелле», тенĕ ваттисем. Аслă калана. Халĕ хам ĕмĕрте лартнă йывăçсем çине пăхатăп та, чун савăнать. Вĕсем мана сиплĕ сывлăш параççĕ, хăйсен улмиçырлипе савăнтараççĕ. Шухăшлатăп вара: ача, çамрăк чухнехи вăхăт ахаль иртмерĕ, усăллă ĕç те турăм.

## СЫВĂ ПУЛ, ТĂВАН ЯЛĂМ...

Эпир пĕтĕм килйышпах колхозра ĕçлетпĕр. Ĕçкунĕшĕн вара тырпул, пахчаçимĕç, утă-улăм çителĕклĕ тиветчĕ. Хамăра кура çипуçа тăхăнмалли те начарах марччĕ.

Комсомол райкомĕ эпĕ çамрăксем хушшинче ĕçлеме юратнине, халăхпа пĕрле утнине асăрхарĕ пулас: мана Шупашкарти хаçат шкулне вĕренме яма шутларĕ. Эпĕ хама мăшăр çунат хушăннăн туйрăм. Урăхла пулма та пултараймасть: çĕнĕ самана çамрăксене анлă çул уçса пачĕ. Вĕрен, тăрăш, кĕреш — пурнăç мĕнле пуласси пĕтĕмпех хăвăнтан килет.

Анне ман валли кĕпе-тумтир, ĕçме-çиме хатĕрлерĕ. Ман савăнăç — пĕтĕм килйыш савăнăçĕ.

Хулана тухса каяс умĕн эпĕ хама ÿстернĕ тăван ялăмпа сывпуллашма шутларăм. Вара тури касран пуçласа аната çитиччен майĕпен утса тухрăм. Куç умне ача чухнехи выляни-кулнисем, шкула çÿренисем, хире тырă вырма кайнисем, çерем çине кĕтÿ янисем тухатуха тăчĕç. Чун хурланса килнĕ пек пулчĕ. Пуçри карттуса хыврăм та аллăмсене çĕклесе:

— Сывă пул, савнă ялăм Аслă Арапуç, сана тăван анне пек юратса ыталатăп, нихăçан та, нихăçан та манмăп! Телейлĕ кунçул сунатăп сана!— терĕм.

Атте мана Канаша çитиччен лашапах ăсатса ячĕ, хăй çул тăрăх ăс вĕрентсе пычĕ, уйрăлнă чух вара:

— Ачам, телейлĕ пул, тус-тантăшусене юрат, хисепле, вăхăта сая ан яр, вĕренме тăрăш, пирĕн пек тĕттĕм çын пулса ан юл, çыру çыр,— терĕ те мана чуптуса илчĕ.

Унччен те, кайран та атте урӑх чуптунине астумастӑп эпӗ.

## ТӐВАН ХУЛАМӐРТА

Манӑн мӗн ачаран ӗмӗтленнӗ ӗмӗтӗм ҫитрӗ-ҫитрех: эпӗ тӑван хуламӑрта — Шупашкарта пурӑнатӑп, хаҫат шкулӗнче вӗренетӗп.

Ҫаҫа хирӗҫ, хӗвел анаспа, эпир, тус-тантӑшсемпе пӗрле, Атӑл хӗррине тухрӑмӑр. Ҫак сарӑлса юхакан аслӑ шыв ҫине пӑхсанах, мана Митта Ваҫлейӗн паллӑ сӑвви аса килчӗ:

Атӑл, Атӑл, ҫӗршывӑн илемӗ,
Хумлӑн-хумлӑн сикет умӑмра:
Ҫамӑн чунӗ пӑхсассӑн киленмӗ,
Ҫам ҫӳҫенмӗ ҫак аслӑ вӑйран...

Питӗ тӗрӗс, питӗ лайӑх каланӑ поэт. Атӑл ҫамрӑк чун-чӗрене тепӗр хут уҫса янӑн туйӑнчӗ. Унта кимӗсем, акӑш пек шурӑ пӑрахутсем ирте-ирте каяҫҫӗ — шыв ҫинче чӑн-чӑн хӗрӳ пурнӑҫ вӗресе тӑрать. Ҫунтан тата, сӑрт ҫинчен, пӗтӗм хуламӑр курӑнать. Авӑ театр, музей, институт, Пичет ҫурчӗ... Ӑҫтан пурне те каласа пӗтерӗн!

— Эх, Шупашкарӑм, тӑван Шупашкар, ытла та илемлӗ вырӑнта ларатӑн ҫав эсӗ. Ҫуллен-кун ҫӗнелсе, вӑй илсе пыратӑн тата — пӑхса тӑранма ҫук вӗт сан ҫине,— тет ман ҫумра тӑракан пӗр кӑтра ҫӳҫлӗ, тӗрленӗ кӗпе тӑхӑннӑ чӑваш ачи. Ҫаврӑнса пӑхатӑп та — Пракка! Манӑн тус-тантӑшӑм Сатур Пракка! Вӑл та Шупашкара хаҫат шкулне вӗренме килнӗ-мӗн. Хамӑр иксӗмӗр те савӑннӑ, ниҫта кайса кӗме пӗлместпӗр...

Хаҫат шкулӗнче литература кружокӗ ӗҫлеме пуҫларӗ. Вӗрен, тӑрӑш, кӗреш, ан ӳркен кӑна. Сан валли пурте пур. Кружок занятийӗсенче хамӑр тантӑшсен, ҫамрӑк сӑвӑҫсен — Порфирий Лукояновӑн, Сергей Прокопьевӑн, Прокопий Сатурӑн — сӑввисене итлетпӗр, тишкерсе тухатпӑр. Литература кружокне паллӑ поэт-

сем, тăван чĕлхе ăстисем Илле Тукташ, Иван Ивник, Уйăп Мишши, Якку Ухсай, Александр Кăлкан, Максим Ястран хăнана пыраççĕ, пире хăйсен сăввисене вуласа савăнтараççĕ.

Шупашкар пире тăван чĕлхемĕре, тăван çырулăха, совет литературине татах та юратма, чун-чĕререн хисеплеме пулăшрĕ.

Шупашкарта чĕрем хĕлхемĕ татах та вăйлăрах ялкăшма пуçларĕ. Çамрăклăх, çĕнĕ пурнăç, çĕнĕ самана сăвă-юрă хывма ыйтать. Эпĕ «Колхоз хĕрĕ» ятлă сăвă çыртăм, ăна литература кружокĕнче хамăн тус-юлташсене, çамрăк поэтсене вуласа патăм.

## ХАЛĂХ ПОЭЧĔ

Урамра ăшă юр çăвать. Пĕтĕм тавра шап-шурă.

Эпĕ хамăн тус-тантăшпа, Максим Ястран поэтпа, Чăваш ялхуçалăх институчĕ еннелле утатăп. Пире хирĕç пĕр çӳллĕ, сарлака хулпуççиллĕ, вăрăм сухаллă çын килет. Ăна пĕр ватăрах хĕрарăм çавăтнă, çул кăтартса пырать. Вĕсене курсан, Максим Ястран мана хулпуççинчен тĕртсе илчĕ те хуллен çапла каларĕ:

— Ку вăл Николай Иванович Шелепи, ун çумĕнчи — Анюта аппа, ун мăшăрĕ,— терĕ. Вара лешсем илтмелле:—Сывлăх сунатпăр сире, Николай Иванович, Анюта аппа,— терĕ.

Шелепи чарăнса тăчĕ.

— Ку Ястран пулас-ха, ун сасси пек туйăнчĕ,— терĕ вăл.— Юлташу тата кам-ха?

Эпир çавăнтах ăна алă патăмăр, паллаштăмăр. Ĕненес те килмест: ман умра хам ачаранах юратнă, хисепленĕ поэтăмăр Шелепи тăрать! Те савăннипе, те вăтаннипе, пачах çухалса кайрăм, пĕр сăмах та чĕнместĕп. Çăвара шыв сыпнă пек тăратăп. Ястран маншăн та, хăйшĕн те калаçать. Николай Иванович Пичет çуртне, «Пионер сасси» хаçат редакциневаскать иккен.

— Паян каçхине сире, ачамсем, хам пата пыма чĕ-

нетĕп. Вăтанса ан тăрăр, хăюллăрах пулăр. Çĕнĕ сăвăсем вуласа парас кăмăлăм пур,— терĕ те вăл пиртен уйрăлса кайрĕ. Эпĕ, халиччен Шелепие курманскер, ун çине вăл мĕн куçран çухаличченех пăхса тăтăм.

Каç пулсан, эпир Николай Иванович хваттерне кайрăмăр. Шелепи хăй те, Анюта аппа та питĕ кăмăллă, калаçма юратакан çынсем пулчĕç. Николай Иванович хĕрсе кайса сăвă вулать, кашни сăвă хыççăн пăртак чарăнса тăрать, пирĕн еннелле пуçне тайса илет. Эпĕ шухăша кайса лартăм. Ман умра çак куççăр çын чăн-чăн улăп пек курăнса тăрать, ун чĕринче нихçан сӳнми хăват тапса тăнăн туйăнать.

Вăхăт чылая кайрĕ. Николай Иванович аллинчи патаккипе урайне пĕр-икĕ хутчен шаккаса илчĕ те:

— Сире, ачамсем, юлашкинчен «Çул курки» сăвва вуласа парам,— терĕ.

...Иртет иккен ĕмĕр, пĕтет кунçул,
Часах курми пулĕç куçăмсем...
Сирĕн умран вара эп çухалăп,
Сывă пулăр ĕнтĕ, тусăмсем...

Ку сăвă пире пурне те шухăша ячĕ, эпир чылайччен чĕнмесĕр лартăмăр. Унтан калаçу каллех шыв пек юхма пуçларĕ. Николай Иванович хаçат шкулĕ çинчен ыйта-ыйта пĕлет.

— Чăваш поэчĕсен сăввисене вулатăр-и? Мĕн килĕшет, мĕн килĕшмест — калăр-ха,— тет. Эпĕ Константин Иванов, Çеçпĕл Мишши, Петĕр Хусанкай, Митта Ваçлейĕ, Якку Ухсай, Нестер Янкас, Илле Тумилин тата ытти поэтсен сăввисене юратса вулани çинчен каласа патăм.

— Манăн сăвăсем пирки мĕн шутлатăр эсир?—ыйтрĕ Шелепи.

— Сирĕн сăввăрсем Тăван çĕршывăмăра юратма, ĕçлĕ халăха хисеплеме, совет çамрăкĕсене яланах паттăр, хăюллă пулма вĕрентеççĕ, вĕсем халăх сăвви-юррине çывăх тăраççĕ,— терĕм эпĕ, унтан ун чылай сăввине пăхмасăр калама пĕлни çинчен хушса хутăм.

— Ӳркенмесен, пӗрне вуласа параймӑр-ши?— терӗ Шелепи.

Эпӗ поэтӑн «Ленин» сӑввине вуласа патӑм:

Ҫамӑн варӗнче
Ӳтленсе пулса,
Ҫам ӑкри сӗтне
Ҫисе ӳсрӗн-ши?
Ҫам чӗрҫи ҫинче
Выляса-кулса,
Хӗвел шевли пек
Йӑлт-йӑлт сикрӗн-ши?..

Николай Иванович ура ҫине тӑчӗ те мана шыраса тупрӗ, тӑван атте пек, ҫурӑмран лӑпкаса илчӗ.

— Маттур, лайӑх вулатӑн,— терӗ вӑл.— Савӑнтартӑн, ача.

Ҫак касхине вӑл мана хӑйӗн сӑнӳкерчӗкне парнелерӗ. Ун хыҫне «Василий Давыдова — ӗмӗр-ӗмӗр асӑнса пурӑнма» тесе ҫырса хучӗ.

Шелепи ҫамрӑк писательсене, хамӑр тӑван чӗлхемӗршӗн ҫунса тӑракан яш-кӗрӗме питӗ хисеплетчӗ, юрататчӗ. Тен, ҫавна пула-и, пирӗн туслӑх та куллен ҫирӗпленсе пычӗ. Ун килӗнче яланах ҫамрӑк ҫыравҫӑсене курма пулатчӗ. Вӗсен сӑвви-юрри янраса тӑратчӗ.

Пурӑнан пурнӑҫра тем те пулать. Пӗррехинче, Шелепи патне кайсан, эпӗ чӑтма ҫук пысӑк намӑс куртӑм.

...Пӗр ҫурхи илемлӗ кун ҫапла, Николай Иванович патне кӗрсен, ӑна хамӑн «Ҫӳрен ут» ятлӑ ҫӗнӗ сӑвва вуласа патӑм. Поэт сӑвӑ пирки хӑйӗн шухӑш-кӑмӑлне калама ҫеҫ пуҫланӑччӗ, Анюта аппа сӗтел ҫине пӗр пӗчӗк ҫатма пырса лартрӗ.

— Ку пулла сирӗн валли ӑшаларӑм. Акӑ ҫӑкӑр, ҫиййӗр. Эпӗ пасара кайса килетӗп,— терӗ вӑл, хӑй ҫавӑнтах тухса кайрӗ.

Манӑн ун чух хырӑм выҫнӑччӗ, ҫиес килетчӗ.

— Ваҫлей, ҫиме пуҫла,— терӗ Николай Иванович.

— Манӑн хырӑм выҫсах кайман,— тетӗп эпӗ.

Хам вара нихçан пулă курман пек васкаса çиме пуçларăм.

— Ан вăтанса лар, çи, ачам,— тет каллех Николай Иванович.

— Тавтапуç, ху çи-ха, Николай Иванович,— тетĕп эпĕ.

Хам çаплах çатмана тасататăп. Пуллăн хӳри çеç тăрса юлчĕ. Николай Иванович мана çаплах кӳреннĕ пек пулчĕ.

— Çăкăр-тăвара хисеплемерĕн, пĕрре те çисе пăхмарăн,— тет вăл мана.

Эпĕ çав тери вăтанса кайрăм, нимĕн те чĕнместĕп.

Вара Николай Иванович:

— Эппин, сивĕнсе кайиччен хам тутанса пăхам-ха,— терĕ те пулă еннелле аллине тăсрĕ.

Анчах çатма ĕнтĕ тап-тасаччĕ, унта пулă хӳри те юлманччĕ!

Николай Иванович пĕр сăмах та чĕнмерĕ.

Умра шăтăк пулсан, вăтаннипе çавăнта анса каймалла. Ним тума пĕлместĕп, каçару ыйтма та хăю çитерейместĕп. Анюта аппа та килсе кĕчĕ, сĕтел çинчи çатмана кăмака умне кайса лартрĕ.

Николай Иванович, ним пулман пек, каллех ăшшăн калаçма пуçларĕ. Ман çаплах ăш çунать. Киле те хĕрелсех, намăслансах тухса кайрăм.

Çакăн хыççăн темиçе çул хушши Николай Ивановичран каçару ыйтас тесе çӳрерĕм, анчах шухăша нимепле те уçса калаймастăп. Пĕррехинче ун патне ятарласа кайрăм. Николай Иванович чирлесе ӳкнĕ, аран-аран калаçать. Çапах та:

— Ку килекенни кам пулчĕ-ха?— тесе ыйтать хăй.

— Вăл Василий Давыдов пулчĕ-ха,— тет Анюта аппа.

Эпĕ Николай Иванович çумне пырса лартăм. Анюта аппа питĕ хурлăхлă йĕме пуçларĕ.

— Микула, эсĕ вилсен, манăн мĕнле пурăнмалла-ха вара?— тет вăл.

— Ан йĕр, чĕрӳне ан çунтар, совет самани сана ни-

хăçан та кӳрентермĕ,— терĕ ăна Николай Иванович.

Чылайччен калаçса ларнă хыççăн, хама йывăр пулчĕ пулин те, эпĕ Николай Ивановичран çатмари пулăшăн каçару ыйтрăм.

— Пĕрре те астумастăп. Çиес килнĕ — çинĕ, аван тунă. Уншăн пăшăрханса ан çӳре. Вăй пĕтсе çитнине сисе пуçларăм. Пурнăçăн хăйĕн саккунĕ пур. Пĕлме çук, тен... уйрăлма та тивĕ. Аван пурăн, ĕçле, вăй-хална халăха пар. Сан ырă ĕçне çĕршыв нихçан та манмĕ,— терĕ те Шелепи урăх нимĕн те чĕнмерĕ.

— Çывăрса кайрĕ пулас,— терĕ Анюта аппа. Эпĕ хамăн юратнă поэтăм çине чылайччен пăхса, пуçа тайса тăтăм. Мана çак вăхăтра Шелепи пĕррехинче пире, Ястранпа иксĕмĕре, хăйĕн «Çул курки» сăввине вуласа пани аса килчĕ. Ку вăл пирĕн юлашки тĕлпулу пулчĕ.

## ШУПАШКАР ÇĂКИСЕМ

Пире, хаçат шкулĕнче вĕренекенсене, Чăваш педагогика институтĕнчи çамрăксем хăнана чĕнчĕç.

— Паян пирĕн литература каçĕ пулать. Программăра совет поэчĕсен сăввисем,— терĕç вĕсем.

Эпир хамăра хисеплесе хăнана чĕннĕшĕн питех те савăнтăмăр.

Институт кĕрлесе кăна тăрать. Купăс сасси илтĕнет. Студентсем пире ырă сунса кĕтсе илчĕç. Пăхатăп та — пĕр кĕтесре хамăр ял хĕрĕ Вера Леонтьева тăра парать. Вăл пирĕн паталла хăвăрт утса пычĕ, мана алă пачĕ. Çав вăхăтра Вера çумне икĕ чипер каччă пырса тăчĕç.

— Васлей, паллаш: кусем пирĕн студентсем — Александр Алкапа Кăтра Мишша. Иккĕшĕ те çыракан çынсем,— терĕ мана Вера.

Эпĕ савăнса кайрăм. Хĕрӳ калаçу пуçланчĕ. Алка хăй сăввисен кĕнеки пичетленсе тухмалли çинчен пĕлтерчĕ, Кăтра Мишша хаçат шкулĕн пурнăçĕ çинчен ыйта-ыйта пĕлчĕ. Çапла, ман çĕнĕ юлташсем тупăн-

чĕç. Ун чухне эпĕ хама тата тепĕр мăшăр çунат хушăннăн туйрăм.

Шăнкăрав сасси илтĕнсе кайрĕ. Литература касĕ пуçланчĕ. Вырăсла та, чăвашла та сăвă хыççăн сăвă янăрать. Акă пирĕн умра — Александр Алка. Вăл хăйĕн çĕнĕ «Çу, çумăр, çу!» ятлă сăввине вуласа парать. Алă çупни кĕрлесе каять. Сцена çинче — Николай Дедушкин студент.

— Ку — вĕренӳ отличникĕ. Пултаруллă çамрăк критик. Хăй Тутар республикинчен, Элшел ачи,—теççĕ мана çумра тăракан юлташсем. Дедушкин хуллен сăвă вулама пуçларĕ. Вара вуланăçемĕн хĕрсе пычĕ.

Литература касĕ вĕçленсен, эпĕ чăтаймарăм, сăвăсене ăста вулакан студент патне пытăм, ăна сывлăх сунса, алă патăм.

— Сирĕнпе тĕл пулнăшăн питĕ савăнтăм. Эсир мана паян йăлтах тĕлĕнтерсе ятăр. Сăвăсене сирĕн пек вулама вĕренесчĕ,— терĕм ăна.

Николай кулса илчĕ.

— Тĕрĕс ĕнтĕ: начар вуласан, темле лайăх сăвва та пăсма пулать,— терĕ вăл.

Юлташла калаçу вăраха кайрĕ. Эпир сăвă мĕнле пулмалли çинчен, ун илемĕ, шухăшĕ, тĕллевĕ пирки калаçрăмăр.

Çывăхрах баян сасси янăраса кайрĕ. Студентсем мăшăрăн-мăшăрăн ташлама пуçларĕç.

Эпĕ те, пурнăçра чи малтанхи хут, пĕр хĕрача патне пырса пуç тайрăм, ăна ташлама чĕнтĕм...

## ЭПĔ ÇАПЛА ШУТЛАТĂП...

Хаçат шкулĕнче пире тăван чĕлхепе Марфа Николаевна Николаева вĕрентетчĕ. Ачасем ăна питĕ час хăнăхса çитрĕç, эпир вăл чăвашла çав тери илемлĕ калаçнинчен тĕлĕнеттĕмĕр.

— Пире Иван Яковлевич Яковлев вĕрентнĕ. Вăл хамăрăн тăван чĕлхемĕре яланах хисеплеме, юратма хистетчĕ,— тесе каласа паратчĕ вăл.

Пĕррехинче çапла, ун урокĕнче, хамăр Тăван çĕршыв çинчен хĕрӳллĕ калаçу пуçланчĕ: пирĕн çитес кунсенче «Мĕн вăл, пирĕн Тăван çĕршывăмăр?» темăпа çыру урокĕ пулмаллаччĕ. Студентсем хамăр Тăван çĕршыв çинчен нумай-нумай ăшă сăмах каларĕç, çыру урокĕн темине уçса пачĕç. Черет ман пата та çитрĕ. Эпĕ те хам мĕн ăнланнине, пĕлнине кĕскен каласа пама тăрăшрăм.

Çак калаçу вара мана çĕрĕпе куç хуптармарĕ, тарăн шухăша ячĕ. Чăнах та, мĕн-ха вăл, Тăван çĕршывăмăр?

Эпĕ çапла шутлатăп: Тăван çĕршывăмăр вăл — пире çуратнă атте-анне, мана ача чухне сиктернĕ сăпка, юратнă аппасемпе пиччесем, ырă кăмăллă, чипер Пăлька йăмăкăм; Тăван çĕршывăмăр вăл — мана ӳстернĕ кил-çурт, ĕмĕрне асран кайми Аслă Арапуç, хăй шывĕ çинче сиктернĕ çутă Атăл, акатуйра мала тухнă çӳрен лаша, хамăр умри ем-ешĕл çăкасемпе хурăнсем, хам лартнă йăмрасемпе тирексем; Тăван çĕршывăмăр вăл— атте çава туптанă сунтал, хамăр çырлана çӳренĕ кунтăк, савăт-сапа, хĕрлĕ тăмран тунă чĕвĕлти шăхличĕ, пӳрт умне килсе ларса юрă шăрантаракан шăнкăрчă; Тăван çĕршывăмăр вăл — атте-анне панă чĕлхемĕр, хамăр юратса юрлакан юррăмăр.

Атте пире çапла калатчĕ: «Тăван чĕлхемĕре, тăван юррăмăра юратакан çын Тăван çĕршыва та пĕтĕм чунчĕререн юратать»,— тетчĕ. Тăван çĕршывăмăр вăл — укăлча умĕнчен пуçланакан уй-хирĕмĕр, улăх çаранăмăр, тутлă шăршă саракан пыллă Çăкасар, чечеке ларнă хуратул çинче сĕрлекен вĕлле хурчĕсем, эпир ача чухне выляса ӳснĕ теттесем, хĕлле ярăннă тăвайкки, çуркунне пĕвенĕ шыв-шурсем, çап-çутă йăлтăртатса выртакан кӳлĕсем...

Атте çапла калатчĕ: «Тăван сутçанталăка юратакан çын Тăван çĕршыва та пĕтĕм чун-чĕререн савать»,— тетчĕ.

Тăван çĕршывăмăр вăл — Раççей, пирĕн çывăх тусăмăрсем — вырăссем, казахсемпе грузинсем, тутарсемпе

пушкăртсем, марисемпе удмуртсем... Тăван çĕршывăмăр вăл — Мускав, Кремль, Советлă Социализмлă аслă Çĕршыв!

Атте çапла калатчĕ: «Тăван çĕршыва юратакан çын ĕмĕр-ĕмĕрех пархатар курать»,— тетчĕ.

Питех те тĕрĕс каланă атте.





# КАЛАВСЕМ
# ÇĂЛТĂРЛĂ ÇĔЛĔК

Пирĕн асатте граждан вăрçи салтакĕ пулнă. Вăл Колчак çарне хирĕç паттăррăн çапăçнă.

Эпир унăн хĕрлĕ çăлтăрлă çĕлĕкне халĕ те упраса пурăнатпăр. Кашни çулах, Октябрь уявĕ çитсен, эпĕ ăна демонстрацие тăхăнса тухатăп. Иртнĕ уявра уншăн вара Петĕрпе хытах ятлаçмалла пулчĕ.

— Асаттен çăлтăрлă çĕлĕкне кăçал манăн тăхăнмалла. Эпĕ — октябренок,— терĕ мана Петĕр.

Эпĕ унпа килĕшмерĕм.

— Çук, асатте çĕлĕкне никама та памастăп: эпĕ ăна мĕн пĕчĕкренех упраса усранă. Вăл манăн,— терĕм Петĕре.

Эпир тавлашнине атте пăхса тăнă-мĕн. Вăл пирĕн пата пычĕ те:

— Мĕншĕн ятлаçатăр?— тесе ыйтрĕ.

— Мана Сантăр асаттен çĕлĕкне памасть,— терĕ те Петĕр йĕрсе ячĕ.

Атте ăна:

— Ан йăйкăш! Йĕрсе эсĕ ху вăйсăррине çеç кăтартатăн! — терĕ. Унтан вăл ман çине ăшшăн пăхса илчĕ те:

— Сантăр, Петĕр кăмăлне ан хуç ĕнтĕ. Вăл та пĕрре Октябрь уявне асла çун çăлтăрлă çĕлĕкĕпе тухса куртăр,— терĕ.

Эпĕ атте сăмахне итлерĕм, çĕлĕке Петĕре патăм. Уяв пуçлансан, Петĕр çине пăхрăм та тĕлĕнсех кайрăм: вăл чи малта, шкул колонни пуçĕнче, хĕрлĕ ялав йăтса пырать. Хăй вара питĕ сăпайлă, чăн-чăн салтак пек малалла утать. Эпĕ хам ăшăмра: «Эх, Петĕре халь асатте курас пулсан, мĕнле савăннă пулĕччĕ-ши»,— тесе шухăшларăм.

## ПИЛĔК ПУСЛĂХ УКÇА

Хĕл пуçланчĕ. Çанталăк хытах сивĕтрĕ. Пирĕн ял айккипе юхса выртакан Пăла шывĕ те шăнса ларчĕ. Çырмара çутă, яп-яка пăр сарăлса выртать. Ун çинче кунĕн-çĕрĕн ачасем хĕвĕшеççĕ.

— Акă, пăхса тăрăр: эпĕ пилĕк пуслăх укçана пăр çине ывăтса яратăп та кĕрсе илетĕп,— терĕ Ваççа. Вăл хăй çавăнтах пуçне çӳлелле çĕклесе илчĕ.

— Ан мухтан, санран унта кĕресси пулать-и?—терĕ ăна Ванюк. Тавлашу пуçланса кайрĕ. Ваççа хăйĕн укçине çырма варрине ывăтса та ячĕ. Вăл, ăна илме тесе, пăр çине кĕме çеç пуçланăччĕ, анчах, пĕр-икĕ утăм ярса пуссанах, çырма хĕррине каялла тухрĕ.

— Пăр çурăлса кайрĕ,— терĕ вăл.

Çырма варринчи пăр çинче укçа ылтăн евĕр çуталса выртать. Ваççапа Ванюк пĕр-пĕринчен кула-кула килĕсене утрĕç. Ял хĕрринче ларакан шкул енчен шăнкăрав сасси илтĕнсе кайрĕ. Уроксем пĕтрĕç пулмалла: сумкăсене йăтнă ачасем килĕсене васкаса чупаççĕ. Çырма хĕрри пĕрре те пушă тăмасть вара. Петĕрпе Хĕветĕр шкултан тӳрех кунта çĕмĕрттерсе анчĕç.

— Петĕр, пăх-ха: пăр çинче мĕн выртать унта?!— тесе кăшкăрса ячĕ Хĕветĕр.

— Ку ылтăн чăмăркки пулĕ, ытла та илемлĕн йăлтăртатать!— терĕ Петĕр.

Хĕветĕр хĕпĕртесе ӳкрĕ, каллĕ-маллĕ чупкаласа çӳреме пуçларĕ.

— Çук, чăтаймастăп, кĕретĕп, илсе тухатăп!— терĕ Петĕр.

Вăл, чăнах та, аллине пĕр патак илчĕ те пăр çине кĕрсе те кайрĕ.

— Асту, ан васка, пăр çурăлса кайма пултарать,— асăрхаттарчĕ ăна Хĕветĕр. Петĕр кулса илчĕ те:

— Эсĕ маншăн ан хăра,— тесе хучĕ. Шаларах кĕрсен, аллинчи патакпа вăл пăра шакка-шакка пăхрĕ, анчах, сăмах çине тенĕ пекех, пăр шатăртатса çурăлса та кайрĕ. Петĕр çӳçенсе, чĕтресе илчĕ. Вăл çырма хĕррине каялла тухма шутларĕ. Инкек çине синкек тенĕ пек, шăпах çав вăхăтра ун ури айĕнчи пăр лаштăрах ишĕлсе анчĕ. Петĕр ним калама та ĕлкĕреймерĕ, шыва анса та кайрĕ. Хĕветĕр хăранипе питĕ вăйлă кăшкăрса ячĕ:

— Петĕр пĕтрĕ! Шыва анса кайрĕ!— терĕ вăл. Хăй йĕри-тавра çаврăна-çаврăна пăхрĕ, анчах çывăхра пĕр çын та курăнмарĕ.

Хĕветĕр кăшкăрнине ĕне ферминче ĕçлекен комсомолецсем илтнĕ-мĕн. Вĕсем çавăнтах Пăла хĕррине чупса анчĕç. Киркка пиччесен Ястукĕ Петĕр патнелле кĕрсе кайрĕ. Нумай та вăхăт иртмерĕ, ăна шывран илсе те тухрĕ. Петĕрĕн вăйĕ йăлтах пĕтсе çитнĕ, вăл сывлайми те пулнă иккен. Ястук Петĕрĕн шăнса кайнă аллисене тытрĕ те пĕрре çӳлелле, тепре аялалла вылятма пуçларĕ.

— Хамăр куç умĕнчех ачана вĕлерес марччĕ,— терĕ вăл.

Унччен те пулмарĕ, Петĕр хашш! сывласа ячĕ.

— Тавтапуç, куçне те уçрĕ,—терĕ Ястук çав тери савăнса.

Пирĕн Петĕре вилĕмрен çăлнă хыпар часах таврана саланчĕ. Паттăр Ястук пирки Мускавра тухакан «Комсомольская правда» хаçатра та çырса кăларчĕç. Ку çеç те мар, нумаях пулмасть пирĕн клубра çамрăксен пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта Шупашкартан килнĕ çын пĕтĕм халăх умĕнче Ястука «Шыва путакансене çăлнăшăн» медаль пачĕ.

Ун чухне клубра Петĕр те пулчĕ. Вăл аттерен:

— Ястука мĕншĕн медаль пачĕç?— тесе ыйтрĕ.

— Сана çăлнăшăн,— терĕ ăна атте. Унтан çапла хушса хучĕ:— Вăл пулман пулсан, эсĕ, тен, шывран тухайман та пулăттăн. Шухăшламасăр тунă ĕç авă мĕн патне илсе çитерме пултарать!

## КУ МĔНЕ ПĔЛТЕРЕТ?

Урамра лапка-лапка юр çăвать. Пур çĕрте те ача-пăча сасси илтĕнсе тăрать.

Петĕр паян шкултан кая юлса таврăнчĕ. Вăл хăй темшĕн çав тери салхуллă.

— Мĕн пулнă сана, Петĕр? Чирлемерĕн пулĕ-çке?— тесе ыйтрĕ унран анне.

Петĕр пĕр сăмах та чĕнмерĕ. Вăл хăй сисмерĕ пулас: ун аллинчи сумка урайне персе анчĕ.

— Петĕр, мĕншĕн эсĕ нимĕн те чĕнместĕн?— каллех ыйтрĕ анне.

Петĕр пĕр-икĕ утăм малалла ярса пусрĕ те йĕрсе ячĕ.

Эпир пурте васкаса ун патне пытăмăр.

— Ак тамаша! Мĕншĕн йĕретĕн?— тетпĕр ăна хамăр.

— Пуç ыратать,— тесе хучĕ Петĕр.

— Йĕнипе пуç ыратма чарăнмасть. Ан йĕр...

Эпир çапла калани Петĕре пăртак пулăшрĕ пулас: вăл йĕме чарăнчĕ.

— Ачам, апат çиес пулать,— терĕ ăна анне.

— Çук, ман пĕрре те çиес килмест,— пуçне сулласа илчĕ Петĕр.

Вăл сумкинчен кĕнекесем илчĕ те тӳрех сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ, уроксем хатĕрлеме тытăнчĕ.

— Пăртак уçăлмаллаччĕ. Пуçу ыратни иртсе кайтăр пулатчĕ,— тесе ӳкĕтлерĕ ăна анне.

Эпир Петĕртен тĕлĕнсех кайрăмăр: вăл шкултан килнĕ-килменех урама тухса чупма юрататчĕ, уроксене

хатӗрленме питех васкаса каймастчӗ. Халӗ вара йӑлтах урӑхла, пӗтӗмпех улшӑннӑ. Урама тухасси ҫинчен аса та илмест.

— Петӗр, эпӗ сан валли апат хатӗрлерӗм, ҫиме лар,— терӗ каллех ӑна анне.

Петӗр анне сӑмахне итлерӗ: васкаса апат ҫикелерӗ те каллех сӗтел хушшине кӗрсе ларчӗ.

Петӗр уроксене тӑрӑшса тунине курса, анне савӑнчӗ пулас. Вӑл ун ҫине темиҫе хутчен те ӑшшӑн пӑхапӑха илчӗ. Унтан хӑй те Петӗр ҫумне пырса ларчӗ те унӑн ӗҫне сӑнарӗ.

Петӗр вара пуҫне те ҫӗклемест, никам ҫине те пӑхмасть.

Анне ӑна хуллен ҫеҫ:

— Людмила Михайловна паян санран уроксем ыйтрӗ-и?— терӗ.

Петӗр пуҫне сулкаласа илчӗ те:

— Ҫук, ыйтмарӗ,— тесе хучӗ.

Анне Петӗр тетрадьне уҫса пӑхрӗ те кӗтмен ҫӗртен унта хӗрлӗ чернилпа ҫырнӑ «2» паллӑ пуррине курах кайрӗ.

— Ку мӗне пӗлтерет тата?—тӗлӗнсе ыйтрӗ вӑл Петӗртен. Пирӗн Петӗр халиччен нихҫан та «2» илсе курман, вӑл яланах «5» илетчӗ.

Петӗр анне ҫине пӑхма та вӑтанчӗ. Питне аллисемпе хупӑрласа хучӗ те:

— Урӑх ун пек тумастӑп: уроксене лайӑх хатӗрленмесӗр шкула каймастӑп,— терӗ.

Урамра ҫаплах лапка-лапка юр ҫӑвать. Пӳртре Петӗр тӑрӑшса задача шутлать.

## ПИРӖН УЛМУҪҪИСЕМ

Эпир иртнӗ кӗркунне хамӑр пахчана улма йывӑҫҫисем лартса хӑвартӑмӑр. Атте вӗсене пире уйӑрса пачӗ.

— Эсир, ачамсем, вӗсене мӗн ӳссе ҫитӗничченех пӑхса усрӑр ӗнтӗ,— терӗ.

Эпир атте хамăра çавăн пек ĕç шанса панăшăн çав тери савăнтăмăр.

Кăçал хĕл ир килчĕ. Хура çĕр шап-шур юрпа витĕнчĕ.

Эпир, Петĕрпе иксĕмĕр, ял хĕрринчи тăвайккинчен ярăнса таврăнтăмăр. Пӳрте кĕнĕ-кĕменех пире атте:

— Сире, ачамсем, мĕн пулнă, иксĕрĕн те питĕрсем хĕп-хĕрлĕ хĕрелсе кайнă,— терĕ.

Эпир питсене хыпашласа пăхрăмăр.

— Сивĕ. Алăсем те, урасем те шăнчĕç. Пите те, сăмсана та сивĕ чĕпĕтсе илчĕ,— терĕмĕр хамăр.

— Çапла çав, ачамсем, сивĕ — хаяр япала. Вăл сире çеç мар, улма йывăççисене те тивме пултарать,— терĕ атте.

Эпир хăраса ӳкрĕмĕр. Мĕн тумалла ĕнтĕ? Вĕсем пурте çамрăк, йăлтах шăнса пĕтме пултараççĕ.

— Хăрасах ӳкме кирлĕ мар. Айтăр, кĕреçесем илер те сад пахчине тухар,— терĕ атте. Эпир пурте сад пахчине тухрăмăр, улма йывăççисен айккисене юр купаласа таптарăмăр.

— Питĕ лайăх пулчĕ. Халĕ улма йывăççисем те сивĕрен хăрамаççĕ ĕнтĕ,— терĕ пире атте.

## «КУ ВĂЛ — ЭПĔ!»

Вăхăт хăвăрт иртет. Петĕр шкула кая пуçлани те çур çул тултарчĕ ĕнтĕ.

Пĕр кунхине Петĕр шкултан таврăнчĕ те аннене çапла каларĕ:

— Паян шкулта пуху пулать. Унта сирĕн аттепе иксĕрĕн те каймалла,— терĕ.

— Юрать. Унта эсир мĕнле вĕренни çинчен каласа параççĕ пулĕ-ха,— терĕ ăна анне.

Каç пулсан, аттепе анне шкула тухса уттарчĕç. Хăйсем вара пире ĕç хушса хăварчĕç.

— Эпир шкула каятпăр. Эсир çакна, Витя Малеев çинчен çырнă кĕнекене, вулама пуçлăр,— терĕç.

— Питĕ аван. Эпир ăна тахçанах тупса вуласшăнччĕ,— терĕмĕр хамăр.

Витя Малеев çинчен çырнă кĕнеке пире çав тери кăмăла кайрĕ. Вуланăçемĕн вулас киле пуçларĕ.

— Сантăр, хамăр та шкула çитсе курар мар-и? Аттепе анне мĕн тăваççĕ-ши унта?— терĕ мана Петĕр.

Эпĕ Петĕр шухăшне хирĕçлемерĕм, шкула кайма килĕшрĕм.

...Шкулта çынсем туллиех. Пĕрисем учительсемпе калаçса тăраççĕ, теприсем хĕрлĕ хăмач сатин çинчи сăнÿкерчĕксене пăхаççĕ.

— Ав, аттепе анне те унта,— терĕ мана Петĕр.

Эпĕ пăхрăм та аттепе аннене пире вĕрентекен учительница Мария Максимовна тем ăнлантарса панине курах кайрăм.

Эпир, вĕсем пире ан курччăр тесе, коридор вĕçĕнчи пусма айне кайса пытантăмăр. Хамăр пĕр шавламасăр аттепе анне çине пăхса тăратпăр.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, шăнкăрав сасси янăраса кайрĕ. Шкул коридорĕнчи çынсем пурте классене кĕчĕç.

Эпир, Петĕрпе иксĕмĕр, çавăнтах аттепе анне тăнă вырăна пытăмăр. Стена çумĕнчи хĕрлĕ хăмач сатин çине кĕмĕл саспаллисемпе «Хамăр шкул отличникĕсем» тесе çырса хунă. Эпĕ лайăххрах пăхрăм та тĕлĕнсех кайрăм: унта пирĕн Петĕрĕн сăнĕ тăра парать. Ăна вара чăн варрине, хисеплĕ вырăна лартнă. Ун сăнĕ айне «Пĕрремĕш класра вĕренекен Петĕр Ятманов» тесе çырса хунă.

— Куратăн-и?! Ку кам?—тесе ыйтрăм эпĕ Петĕртен. Петĕр ман çине савăнăçлăн пăхса илчĕ те:

— Ку вăл — эпĕ!— терĕ.

## КАЙĂК ТУСĔСЕМ

Çанталăк çав тери сивĕтсе кайрĕ.

— Пире сивĕ аптăратас çук, эпир ăшă пÿртре,—

терĕ мана Петĕр.— Эпĕ хамăр лупасайĕнче пурăнакан кăвакарчăнсене хĕрхенетĕп. Вĕсене кам пулăшĕ, кам ăшăтĕ?..

Петĕр çапла калани мана та шухăша ячĕ.

— Çанталăк сивви пĕрре. Вĕсен тата çимелли шыраса тупас пулать,— терĕм эпĕ.

Эпир çапла калаçса ларнине атте итлесе тăнă-мĕн. Вăл пирĕн еннелле çаврăнса пăхрĕ те хăй Шупашкара колхозниксен канашлăвне кайсан мĕн курни çинчен каласа пачĕ.

— Эпир Çеçпĕл урамĕпе утса пыратпăр,—терĕ вăл.— Кĕтмен çĕртен курах кайрăмăр: пĕр пысăк çӳллĕ çурт çумĕнче вату, шур сухаллă çын тăрать. Ăна хăйне кăвакарчăнсем сăрса илнĕ. Хулпуççийĕсем çинче те, пуçĕ тăрринче те, пур çĕрте те кăвакарчăнсем! Çак вату çын вĕсене апат çитерет. Ун çине урампа иртсе пыракан çынсем чарăнсах пăхса тăраççĕ. Қайран эпир çак çын кайăксен тусĕ иккенне пĕлтĕмĕр...

Атте çапла каласа панине эпир каçса кайсах итлесе лартăмăр. Хамăр вара çавăнтах шухăша кайрăмăр.

— Эпир килти кăвакарчăнсене мĕнпе пулăшма пултаратпăр?— терĕ Петĕр.

— Шухăшласа пăхăр. Сирĕн те яланах кайăксен тусĕ пулмалла, вĕсемшĕн тăрăшмалла,— терĕ пире атте.

Эпир, Петĕрпе иксĕмĕр, кайăксене çитермелли вырăн тăвас терĕмĕр. Атте пирĕн шухăша мухтарĕ. Вăл пире çӳхе хăмасем, вĕтĕ пăтасем тупса пачĕ.

Эпир тăпăл-тăпăл кăна ещĕк пек япала турăмăр. Ун çине тулă пĕрчисем, çăкăр татăкĕсем хутăмăр та ăна чӳрече умне кăларса çакрăмăр.

Кăвакарчăнсене хамăр:

— Қуль-куль-куль! Қуль-куль-куль!— тесе йыхăрма пуçларăмăр. Малтанхи кун эпир чĕннĕ вырăна пĕр кăвакарчăн та пымарĕ.

— Вĕсем çынсене вĕренмен, çавăнпа хăраççĕ ĕнтĕ,— терĕ мана Петĕр.

Эпĕ вăрăммăн сывласа илтĕм те:

— Ещĕк туса тертленни те харама кайрĕ,— терĕм.

— Пĕрре те ан кулянăр. Вĕсем часах сире хăнăхаççĕ. Акă пăртак аяккалла кайса тăрăр-ха. Эсир çук чухне кăвакарчăнсем, тен, унта пырса та ларĕç,— терĕ атте.

Эпир пӳрте кĕтĕмĕр. Хамăр вара чӳрече витĕр пăхрăмăр та тĕлĕнсех кайрăмăр: хайхи ещĕк çинче кăвакарчăн туллиех! Вĕсем эпир хурса панă апата пĕр-пĕринчен васкаса çиеççĕ.

Петĕр чăтаймарĕ, картишне чупса тухрĕ. Кăвакарчăнсем, ăна курсан, капăрах вĕçсе кайрĕç.

Тепĕр кунне эпир çăкăр татăкĕсем илтĕмĕр те тула тухрăмăр, кăвакарчăнсене йыхăрма тытăнтăмăр.

Кăвакарчăнсем, пирĕн сасса илтсенех, йыхăрнă вырăна вĕçе-вĕçе пычĕç, анчах ещĕк çине пĕри те анса лармарĕ. Эпир пӳрт айккинелле кайрăмăр та вĕсем мĕн тунине сăнама пуçларăмăр. Кăвакарчăнсем хамăр хурса панă апата каллех каçса кайса çиме тытăнчĕç.

Пурăна киле вĕсем пире йăлтах хăнăхса çитрĕç.

Эпир куль-куль! тесенех, пирĕн пата вĕçсе пыра пуçларĕç, алăсем çине те, пуçсем тăррине те ларакан пулчĕç. Пĕррехинче атте те эпир кăвакарчăнсене апат çитернине пăхса тăчĕ. Вăл пире алăсенчен тытрĕ те:

— Эсир кайăксен чăн-чăн тусĕсем пулса кайрăр,— терĕ. Шăпах çав вăхăтра ман пуç тăррине пĕр кăвак пурçăн пĕсехеллĕ кăвакарчăн вĕçсе пырса ларчĕ те «куль-куль!» тесе юрласа ячĕ.

## ИЛЕМ ВĂЛ — ТУСЛĂХРА!

Эпир, Петĕрпе иксĕмĕр, шкултан таврăнсан апат çирĕмĕр те Анаткасри тăвайкки çине ярăнма кайрăмăр.

Хĕллехи янкăр уяр кун. Çурçĕр енчен вĕрекен сивĕ çил пите чĕпĕтет.

Тăвайккине йăлтах ача-пăча сăрса илнĕ. Пур çĕрте те вĕсен сасси янăраса тăрать.

«Эх, хĕллехи ыра кунăмăр, сивĕ пулсан та, сана ытарма çук!»— тесе шухăшласа илтĕм эпĕ хам ăшăмра. Çав вăхăтра Петĕр ман аллăмран тытрĕ те:

— Сантăр, санăн сăмсуна тăм илме пуçланă. Сăмсу тăрри йăлтах шуралса кайнă,— терĕ.

Эпĕ хăраса ӳкрĕм.

Ман пата хампа пĕрле вĕренекен ачасем чупса пычĕç.

— Ан хăра, Сантăр, сана çăлатпăр,— терĕç вĕсем. Хăйсем çавăнтах таса шур юр илчĕç те ман сăмсана сăтăрма пуçларĕç. Пăртак сăтăркаласанах, ман пит-куç вĕриленсе кайрĕ.

Ачасем пĕр вăхăта шăпах пулчĕç.

— Шкул директорĕ Василий Михайлович килет,— терĕç вĕсем.

Директор аллине шур хутпа чĕркенĕ пакет тытнă. Вăл пирĕн пата çитрĕ те пурне те сывлăх сунчĕ.

— Петĕрпе Александр Ятмановсем кунта-и?— тесе ыйтрĕ вăл.

— Кунта. Акă вĕсем,— терĕç ачасем.

Эпĕ çӳçенсе илтĕм.

— Василий Михайлович, мĕн пулнă-ши тата?— ыйтрăм эпĕ директортан.

— Нимех те мар. Сирĕн валли пакет пур,— терĕ вăл.

— Мĕнле пакет? Камран?

— Уçса пăхăр. Пĕр-пĕр юлташăртан пулĕ,— терĕ Василий Михайлович.

Эпир пакета уçрăмăр та савăнсах кайрăмăр: ун ăшĕнчен илемлĕ, хулăн хупăллă кĕнеке тухрĕ. Кĕнеке çине ылтăн саспаллисемпе «Украина ачисем» тесе çырнă. Кĕнеке ăшĕнче çыру пур. Ăна пирĕн тусăмăр Олег çырнă.

— Сантăр, вула-ха. Мĕн çырать Олег?— теççĕ мана ачасем.

Эпĕ вулама пуçларăм:

«Çывăх тусăмăрсем! Эпĕ сире Çĕнĕ çул ячĕпе чунчĕререн юратса пысăк салам яратăп, лайăх сывлăх су-

натăп... Ман пакетра кĕнеке пур. Вăл сире Украина ачисенчен асăнмалăх парне пултăр.

Сирĕн юлташăр, тусăр Олег».

Украинăран килнĕ çак ăшă çыру пире пурне те хавхалантарса ячĕ. Эпир те çав кунах Олег патне çыру çыртăмăр. Асăнмалăх хамăр шкул пахчинче туса илнĕ тĕрлĕ çимĕç вăрлăхĕсене ярса патăмăр. Пакет çине: «Эпир ярса паракан вăрлăхсенчен пахчаçимĕçĕсем кашласа ÿсчĕр. Пирĕн туслăх татах та çирĕпленсе пытăр. Чăн илем вăл — туслăхра!»— тесе çыртăмăр.

## КĔТМЕН ИНКЕК

Пыл хурчĕсене эпĕ çав тери юрататăп. Çулла пулсан вара ял çумĕнчи çаран çине тухатăп та пыл хурчĕсем сĕрленине касса кайсах сăнатăп. Çак пĕчĕк ылтăн çунатсем чечекрен чечеке ларса пыл пухнине курсан, чун уçăлса каять.

Атте те эпĕ пыл хурчĕсене юратнине сисрĕ пулас, ятарласа Юхма пасарне кайса, вĕлле туянчĕ. Ăна пахчана, çурт çумне, хĕвел тивекен вырăна лартрĕ. Эпĕ иртен пуçласа каçчен унтан уйрăлмастăп: вĕлле хурчĕсем пыл пухнине чун-чĕререн савăнса пăхса ларатăп. Пĕр эрне иртсен, вĕлле пăхма шут тытрăм. Анчах хам çак ĕçе мĕнле, ăçтан пуçламаллине нимĕн те пĕлместĕп. Пирĕн кÿршĕре Сахрун мучи пурăнать, пыл хурчĕсем нумай усрать. Ун çинчен таврара ырă ят çÿрет. Пурте ăна: «Сахрун мучи — хурт-хăмăр ăсти»,— теççĕ. Эпĕ те ăс илме ун патне кайма шутларăм.

Ăна эпĕ хăй патне мĕншĕн килнине каласа патăм.

— Аван апла пулсан,— терĕ Сахрун мучи, унтан вара пыл хурчĕсене мĕнле пăхса усрамалли çинчен кĕскен ăнлантарма пуçларĕ:— Сантăр, тата çакна ан ман: хуртсем çапкаланнине, рамăсене тирпейсĕр тыткаланине, тĕрлĕ шăршă-марша çав тери юратмаççĕ.

Вĕрентсе ăс панăшăн Сахрун мучине пĕтĕм кăмăлтан тав турăм та хурт пăхма васкарăм. Киле çитсен,

çăм алса тăхăнтăм, пит-куçа ятарласа хурт пăхма тунă шăтăклă питлĕхпе хупларăм.

Кунĕ питех те лайăхчĕ. Хĕртсе хĕвел пăхать. Вĕлле хурчĕсем каçса кайса сĕрлеççĕ, пыл пухаççĕ. Эпĕ вĕлле патне хуллен утса пытăм. Хама питĕ лăпкă тытма тăрăшатăп. Шиклене-шиклене вĕлле хуппине сирсе çерем çине хутăм, карас рамине кăларма пуçларăм. Пыл хурчĕсем сĕрлеме тытăнчĕç. Кăштахран вĕсем мана йăлтах хупăрласа илчĕç. Акă, унччен те пулмарĕ, сылтăм çанă ăшĕнче пыл хурчĕ сĕрĕлтетнине туйса илтĕм. Эпĕ ăна çанă ăшĕнчен кăларас тесе тăрмашма тытăнтăм, анчах вăл çав вăхăтра мана сăхса та илчĕ. Пĕтĕм ӳт-тир ыратса, сĕрĕлтетсе кайрĕ.

Эпĕ, халиччен кун пек япалана курманскер, алсана айккинелле ывăтса ятăм, пуçа тăхăннă питлĕхе те хывса пăрахрăм. Çук, пыл хурчĕсем пурпĕрех пĕри те манран хăпмарĕç, çине-çинех сăха пуçларĕç. Эпĕ, ним тума пĕлменскер, çĕрулми ани çинелле чупса кайрăм, йăран хушшине тăсăлса выртрăм. Ман çинче пыл хурчĕсем çаплах сĕрлеççĕ, ĕнсе çине лараççĕ. Вĕсем мана хăйсен çуртне салатма пынă вăрă-хурах выранне хунă пулас, сывлама та памаççĕ.

Пыл хурчĕсем вĕçсе кайса пĕтсен çеç эпĕ пуçа çĕклерĕм. Пуç çаврăнать, ӳт-тир пур тĕлтен те ыратать. Вара ыратмасăр, ӳт çинче пĕр сăхман вырăн та юлман пулĕ.

Хам аран-аран ура çине тăтăм та картишне чупса кĕтĕм, пусăран шыв ăсса, хуртсем сăхнă вырăна çума пуçларăм. Ӳт-тир çаплах вут пек çунать. Ман пата аннепе Сахрун мучи чупса пычĕç:

— Мĕн пулчĕ? Мĕн пулчĕ?— ăшталанчĕç вĕсем. Эпĕ вĕсене хам мĕнле хурт пăхма пуçлани çинчен каласа патăм. Сахрун мучи мана:

— Ара, эпĕ сана пыл хурчĕсем тĕрлĕ шăрша-марша чăтма пултараймanни çинчен каларăм-çке. Мантăн-им эсĕ çавна?— терĕ.

Эпĕ ăна:

— Манран нимĕнле шăршă та кĕмест,— тесе хутăм.

Сахрун мучи вара ҫӗрте выртакан ҫӗнӗ алсана ҫӗклерӗ те сӑмси умне тытрӗ.

— Акӑ ҫак алсана шӑршласа пӑх-ха. Шӑрши пур-и унӑн, ҫук-и?— терӗ вӑл, алсана мана тыттарса.

Эпӗ тӗлӗнсех кайрӑм: ҫӗнӗ алсаран чӑнах та ҫӑм шӑрши кӗрет. Сахрун мучи пӑртакран ман ҫине тимлӗн пӑхрӗ те:

— Ҫавӑнпа асса кайнӑ сан хуртусем,— тесе кулса ячӗ.

Кашни ӗҫӗн хӑйӗн йӗрки пур, тӗплӗн шухӑшламасӑр кашӑк аври те тӑваймӑн тесе ахаль каламан ҫав ваттисем.

## УКҪА

— Ҫухалчӗ, пӗтрӗ!— кӑшкӑрса ячӗ Қалля, хӑй арӑмне куҫӗнчен пӑхса.

— Мӗн ҫухалчӗ, мӗн пӗтрӗ?— хуллен кӑна ыйтрӗ Ульха.

— Укҫа! Леш, хир енне кайса тунӑ укҫа!

Пуҫланчӗ хайхи: Қалляпа Ульха ниҫта кайса кӗме пӗлмеҫҫӗ, айӑн-ҫийӗн ҫаврӑнаҫҫӗ.

— Ӑҫта хунӑччӗ вара эсӗ ӑна?— ыйтрӗ Қалляран Ульха.

— Ниҫта та мар, ҫакӑнтахчӗ: сентре ҫине чиксе хунӑччӗ,— терӗ Қалля, пӳрт стенисене аллисемпе хыпашласа. Ульха та пукан ҫине сиксе хӑпарчӗ, сентрене пӑтратма пуҫларӗ.

— Эх, эсӗ!.. Пурӑна киле пуҫна та ҫухатӑн-ха,—терӗ вӑл Қалляна.

— Ан лӑрка-ха. Сӑмах ун ҫинчен мар, укҫа ӑҫта кайса кӗни ҫинчен пырать,— пат татса каларӗ Қалля.

Укҫа хуйхи Қалляпа Ульхана ҫӗрле те канӑҫ памарӗ.

— Ҫук, Қалля, тем тесен те, пирӗн пата вӑрӑ килсе кӗнӗ, юмӑҫа каймалла,— терӗ Ульха кинемей. Қалля та арӑмӗн шухӑшӗпе килӗшрӗ.

Ирхине вара, шуçăм çути киличченех, Ульха кинемей кўршĕ яла, Укахви юмăç патне тухса вĕçтерчĕ те часах ун патне çитрĕ.

— Пирĕн çурта инкек килсе кĕчĕ. Укçа çухалчĕ,— терĕ вăл юмăç карчăка.

— Тытас пулать ăна. Эсĕ ман пата килни питĕ лайăх. Тĕпелелле иртсе лар,— терĕ ăна пĕкĕ пек авăннă юмăç. Пăртакран вăл, хуралса-якалса кайнă туйине тытса, пуçне çĕтĕк кĕрĕкпе хупларĕ те мăкăртатма пуçларĕ:— Çитмĕл те çичĕ тĕслĕ çырма, çитмĕл те çичĕ тĕслĕ çырмара çитмĕл те çичĕ тĕслĕ чул. Эй, асамçă, çак çитмĕл çичĕ тĕслĕ чул хушшинчен тухса, укçа вăррине тытма пулăшсамччĕ, хăвăн хăватна кăтартсамччĕ,— терĕ вăл.

Чылайччен çапла мăкăртатрĕ юмăç карчăк. Унтан вăл, пуçĕ çинчи кĕрĕкне сирсе пăрахса, тарланă çамкине кĕпе çаннипе шăла-шăла илчĕ те:

— Сирĕн киле вăрă инçетрен пыман. Вăл — хăвăр кўршĕренех, вăрăмрах, хурарах çын,— тесе хучĕ.

— Çавах, çавах, Мирун, Мирун! Укçа çухалнă кун та пирĕн пата пынăччĕ. Мур илесшĕ, çĕр çăтманĕ!—çуйхашма пуçларĕ Ульха.

Унтан юмăç карчăк ăна хуллен кăна çапла каласа хучĕ:

— Эсĕ, йăмăкăм, питех те хуçăлса ан ўк-ха. Малтан çав Мирун текен çыннăн хапхи умне укçа кайса пăрах. Укçа вăрри вăлах пулсан, ăна тепĕр куннех вĕри чир çапса ўкерĕ,— терĕ.

Ульха тăхтаса тăмарĕ: юмăç карчăк хушнине çав кунах пурнăçларĕ, Мирун хапхи умне укçа кайса пăрахрĕ. Пуç çавăрса укçа пăрахнă чух Мирун килĕнче пулман иккен, вăл Канаша колхоз тыррине леçме кайнă-мĕн. Çав кун урăм-сурăм çумăр çурĕ. Урамсенче, çуркуннехи пек, кĕрлесе шыв юхрĕ. Мирун килне тепĕр кун çеç таврăнчĕ. Инкек куçа курăнса килмест тенĕ пек, вăл станцăран таврăнсанах чирлесе ўкрĕ. Ăна тухтăр килне пырса пăхрĕ:

— Вăл çумăрлă çанталăкра шăнса пăсăлнă,— терĕ.

Мирун чирлесе ӳкнине пӗлсен, Ульха пушшех те урса кайрӗ.

— Юмӑç калани чӑн пулчӗ: пирӗн укçана пӗçертнӗ çынна турӑ хӗн-хур кӑтартма пуçларӗ,— терӗ вӑл тулашса. Вара Ульха çавӑнтах Мирунсем патне чупса каçрӗ.

— Мӗн хӑтланатӑн эсӗ, кӳршӗ? Пире çаратма шут тытрӑн иккен! Кӗççе пит!— терӗ Ульха Мирун выртакан пӳлӗме кӗнӗ-кӗменех. Мирун нимӗн те ӑнланмарӗ, йывӑррӑн сывласа илчӗ:

— Ульха кинӗм, эсӗ мӗнле укçа çинчен калаçатӑн? Кам, мӗн вӑрланӑ?— тесе ыйтрӗ. Лешӗ вара ун сӑмахне хӑлхана та чикмерӗ.

— Эсӗ! Урӑх никам та мар. Юмӑç карчӑк та сан çинех каларӗ,— терӗ вӑл. Мирун, чирлӗскер, пушшех аптӑраса ӳкрӗ, хӑй айӑпсӑр иккенне ӑнлантарма тӑрӑшрӗ. Çук, Ульха аллипе çеç сулчӗ.

— Каçармастпӑр эпир сана, темле пулсан та каçармастпӑр! Халех милицие кайса евитлетпӗр. Пӗтӗм тӗнче пӗлтӗр!— тесе кӑшкӑрашса тухса кайрӗ. Çак пӗр-ик кун хушшинче мӗн кӑна пулса иртмерӗ пулӗ. Ун çинчен каласа пама та хал çитеес çук. Кӳршӗ çыннисем пурте Калляпа Ульхана пулӑшма тӑрӑшрӗç, анчах пӗрре те усси пулмарӗ, çухалнӑ укçа тупӑнмарӗ.

Каç пулсан, Калляпа Ульха чылайччен калаçса ларчӗç. Сӑмах вӗçӗ-хӗррисӗр укçа çинчен пычӗ. Çур çӗр те çитрӗ. Автансем те авӑта-авӑта илчӗç. Калляпа Ульхана та ыйхӑ пуса пуçларӗ пулас. Ульха вырӑн сарма шутларӗ, çӳпçе тӗпӗнчен халиччен пӗрре тытман вырӑн çиттине кӑларчӗ, анчах унччен те пулмарӗ:

— Укçа! Укçа!— тесе кӑшкӑрса ячӗ. Калля, арӑмӗн аллинчи укçа хутаççине курсан, пӗрре хӗрелсе, тепре шуралса кайрӗ.

— Мӗнле, ӑçтан сиксе тухрӗ çак пирӗн телей хутаççи? Кунта манӑн вИçӗ çул пӗр ӗçлемесӗр пурӑнмалӑх нухратӑм пур!— терӗ Калля, укçа хутаççине кӑкӑрӗ çумне чӑмӑртаса.

— Калля, эсӗ чунтан савӑнни аван-ха. Анчах ма-

нăн хамăн намăса ăçта хумалла? Укçа çÿпçе тĕпĕнчех, вырăн çитти хушшинчех пулнă,— терĕ Ульха.

## ÇИЧ УРАЛЛĂ ЛАША*

Пĕр каçхине патша тĕлĕнмелле тĕлĕк тĕлленнĕ: пысăк куçкĕскинче çичĕ ураллă шурă лаша курнă. Вăл тепĕр куннех çавнашкал куçкĕски тутарнă та унта чăнах та хайхи лаша тухса тăнă. Патша çийĕнчех хăйĕн кĕрÿшĕсемпе салтакĕсене çав лашана шырама кăларса янă.

Патша патĕнче Иван ятлă йĕкĕт тарçăра пурăннă. Вăл та, çак лаша çинчен илтсен, патша патне васканă.

— Тархасшăн, мана та çав шур лашана шырама кăларса ярсамăрччĕ,— тенĕ вăл, пуçне çĕре çити тайса. Патша ăна çамрăк тесе шансах кайман. Çавăнпа яма килĕшмен. Хурланса тухнă Иван патша патĕнчен, çĕрĕпе çывăраймасăр хăшкăлнă. Чунĕ ун çула тухасшăнах талпăннă. Вара, мĕн пулать те мĕн килет тесе, тепĕр кунне вăл хăйĕн çутă хĕçне илнĕ те çуранах хайхи лашана шырама тухса утнă. Қайсан-кайсан, çул çинче пĕр начар кăна пÿрте кĕнĕ. Унта ватă карчăк пурăннăмĕн.

— Ăçталла çул тытатăн?— ыйтнă унран карчăк.

— Çапла-çапла, пирĕн патша тĕлĕкре çичĕ ураллă шур лаша курнă... Эпĕ те çав лашана шырама тухрăм,— пĕлтернĕ Иван.

— Чăнах та ку таврара ун пек лаша пур. Анчах та ăна тупма çав тери йывăр. Ку çеç те мар — эсĕ уншăн ху пуçна çухатма та пултаратăн,— тенĕ те карчăк çав шурă лаша ăçта пурăнни çинчен калама пуçланă:— Хура вăрмана кĕрсен, çул юпленсе каять,— тенĕ вăл.— Санăн вара сылтăммипе утмалла. Қайсан-кайсан, тимĕр витнĕ пÿрт тĕл пулатăн. Унта кĕретĕн те сĕ-

---

* Аврам Бурундуков ачасене каласа панă юмах.

тел тулли апат-çимĕç пуррине куратăн. Сан вĕсенчен пĕрне те çиме е тутанса пăхма юрамасть. Мĕншĕн тесен сăрине ĕçсен — юну пăсăлать, çăкăрне çисен — пырна ларать. Вилен. Ан ман: хăв хутаççунти апатна çеç çи. Çак пӳртрен инçе те мар çырма юхса выртать. Ун урлă каçма кĕпер пур. Çак кĕпер урлă каçхине, вуникĕ сехет тĕлĕнче, виçĕ пуçлă çĕлен хăйĕн аслашшĕ патĕнчен хăнаран юрласа таврăнать. Эсĕ çав çĕлене хăрамасăр кĕтсе ил. Унпа çапăçма йывăр килет. Çĕлен, сана курсан, пĕр çухрăм каялла чакать те, хăвăрт-хăвăрт вирхĕнсе пырса, сана çăтма пикенет. Эсĕ хăраса ан ӳк, çухалса ан кай, вăй-хална пух та çĕленĕн пуçне хĕççӳпе касса тат. Пуçне каснă хыççăн çĕлен икĕ çухрăм каялла чакать. Каллех тепĕр пуçĕпе сана çăтма вăркăнса пырать. Эсĕ ăна та касса тат. Çĕлене çĕнтернĕ хыççăн хăвăн çулупах малалла ут. Кайсан-кайсан, йĕс-тимĕр витнĕ пӳрт тĕл пулăн. Унта кĕрсен каллех сĕтел тулли ĕçме-çиме курăн. Ăна та эсĕ çисе те, тутанса та ан пăх. Каçхине, вуникĕ сехет тĕлĕнче, виçĕ лаша кӳлнĕултă пуçлă çĕлен хăйĕн аслашшĕ патĕнчен хăнаран юрласа килет. Эсĕ çав вăхăтра кĕпер айĕнчен хăвăрт кăна сиксе тух та унăн икĕ пуçне касса тат. Çапăçу йывăр пулать. Çĕлен хăйĕн икĕ пуçне касса татнă хыççăн икĕ çухрăм каялла чакать. Вăл, хăвăрт-хăвăрт ĕрĕхсе пырса, сана çăтса яма пикенĕ. Эсĕ хăраса ан ӳк, çухалса ан кай, пĕтĕм вăй-хална пух та çав çĕленĕн икĕ пуçне те харăс касса тат. Ан ман: çĕлен, каллех ултă çухрăм каялла чакса, сан патналла ыткăнĕ. Эсĕ ан парăн, юлашки вăйна пухса, çĕленĕн тепĕр икĕ пуçне касса тат. Унтан ху çулупах малалла васка! Кайсан-кайсан, эсĕ аякранах ылтăнпа витнĕ ялтăркка тăраллă пӳрт курăн. Çак пӳртре чи хăрушă ватă çĕлен пурăнать. Унăн пӳртĕнче те апат-çимĕç иксĕлми пулĕ. Çак тискер çĕлен каçхине, вуникĕ сехет тĕлĕнче, асламăшĕ патĕнчен хăнаран юрласа таврăнать. Эсĕ, вăл кĕпер çине кĕрсенех, лаша кĕçеннине илтĕн. Çав вăхăтра санăн кĕпер айĕнчен сиксе тухмалла та çĕленĕн виçĕ пуçне касса татмалла.

Çĕленĕ ку — пуринчен те хаярри, пуринчен те вăйли. Вăл, çичĕ çухрăм каялла чакса, вут-хĕм кăларса, сан çинелле ыткăнĕ, хăватлă хӳрипе çапса, кăкăр таран çĕр айне кĕртсе лартĕ. Анчах эсĕ хăраса ан ӳк, çухалса ан кай... Çав хăрушă вăхăтра сана çĕлен аллинчи хайхи çич уряллă шурă лаша пулăшĕ, çĕртен туртса кăларĕ. Тухсан вара тăхтаса ан тăр — çĕленĕн виçĕ пуçне касса тат. Қунпа та çĕлен пĕтмест: вăл, юлашки вăйне пухса, тăхăр çухрăм каялла чакĕ, унтан каллех сан çинелле ыткăнĕ. Эсĕ çав вăхăтра вăр-вар кĕпер айне чăм. Çĕлен кĕпер çине пырса кĕрсен, хыçалтан сиксе тухса, халсăрланнăскерĕн юлашки виçĕ пуçне кас та ывăт! Вара тинех çич уряллă лаша сан аллуна лекĕ. Унпа лăпланса ан лар. Йывăрлăхсем малашне те пулаççĕ-ха санăн. Патша килне каялла таврăннă чух вăрманта пиçсе çитнĕ çырласем тĕл пулăн. Вĕсем сана питĕ илĕртĕç, анчах эсĕ, темле илĕртсен те, пĕрне те татса ан çи. Вĕсем — çĕлен наркăмăшланă çырласем. Қирек хăшне çисен те вилме пултаратăн. Çавăнпа чăт, тӳс, асăрхануллă пул!

Иван карчăка чун-чĕререн тав туса тухса каять. Çул çинче йăлтах карчăк каланă пек пулса пырать. Ултав хыççăн ултав, çапăçу хыççăн çапăçу... Иван яланах карчăк каланине асра тытать, çул çинче тĕл пулнă чи хаяр та усал тăшмансене, çĕленсене çĕнтерсе пырать, çичĕ уряллă лашана хăй аллине ярса илет. Иван, савăнăçне ниçта хураймасăр, çав çич уряллă шурă лашапа патша патне васкать. Кун хыççăн кун, çĕр хыççăн çĕр иртет. Иван хутаççинче апат-çимĕç пĕтсе çитет. Ун çав тери çиесси килет. Мĕн тумалла?! Пăхать те: йĕри-тавра куç умне пиçсе çитнĕ хĕп-хĕрлĕ çырласем туха-туха тăраççĕ. Иван карчăк каланине аса илет. Пĕр çырлине те çимест. Чăтать. Қаçхине аслă вăрманти пĕр уçланкăра ним туйми çывăрать, тепĕр кунне ирех çула тухать. Қайсан-кайсан, унăн шыв ĕçесси килет. Инçе те мар çăлран шыв юхни курăнса каять. Ана каллех карчăк вĕрентсе каланисем аса килеççĕ.

«Çук, чăтас пулать, хама хам ултавпа вĕлерме юра-

мастьș»,— шухăшлать Иван. Вăл, тарăхса çитнипе, юхса выртакан çăл шывне аллинчи патакĕпе хыттăн çапать. Тĕлĕнмелле: çăл шывĕнчен çавăнтах хĕрлĕ юн сирпĕнсе тухать. Иван вара çаврăнать те малалла васкать. Çул çинче тепĕр каç вăрман варринчех çĕр касма тивет. Каллех хăрушă япала. Ирхине, çывăрса тăнăтăманах, вăл таçтан инçетрен вуникĕ пуçлă çĕлен чашкăрса килнине туйса илет. Иванăн çич уралла шурă лаши те çакна сисет, çавăнтах малалла тапса сикет. Кайсан-кайсан, вĕсем пĕр тимĕрçĕ лаççи тĕлне пырса тухаççĕ. Ак тамаша: вуникĕ пуçлă çĕлен вĕсенчен юлмасть иккен, çул тăрăх чашкăра-чашкăра пырать. Иван аптăрамасть: лашине çавăтса, тимĕрçĕ лаççине кĕрсе ларать. Ăна шал енчен питĕрсе хурать. Çĕлен, вутхĕм сирпĕтсе, тимĕрçĕ лаççи тĕлне çитет. Çав тери тарăхнине пула вăл чĕлхипе лаç алăкне шăтарать те унта кĕме пикенет. Иван çавăнтах унăн мĕнпур пуçне каса-каса пăрахать, лашипе каллех инçе çула тухать. Кайсан-кайсан, Ивана патша салтакĕ тĕл пулать. Вăл унтан тархасласа çич уралла лашана хăйне пама ыйтать. Иван темле тархасласа ыйтсан та пама килĕшмест. Салтак урса каять, Ивана хăрата пуçлать. Иван ырă марра çиййĕнчех сиссе илет.

— Хăвăн аллунти ылтăн çĕррӳне хывса пар, ун чух, тен, эпĕ те лашана пама килĕшĕп. Эсĕ ху мĕнле шутлатăн?— ыйтать Иван.

— Парăттăм, анчах çĕррĕм, тем тусан та, пӳрнерен тухасшăн мар,— пĕлтерет ăна салтак.

— Мĕн тăвăн ĕнтĕ,— тет Иван.— Эпĕ те сана хам лашана параймастăп.

— Апла пулсан, çĕрре эпĕ пӳрнепе пĕрлех касса паратăп,— сăмах парать салтак. Çапла вара, патшаран ырă ят илтме хыпăнакан салтак ылтăн çĕррине пӳрнимĕнĕпех касса парать те Иван аллинчи çич уралла лашана илсе каять.

...Салтак патша патне çичĕ уралла шурă лашапа çĕмĕрттерсе пырса кĕрет. Халăх тĕлĕнсе каять. Патша хăй те çав тери савăнать. Вăл вара çавăнтах хăйĕн кĕçĕн

чипер хёрне çав салтака качча пама килёшет. Çак хыпар Иван хăлхине те пырса кĕрет. Вăл хăй чун-чĕререн юратнă çав хĕршĕн çунать. Мĕн тумалла? Туй пуçланать. Сăвă-юрă, тащă-кулă янăраса тăрать. Туй кĕрекинче патша савăнса, мухтанса ларать. Вăл салтака хĕрĕпе пĕрле хăйĕн хаклăран та хаклă çур мулне пама пулать... Иван тӳсеймест, палламалла мар тум тăхăнса, туя пырса кĕрет. Шăпах çав вăхăтра патша салтакĕ хăй çич уралла лашана мĕнле тупни çинчен мухтанса калаcа парать. Салтак нумаях та мухтанаймасть, Иван хăвăрт кăна туй çыннисем хушшине кĕрсе тăрать те çапла калать:

— Патша-аттемĕр, туй çыннисем!— тет хыттăн.— Салтак сире пĕтĕмпех суять! Çичĕ уралла лашана вăл мар, эпĕ тупрăм! Салтак ăна манран хăратса илме тăрăшрĕ. Эпĕ лашана хăйĕн аллинчи çĕррипе çеç улăштарма пултăм. Вăл вара, çĕрри пӳрнинчен тухман пирки, мана пӳрнипех касса пачĕ. Акă вăл — унăн пӳрнипе çĕрри!

Патша тĕлĕнсе хытсах каять хайхи. Туй халăхĕ Ивана мухтама тытăнать. Ним тума та çук — патша хăйĕн кĕçĕн хĕрне Ивана качча парать.

Туй кĕреки варринче мухтанса ларакан салтак ним те калаймасть. Вăл, намăсланса, хĕп-хĕрлĕ хĕрелсе кайса, туйран тухса шăвăнать.

Çав туйра эпĕ те пултăм, купăс кала-кала туй çыннисене савăнтартăм...

## УТАРТА

Çирĕм çул хушши ĕнтĕ пирĕн асанне колхоз утарĕнче вĕлле хурчĕсене пăхса пурăнать.

Пĕр çулхи ăшă кун эпир, Петĕрпе иксĕмĕр, ун патне кайса курма шутларăмăр. Çул çине пăртак çимелли илтĕмĕр те хамăр ял хыçĕнчи вăрмана — Сăрнай ĕшнине тухса утрăмăр. Нумай та каймарăмăр, пирĕн куç умне Сăр вăрманĕ тухса тăчĕ. Эпир утара пырса кĕтĕ-

мĕр. Утар çумĕпе Хурăнвар текен пĕчĕк çырма юхса выртать. Ешĕл вăрман илемне курса тăранма та çук. Мĕнле кăна кайăк сасси илтĕнмест пулĕ кунта!

Асанне пире, пĕлнĕ пекех, хирĕç тухса илчĕ.

— Атьăр, килĕрех. Сире яланах хавас,— терĕ хăй. Вăл пире пĕр пĕчĕк пӳрте илсе кĕчĕ. Пӳрт саккисем çинче шурă çăка чĕрессем лараççĕ. Сăмсана пыл шăрши çапать. Çакна Петĕр те сисрĕ пулас, вăл асанне куçĕнчен темиçе хутчен ăшшăн пăха-пăха илчĕ те:

— Асанне, ку чĕрессенче мĕн пур вара?— тесе ыйтрĕ.

— Çĕнĕ пыл,— терĕ асанне.

Петĕр куçĕсем çавăнтах чăлт-чалт выляса илчĕç.

— Пире пăртак... Пире...— терĕ те Петĕр урăх пĕр сăмах та чĕнмерĕ. Асанне ун çине кулараххăн пăхрĕ:

— Сисетĕп, ăнланатăп,— терĕ вăл. Унтан сĕтел çине пĕр пĕчĕк чей чашăкĕпе пыл кăларса лартрĕ.— Çисе пăхăр. Ку сирĕн валли,— терĕ асанне.

Эпир Петĕрпе иксĕмĕр те сĕтел хушшине кăпăр-капăр кĕрсе лартăмăр.

— Петĕр, ытла ан васка. Кĕпӳ çине пыл тăкă-нать,— асăрхаттарчĕ асанне.

Эпир асаннене пыл çитернĕшĕн тав турăмăр.

— Ну, халĕ вĕллесем патне тухар, хуртсене пăхар,— терĕ асанне.

Эпир ун сăмахне хапăл тусах йышăнтăмăр. Хурт пăхмалли хатĕрсем илтĕмĕр те вĕллесем патне тухрă-мăр. Пыл хурчĕсем хĕвеллĕ ăшă кунпа савăнса каçса кайсах ĕçлеççĕ. Пĕтĕм таврара вĕсем сĕрлени илтĕнсе тăрать. Эпир пĕр вĕллери хуртсене вĕркĕчпе вĕрттерме пуçланăччĕ çеç, çав вăхăтра пирĕн Петĕр аллисемпе çапкаланма пуçларĕ.

— Петĕр, тĕк тăр. Хуртсем çапкаланнине юратмаç-çĕ,— терĕ ăна асанне.

Эпĕ Петĕр çине пăхрăм та тĕлĕнсех кайрăм: ăна хуртсем сăрса илнĕ. Çакна асанне те асăрханă-мĕн. Вăл Петĕре аллинчен тытрĕ те утар пӳрчĕ еннелле çа-вăтса кайрĕ. Пыл хурчĕсем вара Петĕртен ниçта та юлмаççĕ: вăл ăçта каять, вĕсем те çавăнта пыраççĕ.

Асаннепе Петĕр утар пӳртне аран кĕрсе ĕлкĕрчĕç.

Эпĕ те васкаçах вĕсем патне чупрăм.

— Петĕр, сана эпĕ малтанах пыла тăкмасăр, йĕркеллĕ çи тесе каларăм. Эсĕ ман сăмаха итлесех каймарăн. Акă халĕ хуртсем сан кĕпӳ çинче пыл тумламĕсем пуррине сисрĕç. Вĕсем ăна каялла пухса каясшăн,— ăнлантарать Петĕре асанне. Вăл Петĕр кĕпи çине тăкăннă пыла шăла-шăла тасатрĕ те:— Ну, халь ан хăра. Пыл хурчĕсем сана тек сăрса илмеççĕ ĕнтĕ,— терĕ.

Эпир каллех вĕллесем патне тухрăмăр.

Асанне хуртсене пăхрĕ, эпир ăна пулăшса тăтăмăр.

Кăнтăрла çитсен, асанне каннă вăхăтра, эпир Петĕрпе иксĕмĕр пыл хурчĕсем мĕн тунине пăхса çӳрерĕмĕр.

— Сантăр, хăвăртрах кил-ха! Кунта пыл хурчĕсем çапăçаççĕ!— кăшкăрчĕ мана Петĕр.

Эпĕ васкаса ун патне пытăм. Чăнах та тĕлĕнмелле: пĕр çĕнĕ вĕлле патĕнче темĕн чухлĕ вилнĕ хуртсем выртаççĕ. Хăйсем вара пурте шултра. Вĕсене вĕтĕрех хуртсем сĕтĕре-сĕтĕре вĕлле айккинелле кайса пăрахаççĕ.

Эпир асаннене хамăр пата чĕнсе илтĕмĕр, унран çак пыл хурчĕсем мĕн тунине ăнлантарса пама ыйтрăмăр.

— Вĕсем сăрă хуртсем,— терĕ пире асанне.— Сăрă хуртсем ĕçлеме юратмаççĕ, пыл пухма та çӳремеççĕ. Ĕçчен хуртсем пухнă пыла çиме юратаççĕ вара. Ĕçчен хуртсем çак сăрă хуртсем харам пырсем иккенне сиснĕ ĕнтĕ. Акă курăр, вĕсене вĕллерен мĕнле кăлара-кăлара ывăтаççĕ...

Асанне çапла калани пире йăлтах тĕлĕнтерсе ячĕ.

— Ха, вĕсен хушшинче те кахалсем, харам пырсем пур иккен,— терĕм эпĕ.

Асанне пире çурăмран лăпка-лăпка илчĕ те:

— Эсир вара, пепкемсем, нихçан та наян ан пулăр, ĕçе юратăр,— терĕ.

Эпир мĕн каç пуличченех утарта пултăмăр, асаннене хуртсем пăхма пулăшрăмăр.

# МАНМАН ИККЕН

Пирĕн Хараçка виçĕ çура туса пачĕ. Эпир вĕсене пурне те ят парса тухрăмăр. Пĕрне Люçка, тепĕрне Шарик, виççĕмĕшне Улайкка тесе чĕнеттĕмĕр. Йытă çурисене Петĕр çав тери юрататьː кашни кунах виçĕ хутчен апат çитерет, çемçе вырăн хатĕрлесе парать. Йытă çурисем ăна хăйсем те кĕтсе çеç тăраççĕ. Вăл картишне тухсанах, ун патне чупса пыраççĕ, ачашланма пуçлаççĕ.

Виç-тăватă уйăх иртсен, йытă çурисене атте сынсене пачĕ.

Пĕрне, хурине, колхоз сад пахчине сыхлакан Палюк мучи илсе кайрĕ. Хăмăртараххине Анисса аппана, улараххине утарта ĕçлекен асаннене парса ятăмăр.

Кăçал колхоз пахчинче панулми, слива, крыжовник, хăмла çырли ăнса пулчĕ.

Пĕр ирхине эпир ачасемпе сад пахчине кайса курма шутларăмăр. Пирĕнпе пĕрле унта чарусăртарах Илюш та пычĕ. Вăл сад пахчине хапхаран мар, карта урлă тӳрех кĕме пуçларĕ.

Унччен те пулмарĕ, йывăçсем хушшинчен йытă хаяррăн вĕрни илтĕнсе кайрĕ. Илюш çавăнтах урамалла сирпĕнсе тухрĕ. Ун хыççăн йытă вĕçтерсе пырать. Эпир хăранипе кăшкăрса ятăмăр. Хамăр пурте йытта:

— Ан ашкăн, çитет!— тетпĕр. Анчах эпир каланине вăл хăлхана та чикмест, çаплах хаяррăн вĕрсе чупать.

— Ну, юрĕ, Люçка, ан усаллан!—терĕ Петĕр шăллăм.

Ула йытă, Петĕр сассине илтсен, ун патне çил пек вĕçтерсе пычĕ. Петĕр çав тери хăраса ӳкрĕ, тарма пуçларĕ. Люçка ун хыçĕнчен...

Мĕн тумалла? Вăл ăна йăлтах туласа тăкма пултарать!

Кĕтмен çĕртен йытă Петĕр çине сиккелеме, хӳрине выляткаласа ачашланма тытăнчĕ, хăй ниçта кайса кĕреймест.

Петĕр пирĕн пата каялла чупрĕ. Йытă унран пĕрре те юлмасть.

Люçка сассине илтсе, Палюк мучи сад пахчинчен урама тухрě. Вăл йытта хăй патне йыхăрать. Анчах Люçка Петěртен пěрре те уйрăлмасть: ун çумне сěртěнет, ачашланать...

Эпир тинех ăнланса илтěмěр: Люçка Петěре халě те манман-мěн.

Палюк мучи пире пурне те сад пахчине илсе кěчě, ăнса пулнă улма-çырласене кăтартса çаврăнчě.

Люçка та пирěнпе пěрлех çӳрерě.

## КАМПУР

Пěр ирхине эпир, Петěрпе иксěмěр, Санюк аппа патне чăх-чěп фермине кайрăмăр.

Картиш тулли сарă, шурă чěпсем шимп-шимп! шимплетсе çӳреççě. Пурте вěсем пěр-пěринпе килěштерсе калаçнăн туйăнать. Эпир вěсем çине пăхса савăнса тăратпăр.

Унччен те пулмарě, картиш варринче çӳрекен чăпар автан çуначěсене саркаласа кăтиклеме пуçларě. Чěпсем, ун сассине илтсе, йывăç айне чупса кěме тытăнчěç. Пěтěм картиш пăлханать.

— Мěн пулчě?— тесе ыйтрăмăр эпир Санюк аппаран.

— Тревога!— терě вăл пире.

Эпир тěлěнсех кайрăмăр.

— Мěнле тревога?

— Ав, курăр: çӳлте хурчка явăнать,— тет пире Санюк аппа.

Çав самантрах çурт хушшинчен лапсăркка Кампур сиксе тухрě. Вăл хăлхисене çӳлелле чанк тăратнă.

— Ав, курăр. Кампур чěпсене сыхлама хурала тухрě,— терě аппа.

Хурчка ферма тěлěнче каллě-маллě вěçсе çаврăнчě, чěпсем патне темиçе хут анма хăтланчě, анчах Кампура курчě пулас, çуначěсене лăпăс-лăпăс сулкаласа илчě те каялла вěçсе кайрě.

Чăпар автан савăнăçлăн аватса ячĕ. Чĕпсем йывăç-сен айĕнчен капăрах сиксе тухрĕç.

Сарă ылтăн хĕвел те кулса ячĕ.

## КУРШАНАК МИШШИ

Пирĕн çурт çумĕпе Янашар текен çырма юхса ир-тет. Ун çыранĕ кашни çулах шыв-шур кайнă вăхăтра ишĕлме пуçларĕ. Мĕн тумалла? Çак инкек пирĕн атте-не канăç пами пулчĕ. Иртнĕ çуркунне вара атте пире хăй патне чĕнсе илчĕ те:

— Ачасем, Янашар хĕррине кăçал йывăçсем лартса хăварар. Вĕсем çыран ишĕлессине чарма пултараççĕ,— терĕ.

Çак ырă шухăша эпир хапăл тусах йышăнтăмăр.

— Лартас. Çырана тек ишĕлме парас мар,— терĕ-мĕр пурте.

Урамсенче юр тасалса пĕтсенех, эпир вăрмантан çам-рăк çăкасем, хурăнсем кăларса килтĕмĕр. Вĕсене пурне те Янашар çырмин икĕ айккине лартса тухрăмăр. Çак çамрăк йывăçсене кун сиктерсе шыв сапса тăтăмăр. Ну-май та вăхăт иртмерĕ, вĕсем вăй илме тытăнчĕç, çулçă сарма пуçларĕç.

Пирĕн ĕçе колхозри чаплă пахчаçă Василий Тимо-феевич та сăнанă. Пĕррехинче вăл хамăр бригадăри колхозниксен пухăвĕнче пысăк сăмах тухса каларĕ.

— Çутçанталăка юратма пирĕн Ятмановсенчен вĕ-ренмелле, вĕсем кăçал та çирĕм тĕп йывăç лартса хă-варчĕç,— терĕ.

Анчах пирĕн хушăмăрта çутçанталăк илемне юрат-сах кайман ачасем те пур-ха. Эпĕ сире çакăн пек пĕр ача çинчен каласа парасшăн.

...Ирхине эпĕ урама тухрăм. Çанталăк ăшă. Йывăç-сенчен тутлă, ырă шăршă сăмсана çапать. Пур çĕрте те кайăксен хитре юррисем илтĕнеççĕ. Кăнтăртан лăпкă, ăшă çил вĕрет.

Унччен те пулмарĕ, манăн хăлхана темĕнле кăшкăрнă сасă пырса кĕчĕ. Пăхатăп та: çырма хĕрринче, хамăр лартнă йывăçсем хушшинче, пирĕн Петĕр йĕрсе тăрать. Эпĕ çавăнтах ун патне чупса пытăм: «Мĕн пулчĕ сана, мĕншĕн йĕретĕн?»— тесе ыйтрăм.

— Акă... Куршанак Мишши эпир лартнă йывăçсене хулăпа çапа-çапа амантса çӳрет. Эпĕ ăна чартăм. Вăл мана çырмана тĕртсе ячĕ,— терĕ Петĕр.

Эпĕ тарăхса кайрăм, çиллĕм тулса çитнипе чăтаймарăм:

— Эсĕ, чăнах та, куршанаках иккен. Санран нихçан та ыррине кĕтме çук!— терĕм Мишшана.

Эпĕ каланине вăл итлесшĕн те пулмарĕ, ку çеç те мар, хăй аллинчи хуллине ман çине сулса ячĕ. Эпир тытăçса ӳкрĕмĕр. Петĕр хăранипе атте патне васкаса чупрĕ. Çав вăхăтра çырма хĕрринче мĕн пулса иртнине колхоз сачĕн хуралçи Палюк мучи сăнаса тăнă-мĕн. Вăл çавăнтах пирĕн пата персе çитрĕ.

— Чарăнăр! Ан çапăçăр!— терĕ вăл пире.

Мишша мана ямасть.

Палюк мучи ăна аллинчен тытрĕ те:

— Мĕн ашкăнса çӳретĕн эсĕ!— терĕ.— Санăн ĕçне эпĕ йăлтах курса тăтăм...

Мишша Палюк мучипе те тавлашма пăхрĕ. Палюк мучи вара чăтаймарĕ:

— Эпĕ сана акă мĕн каласшăн,— терĕ вăл.— Эсĕ çав тери чарусăр ача. Çынсем лайăх, ырă ĕç тăваççĕ. Эсĕ пур вара — çынсен лайăх ĕçне пăсса, çĕмĕрсе çӳретĕн...

Палюк мучи çапла калани Мишша чĕрине пырса тиврĕ пулас: вăл ним чĕнмесĕр айккинелле пăрăнса кайрĕ.

## ТИРПЕЙЛĔ ПУЛ

Кун каç еннелле сулăнчĕ. Анне çырма хĕррине хурсене хăвалама кайрĕ. Эпĕ, картишне тухса, кроликсене апат парса кĕтĕм. Çав вăхăтра пирĕн Петĕр пӳртри япа-

ласене йалтах тустарса пётернё. Вăл пукансене çавăра-çавăра хунă, урай варрине ещёксем ларта-ларта тухнă.

Пўртре мён кăна çук пулё!

Эпё аннене хирёç сырма хёррине кайма çеç шутланăччё, çав вăхăтра урамран пёр хёрарăм кăшкăрнă сасă илтёнсе кайрё.

— Петёр, хапхана тухса уç!— терё вăл.

Ку пирён анне сасси пулнă-мён.

Петёр, ун сассине илтсе, чўрече патне ыткăнчё. Анчах вăл кётмен çёртен урайёнче сарăлса выртакан япаласем çине такăнчё ўкрё. Хай çавăнтах:

— Пётрём, пётрём! Анне, эс ăçта?— тесе кăшкăрса ячё.

Эпё Петёр патне чупса пытăм та тёлёнсех кайрăм: вăл ещёк çумёнчи пăтапа аллине чёрсе янă иккен. Хăй нимçта кайса кёреймест: аллине сула-сула йёрет. Анне урамранах Петёр йёнине илтнё-мён. Вăл васкаса пўрте кёчё те:

— Мён пулчё тата? Мёншён йёретён?— терё Петёре.

— Алла чёрсе ятăм,— терё Петёр.

Анне вăрăммăн сывласа илчё те Петёр суранне бинтпа çыхса ячё.

— Малашне, ачам, аннў пуçтарса, тирпейлесе хунă япаласене нихçан та тустарса ан çўре,— терё хăй Петёре.

Эпир урайёнче выртакан пукансене тăрата-тăрата тухрăмăр, ещёксене хăйсен вырăнне пуçтарса хутăмăр, пўрте йёркене кёртрёмёр.

— Акă çапла мёнле лайăх. Пур çёрте те тирпейлёх, йёркелёх кирлё. Çакна яланах асра тытсамăр,— терё пире анне.

## ЧИ ПЫСĂККИ, ЧИ ТУТЛИ

Пирён пахчара чечек нумай. Эпир вёсене кашни кунах шыв сапса тăратпăр.

Пёррехинче Петёр чечексем валли шыв йăтасшăн пулмарё.

— Пуç ыратать,— терĕ те урама тухса кайрĕ, ачасемпе выляма пуçларĕ.

Анне, çакна курсан, мана хăй патне чĕнчĕ.

— Куратăн-и, Петĕрĕн пуçĕ мĕнле «ыратать»?— терĕ вăл.

Эпĕ нимĕн те шарламарăм, Петĕр аннене улталанăшăн хам ăшăмра тарăхса илтĕм. Анне мана хăйне итленĕшĕн мухтарĕ, чечексене сапса пĕтерсен:

— Халĕ ĕнтĕ эсĕ те урама выляма вĕçтер,— терĕ. Хăй пасара тухса кайрĕ. Пасартан вăл пирĕн валли пĕр карçинкка панулми илсе килчĕ. Эпир уншăн çав тери савăнтăмăр. Уйрăмах Петĕр ниçта кайса кĕреймест.

— Мана чи пысăкки! Чи тутли!— тет хăй.

Анне ун çине пăхса илчĕ те майĕпен çеç çапла каласа хучĕ:

— Петĕр, эсĕ наян ача. Эпĕ хушнине итлеместĕн. Паян та чечексене сапма ÿркентĕн,— терĕ. Унтан анне ман çине пăхрĕ:— Паян чи пысăк, чи тутлă панулмие Сантăр илме тивĕçлĕ,—терĕ. Анне мана, чăнах та, карçинккаран чи пысăк, чи тутлă панулми илсе пачĕ. Эпĕ ăна тав турăм.

Петĕр унталла-кунталла пăхкаласа илчĕ, юлашкинчен чăтаймарĕ, çапла каларĕ:

— Анне! Урăх ун пек тумастăп, эс мĕн хушнине яланах итлетĕп,— терĕ.

Петĕр хăйĕн йăнăшне ăнланни аннене килĕшрĕ пулас, вăл ăна та карçинккаран пысăк, тутлă панулми илсе тыттарчĕ.

## ШУРĂ ПАЛĂК

Пирĕн ял çав тери пысăк. Аякран пăхсан тĕлĕнсех каятăн: вăл хула пекех сарăлса кайнă. Ферма çурчĕсем, силос башнисем, ешĕл сад пахчисем таçтанах курăнса лараççĕ.

Тăван çĕршывшăн пынă вăрçăра нимĕç фашисчĕсене хирĕç паттăррăн çапăçса вилнĕ янташсене сума суса кă-

çал ял варрине палăк лартрĕç. Ăна питĕ çирĕп чултан, гранитран, тунă. Палăка уçнă ятпа митинг пулса иртрĕ. Унта таврари ялсенчен те çынсем нумай пухăнчĕç. Митинга ватă коммунист, граждан вăрçинче командир пулнă Антон Иванович Антонов уçрĕ. Вăл питĕ хĕрӳллĕ сăмах каларĕ.

— Эпир хамăр Тăван çĕршывпа унăн чысĕшĕн çапăçса вилнĕ паттăр çынсене нихçан та манас çук!— терĕ вăл.

Унтан сăмах ял Совет председательне Максим Федоровича пачĕç.

— Тăван çĕршывшăн, çутă пуласлăхшăн пуç хунă çынсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!— терĕ председатель.

Юлашкинчен вăл вăрçăра вилнĕ хамăр ял çыннисен ячĕсене вулама пуçларĕ.

Митинга пынисем кашни ята асăннă хыççăн пуçĕсене усса илеççĕ.

— Александр Ятманов!— терĕ Максим Федорович.

Петĕр мана айăкран кăлт чышрĕ.

— Пичче, председатель мĕншĕн сан ятна асăнчĕ вара?— ыйтрĕ вăл ман çине пăхса.

— Итлесе тăр, кайран каласа парăп,— чарчĕ ăна атте.

Ял Совет председателĕ хăйĕн сăмахне вĕçлерĕ.

Шкул оркестрĕ «Интернационал» кĕввине калама пуçларĕ. Ял çыннисем палăк çумне чечек çыххисем пыра-пыра хучĕç.

Митинг пĕтрĕ. Çынсем, пĕр-пĕринпе калаçса, килĕсене утрĕç.

Петĕр çул çинче аттерен каллех:

— Митингра Сантăр ятне мĕншĕн асăнчĕç-ха вара?— тесе ыйтрĕ.

Атте ăна йĕркипе каласа пачĕ.

— Ĕç çапла пулса иртрĕ,— терĕ вăл.— 1941 çулта пирĕн Тăван çĕршыв умне çав тери пысăк хăрушлăх килсе тухрĕ. Тăшман Мускавалла, аслă Атăл еннелле туртăнать. Пирĕн хуласемпе ялсене çунтарать, халăха çаратать, ача-пăчасене тăлăха тăратса хăварать... Совет

çыннисем пурте усал тăшмана хирĕç çапăçăва çĕкленчĕç. Çак йывăр кунсенче сирĕн асларăр — Александр Петрович Ятманов — паттăрсен вилĕмĕпе вилчĕ. Вăл вилни çинчен яла хыпар килнĕ кун Сантăр çуралчĕ. Эпир ăна асларăр ятне патăмăр, Александр Ятманов тесе çыртартăмăр. Паян та ял çыннисем сирĕн асларăра ырăпа асăнчĕç, ун ятне ĕмĕрлĕхех ылтăн сăрпа çырса хучĕç...

Атте пире тата тем каласшăнччĕ, анчах каламарĕ, унăн куçĕсем çеç салхуллăн пăхса илчĕç.

— Ну, ачамсем, эсир те асларăр пекех паттăр та хăюллă пулăр, нихçан та Ятмановсен ятне ан ярăр,— терĕ пире атте.

Кăнтăр енчен çуллахи ăшă çил вĕрсе иртрĕ. Шурă хурăн çулçисем чĕтренсе илчĕç. Вĕсем те, паттăрсен ятне асăнса, юрă юрланăн туйăнчĕç.

## КУЛЛЯ

Анне пире пахчана кишĕр çумлама илсе тухрĕ. Пахчара сывлăш ытарма çук лайăх, уçă — кăкăр тулли сывлатăн. Тĕрлĕ кайăк юрри, ирхи сывлăша чĕтрентерсе, инçе-инçе янăраса каять.

Çум çумланă вăхăтра кĕтмен çĕртен пире Петĕр:

— Пăхăр-ха, пăхăр! Мĕн мĕлтлетет унта!— терĕ.

Чăнах та, йăран хушшинче пĕр кăвакарчăн çӳлелле сике-сике илет.

Кайăк хăраса вĕçсе ан кайтăр тесе, Петĕрпе иксĕмĕр те ун патне майĕпен çеç йăпшăнса пытăмăр.

— Эй, ку алла вĕреннĕ кайăк пулас, пĕрре те хăрамасть,— терĕ Петĕр.

Анчах вăл калани тĕрĕсех пулмарĕ: кăвакарчăн, пире курсан, сасартăк шикленсе ӳкрĕ те сике-сике илчĕ, вĕçме хăтланса пăхрĕ...

— Мĕн пулнă ăна?— ыйтрăмăр эпир пĕр-пĕринчен.

Петĕр кайăка, ачашшăн тытса, çӳлелле çĕклерĕ. Кăвакарчăн çиçсе тăракан куçĕсемпе пирĕн çине пăха-пăха

илет. Унӑн хӑрах ҫуначӗ усӑннӑ, вӑл аманнӑ-мӗн, ҫавӑнпа вӗҫеймест. Мӗскӗн кӑвакарчӑна Петӗрпе иксӗмӗр те питӗ хӗрхентӗмӗр, ӑна киле илсе кайса сыватма шутларӑмӑр.

Пирӗн килте чӑрсӑр ула кушак пур. Вӑл пӳртре кӑвакарчӑн пуррине сиснӗ те ниҫта кайса кӗреймест, пӗр кӗтесрен тепӗр кӗтесе чупса ҫӳрет, пирӗн пата пырать, ик уран ҫӳлелле тӑрать. Эпир ӑна аманнӑ кайӑка тивме ирӗк памарӑмӑр: кӑвакарчӑна читлӗх туса патӑмӑр. Читлӗх ӑшне ҫӑкӑр татӑкӗсем хутӑмӑр, шыв лартрӑмӑр.

Эпир килте ҫук чухне кӑвакарчӑна асанне пӑхатчӗ.

Кӑвакарчӑн пурӑна киле пире хӑнӑхса ҫите пуҫларӗ, кашни кун «куль-куль-куль!» теме тытӑнчӗ. Ҫавӑнпа та эпир ӑна хӑйне те Кулля тесе чӗнме пуҫларӑмӑр. Кушак та Кулляпа килӗштерсе пурӑнма тытӑнчӗ. Вӑл яланах ун читлӗхӗ патне пырса ларатчӗ, кайӑк ҫине пӑха-пӑха илетчӗ.

Пӗр ирхине эпир кӑвакарчӑна читлӗхрен кӑлартӑмӑр. Вӑл ҫуначӗсене сулкаласа илчӗ те тӳрех асанне хулпуҫҫийӗ ҫине пырса ларчӗ. Хӑй, кӗтмен ҫӗртен «куль-куль» тесе, илемлӗн кӑвиклетсе илчӗ.

— Эсӗ, Кулля, ҫав тери ырӑ чунлӑ кайӑк,— терӗ ӑна асанне.

Пӗр ирхине эпӗ шкула кайма хатӗрлентӗм. Ҫав кун асанне пире ҫапла каларӗ:

— Ачасем, паянтан кӑвакарчӑна ирӗке кӑларса ярӑр. Халӗ унӑн ҫуначӗ юсаннӑ ӗнтӗ,— терӗ.

Эпир асанне шухӑшӗпе килӗшрӗмӗр.

— Ярас, ярас... Хӑйӗн тӑванӗсем патне кайтӑр,— терӗмӗр. Пирӗнпе пӗрле урама асанне те тухрӗ.

Петӗр кӑвакарчӑн ури вӗҫне хӗрлӗ лента ҫыхрӗ.

Эпӗ кӑвакарчӑна кӑмӑллӑн ачашласа илтӗм те вӗҫтерсе ятӑм.

Хамӑр пурте: «Чипер кай, ҫулу телейлӗ пултӑр!»— терӗмӗр.

Кӑвакарчӑн пирӗн пуҫ тӑрринче пӗр-икӗ хут ҫаврӑнса илсе ункӑ турӗ те шурӑ пӗлӗтсем айӗн аякка вӗҫсе кайрӗ. Каҫхине вӑл каллех пирӗн пата таврӑнчӗ.

# ПĚРРЕМĚШ УРОК

Петĕр паян ирех, шурăмпуç киличченех, вăранчĕ, васкаса тумланчĕ. Хăй ниçта кайса кĕреймерĕ: пӳртре, ват çын пек, каллĕ-маллĕ уткаласа çӳрерĕ, сак çинче выртакан сумкине темиçе хутчен те тыта-тыта пăхрĕ. Паян Петĕр шкула, пĕрремĕш класа каять. Анне ирхи апат хатĕрлерĕ. Эпир пурте сĕтел хушшине кĕрсе лартăмăр. Атте Петĕр çине пăхрĕ те:

— Мĕншĕн эсĕ нимĕн те çиместĕн?— тесе ыйтрĕ.

— Пĕрре те çиес килмест,— терĕ Петĕр, пуçне сулласа.

— Ун пек юрамасть. Эсĕ те малашне, пирĕн пекех, ĕçе кайма пуçлатăн. Асту, çимесен вăй пулмасть,— терĕ атте.

Петĕр пăртак чей ĕçкелерĕ те шкула тухса утрĕ. Унпа пĕрле анне те кайрĕ.

Шкул картишĕнче ачасем туллиех. Вĕсем пурте лайăх тумланнă, аллисене чечек çыххисем тытнă. Тăхăр сехет çитеспе ачасем классем тăрăх тăрса тухрĕç. Пĕрремĕш класа килнĕ ачасене чи мала тăратрĕç. Тӳперен кĕрхи хĕвел хăйĕн ылтăн пайăркисене çĕр çине сапалать.

— Ачасем!— терĕ шкул директорĕ Василий Михайлович Арсланов.— Сире çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă ятпа чун-чĕререн саламлатăп, вĕренӳре çитĕнӳсем тума ыр сунатăп...

Директорăн кашни сăмахне ачасем тимлĕн итлесе тăраççĕ.

Анне Петĕре пулас учительницине паллаштарчĕ.

— Эпĕ сирĕн ывăлăра лайăх пĕлетĕп. Вăл иртнĕ çулта пирĕн шкул ачисене тимĕр-тăмăр пухма пулăшрĕ. Ăна мухтаса шкулти стена хаçатĕнче те çырчĕç,— терĕ учительница.

Хăйне учительница çапла мухтанине илтсен, Петĕр вăтанчĕ. Ăна шкул ачисем пурте хăй çине пăхнăн туйăнчĕ.

Шăнкăрав сасси илемлĕн янăраса кайрĕ. Ачасем

классене кӗчӗҫ. Петӗр малти парта хушшине хӑйӗн тантӑшӗпе, Нинӑпа, пӗрле ларчӗ.

— Ну, ачасем, эпир те паян ӗҫе тытӑнатпӑр, вӗренме пуҫлатпӑр... Халӗ пӗр-пӗринпе паллашар. Эпӗ сирӗн учительница пулатӑп. Мана Людмила Михайловна тесе чӗнеҫҫӗ...

Ачасем ним чӗнмесӗр, шӑп лараҫҫӗ.

— Сиртен чылайӑшӗ вулама та, сӑвӑсем пӑхмасӑр калама та пӗлет пулӗ. Қам сӑвӑ калама пӗлет, алӑ ҫӗклӗр-ха,— терӗ Людмила Михайловна.

Ачасем капӑрах алӑ ҫӗклерӗҫ.

— Ну, Петӗр, ху пӗлекен сӑвва каласа пар-ха,— терӗ учительница.

Петӗр сӗтел патне тухрӗ те уҫӑ, ҫепӗҫ сасӑпа сӑвӑ калама пуҫларӗ:

Чӑн та чипер-чиперук
Пирӗн пӗчӗк Қӗтерук,
Қаять колхоз фермине
Пулӑшмашкӑн аннене.
Ферма тулли пӑрусем:
Хӑмӑррисем, улисем,
Чӑлтӑр! хушка пуҫлисем —
Қӗтерукӑн тусӗсем...

Ачасем пурте Петӗртен тӗлӗнсе лараҫҫӗ. Учительница вӗсем ҫине час-часах кӑмӑллӑн пӑхса илет.

Петӗр сӑвӑ каласа пӗтерчӗ.

— Маттур, пултаратӑн! Малалла та ҫапла ӗлкӗрсе пыр!— терӗ ӑна Людмила Михайловна.

## ПӖЧӖК ТИМУРОВЕЦ

Ӗнер эпӗ шкултан киле кая юлса таврӑнтӑм. Хор кружокӗ пулчӗ. Унта Октябрь уявӗнче юрламалли юрӑсене вӗрентӗмӗр.

Килте Петӗр пӗчченехчӗ. Вӑл аллине йӗппе ҫип илнӗ те хӗрлӗ хӑмач сатин ҫине тем тӗрлесе ларать.

Эпӗ унтан:

— Эсĕ мĕн тăватăн?— тесе ыйтрăм.

Петĕр ман çине пăхса илчĕ те:

— Анаткасри Темин мучи чирленĕ. Вăл хăй ватă. Килĕнче ĕçлекен урăх никам та çук. Паян эпир ун патне каятпăр. Арçын ачасем ăна вутă татса парас теççĕ. Хĕрачасем урай çума шутлаççĕ,— терĕ.

— Ку мĕн пулать тата?— ыйтрăм эпĕ Петĕртен, хĕрлĕ хăмач сатин çине пўрнепе кăтартса.

Петĕр мана хăй мĕн тĕрлени çинчен каласа пама çеç пуçланăччĕ, çав вăхăтра урамра ачасем кăшкăрашни илтĕнсе кайрĕ. Эпĕ вĕсем патне чупса тухрăм та:

— Мĕн пулнă тата? Мĕншĕн çав териех çуйăхатăр?— тесе ыйтрăм.

— Ав çўлелле, пĕлĕт çинелле пăх, кайăк хурсем кăнтăра каяççĕ!

Эпĕ пăхрăм та — пĕлĕтре пĕкĕ пек çавракарах ункăсем пуррине курах кайрăм.

Эпир пурте кайăк хурсене чылайччен, мĕн курми пуличчен, алă сулса ăсатса ятăмăр.

— Лайăх кайса килĕр. Пĕр-пĕринчен çухалса ан юлăр,— терĕмĕр.

Кайăк хурсем куçран çухалсан, эпĕ каллех пўрте кĕтĕм.

Петĕр тĕкĕр умĕнче юсанса тăрать. Вăл хайхи хăй тĕрлекен хĕрлĕ хăмач сатин татăкне сулахай алли çумне çыхса янă. Ун çинче симĕс пурçăн çиппе тĕрленĕ саспаллисем илемлĕн ялкăшса тăраççĕ.

— Çапла «ТК» тесе çырни мĕне пĕлтерет вара?— тесе ыйтрăм эпĕ унран.

— Тимур команди тени пулать...

— Эсĕ октябренок! Тимур командине пионерсене çеç илеççĕ,— терĕм эпĕ.

— Ман халех тимуровец пулас килет. Эпĕ пысăкланнă ĕнтĕ,— терĕ Петĕр.

Вăл мана Тимур командин ĕçĕсем çинчен йĕркипе кала-кала пачĕ.

— Тимуровецсем час-часах ĕçлеме пултарайман ватă çынсем патĕнче пулаççĕ. Вĕсене тĕрлĕ ĕçсем тума пу-

лăшаççĕ. Урамсене, çырма хĕррисене лартнă çамрăк йывăççене сыхлаççĕ,— тет вăл.

Эпĕ Петĕр сăмахне çав териех савăнса итлесе тăтăм: вăл тимуровец пулма ĕмĕтленнишĕн калама çук хĕпĕртерĕм.

## ÇЫРЛАНА КАЙСАН

Тул çутăлчĕ. Хĕвел те çӳле улăхрĕ. Эпир хамăр касри ачасемпе вăрмана çырлана кайма калаçса татăлтăмăр. Манпа пĕрле Петĕр те пырасшăн пулчĕ.

— Эпĕ сана илсе кайма пултаратăп, анчах çырла вырăнĕ инçе, ывăнатăн пулĕ,— терĕм ăна.

Петĕр, çакна илтсен, кăшт çеç йĕрсе ямарĕ:

— Çук, эпĕ юлмастăп, пыратăп...

— Аннерен ыйт, вăл мĕн калĕ,— терĕм вара эпĕ. Анне хирĕçлесе тăмарĕ:

— Кайăр, анчах астăвăр, йĕркеллĕ çӳрĕр,— поларĕ вăл.

Эпир хамăрăн пĕчĕк витресене илтĕмĕр те çырлана тухса утрăмăр. Çул çинче вара тăршшĕпех шăкăлтатса калаçса пытăмăр. Часах вăрмана та çитрĕмĕр. Инçе те кĕмерĕмĕр, çырла вăййине тупрăмăр. Татса та пĕтерес çук: пур çĕрте те хĕп-хĕрлĕ, тин çеç пиçнĕ хурăн çырлисем! Ачасем, çухалса каяс мар тесе, пĕр-пĕрне сас параççĕ. Час-часах «А-у! А-у!» тени аслă вăрман тăрăх инçене янăраса каять.

Эпĕ хам пăртак ывăннине туя пуçларăм, пĕр тĕмеске çумне ларма шутларăм. Анчах, унччен те пулмарĕ, çамрăк йывăççем хушшинчен темле кайăк пăрлатса тухрĕ те çӳлелле вĕçтерсе пачĕ. Эпĕ вăл вĕçсе тухнă тĕле пырса пăхрăм та курах кайрăм: пĕр вăрттăн вырăнта çак кайăкăн йăви пур, унтах унăн вĕçме пултарайман чĕпписем çăварĕсене кара-кара чĕвĕлтетсе лараççĕ.

Эпĕ ачасене хам пата пыма чĕнтĕм. Вĕсем пурте хăвăрт персе çитрĕç. Эпир кайăк йăвинчен йăлтах тĕлĕн-

се кайрăмăр, ăна тăмпа пĕр тикĕс, лайăх якатса тунă, вĕтĕ хĕлĕхсемпе çавăра-çавăра тухнă.

— Атьăр, чĕпписене илетпĕр,— терĕ çавăнтах пирĕн Петĕр.

— Çук, юрамасть. Мĕншĕн вĕсене амăшĕнчен уйăрса хур кăтартас?— тетĕп эпĕ.

Йăва патĕнче айкашкаласа тăнипе эпир асăрхаман та: пирĕн пата пĕр кайăк вĕçсе пырать те вĕçсе каять, вĕçсе пырать те вĕçсе каять...

— Куратăр-и, ачасем, вăл çак чĕпĕсен амăшĕ ĕнтĕ,— тетĕп эпĕ.—Вăл пире ман чĕппĕмсене ан тивсемĕр, тăлăха ан хăварсамăр тесе тархаслать пулĕ,— тетĕп каллех хам.

Малтан çырла пухса, кайран кайăк чĕпписемпе киленсе тăнине пула хĕвел каç еннелле сулăннине эпир сисмен те. Киле каясси çинчен сăмах тапратнăччĕ çеç, çав вăхăтра анăçран хура çумăр пĕлĕчĕсем çĕкленчĕç, çывăхрах аслати авăтни илтĕнсе кайрĕ. Петĕр Сăрнай ĕшнинчен ман паталла чупать, хăй: «Çумăр, тăвăл килет!»— тесе кăшкăрать. Вăл çавăнтах пĕр лапсăркка юман айне кĕрсе те тăчĕ.

— Аслати авăтнă чух йывăç айне тăма юрамасть! Аçа çапма пултарать!— тесе кăшкăратăп эпĕ.

Петĕр ман сăмаха итлерĕ: юман çумĕнчен уçă вырăналла чупса тухрĕ. Унччен те пулмарĕ, аслати çав тери хăрушшăн кĕмсĕртетсе кайрĕ, пирĕн пуç çинчех вут-çулăм хыттăн çатлатса илчĕ. Эпир тĕлĕнсех кайрăмăр: хайхи пысăк, лăпсăркка юман икĕ пая çурăлнă аннă.

— Ав, куратăр-и, юмана аçа çапрĕ!— тетĕп эпĕ.

Петĕр ниçта кайса кĕреймест: чĕтрет, ман çума йăпшăнать.

— Питех ан хăра... Юман çумĕнчен тарса ĕлкĕртĕн, чĕрĕ юлтăн,— тесе йăпататăп хам ăна.

...Çумăрлă тăвăл иртсе кайсанах, эпир пурте килелле чупрăмăр. Киле çитсен, вăрманта мĕн-мĕн курнине аттепе аннене кала-кала патăмăр. Вĕсем пирĕн сăмаха çав тери тĕлĕнсе итлесе ларчĕç.

Хĕвел анчĕ. Эпир аттепе аннене тата Илемпие çырлапа хăналарăмăр, хамăр та тăраниччченех çирĕмĕр.

## ПЕТĔР АЙĂПĔ

Пĕр ирхине пирĕн анне магазина кайрĕ. Эпĕ Петĕр шăллăмпа киле юлтăм. Петĕр, анне кайсанах, тенкел çине улăхса шкапа уçрĕ. Унччен те пулмарĕ, шкап патĕнчен чăнкăрр! тунă сасă илтĕнсе кайрĕ.

Эпĕ çавăнтах Петĕр патне чупса пытăм. Урай тулли кĕленче ванчăкĕ выртать. Петĕр шкапри графина ӳкернĕ иккен.

— Ну, мĕн турăн ĕнтĕ?— терĕм эпĕ, ним калама аптраса.

Анне киле часах таврăнчĕ. Пӳрте кĕнĕ-кĕменех вăл урайĕнчи кĕленче ванчăкĕсене курчĕ.

— Кам çĕмĕрчĕ?— ыйтрĕ анне.

Эпĕ Петĕр хăйĕн айăпне йышăнасса кĕтнĕччĕ, анчах кĕтни ахалех пулчĕ. Петĕр ман еннелле çаврăнчĕ те:

— Сантăр çĕмĕрчĕ,— тесе хучĕ.

Вăл çапла суйнăшăн эпĕ питĕ тарăхрăм, йĕрес патнех çитрĕм.

Каçхине анне пире пограничниксем çинчен çырнă кĕнеке вуласа пачĕ, вăл пире питĕ килĕшрĕ.

— Ӳссен пурпĕрех пограничник пулатăп,— терĕм эпĕ.

— Эпĕ те пограничник пулатăп!— хушса хучĕ Петĕр.— Манăн йытă та, атте илсе панă пăшал та пур...

Анне пирĕн çине пăхрĕ те майĕпен çеç çапла каларĕ:

— Эсир пĕри те пограничник пулма пултараймастăр. Унта суякан çынсене илмеççĕ.

— Эпĕ нихçан та суйман,— терĕм эпĕ.

— Эпĕ те,— хушса хучĕ Петĕр.

Анне пĕр çĕре пухса хунă кĕленче ванчăкĕсем çине кăтартрĕ те:

— Тĕрĕссипе калăр-ха, графина кам çĕмĕрчĕ?— тесе ыйтрĕ.

Петĕр кусĕсене мăч-мăч хупкаласа илчĕ.

— Эпĕ,— терĕ вăл, пуçне усса.

Анне йăл кулса ячĕ те Петĕре лăплантарчĕ:

— Ну, ан хумхан. Эпĕ сире вăрçасшăнччĕ. Эсĕ хăвăн айăпна йышăнатăн, çавăнпа çиллĕм те иртсе кайрĕ. Эсир иксĕр те пограничниксем пулма пултаратăр, анчах суйма çеç ан вĕренĕр,— терĕ вăл.

## СЕХЕТ

Пирĕн аттен кĕсъене чиксе çӳремелли сехет пур. Атте ăна час-часах кăларса пăхать, вăхăт тĕрĕслет.

Пĕр ирхине Петĕр атте патне пычĕ те:

— Мана та сехет илсе пар-ха, атте,— тесе йăлăна пуçларĕ.

— Эсĕ, пĕчĕкскер, сехетпе мĕн тăватăн?— ыйтрĕ унран атте.

— Вăхăт пĕлме!

— Юрать, шухăшлакаласа пăхам-ха, мĕнле пулĕ утта,— терĕ атте.

...Çăсхине эпир пурте ĕçрен таврăнтăмăр. Петĕр те таçтан выляса килчĕ. Пӳрте кĕнĕ-кĕменех вăл:

— Тупрăм! Тупрăм! Сехет! Сехет!—тесе кăшкăрса ячĕ.

Эпир шалтах тĕлĕнсе кайрăмăр.

— Мĕнле сехет? Çам пачĕ?— ыйтатпăр унран.

Петĕр кĕсйинчен кĕмĕл вăчăраллă сехет кăларчĕ те:

— Акă вăл. Çурăр,— терĕ.

Эпир ăна хупăрласа илтĕмĕр, ăçтан сехет тупнине пĕлесшĕн пултăмăр. Вăл ăна ачасемпе çаран çине чечек татма кайсан тупнă-мĕн.

— Эй, ачсемĕр, ку хамăр касра пурăнакан Максăм пиччӳн сехечĕ-çке,— терĕ атте. Вăл çавăнтах ман еннелле çаврăнчĕ те:— Вĕçтер. Максăм пиччӳ халех кунта, хамăр пата килтĕр,— терĕ.

Максăм пичче часах персе те çитрĕ. Вăл паян иртенпех колхоз çаранĕ çинче утă çулнă иккен. Çăнтăрла

каннă вăхăтра сехетне йывăç турачĕ çине çакса хунă та мансах кайнă.

— Шырарăм-шырарăм, тупаймарăм, хама ĕненмесĕр, киле хăварман-ши тесе, ĕçе пăрахсах таврăнтăм,— терĕ вăл.

Макçăм пичче тата тем каласшăн пулчĕ, анчах ăна Петĕр пӳлсе хучĕ.

— Эпĕ çаран çинче чечек... Сехет тупрăм!— тесе кăшкăрса ячĕ. Çавăнтах вăл кĕсйинчен кĕмĕл вăчăраллă сехет кăларчĕ те Макçăм пичче патне пычĕ.— Акă вăл, илĕр,— терĕ.

Макçăм пичче хăй сехетне курсан хĕпĕртесе кайрĕ, вăл Петĕре ыталаса илчĕ те:

— Эсĕ тĕлĕнмелле лайăх, маттур ача иккен,— терĕ.

Тепĕр кунне Макçăм пичче пирĕн пата вылямалли сехет илсе пычĕ.

— Кăна ĕнтĕ эпĕ хамăн юратнă çыннăма, Петĕре, парнелетĕп,— терĕ.

Вăл Петĕре темиçе хутчен çурăмĕнчен лăпкаса илчĕ те унăн сулахай аллине сехет çыхса ячĕ. Халĕ ĕнтĕ пирĕн Петĕрĕн те сехет пур.

## ПИРĔН ТУСĂМĂР ОЛЕГ

Çуллахи пĕр ăшă кун пирĕн яла хăнасем, Украина ачисем, килчĕç. Эпир вĕсене чун-чĕререн хапăл туса кĕтсе илтĕмĕр. Пурне те чечек çыххи, тĕрлĕ парне патăмăр. Çак кун эпĕ Олег ятлă Украина ачипе паллашрăм. Вăл мана кăкăр çине çакса çӳремелли значок парнелерĕ. Ун çине «Мир! Туслăх!» тесе çырнă. Эпĕ вара асăнмалăх ăна чăваш юррисен кĕнекине патăм. Пирĕн хушăмăрта туслă çыхăну пуçланса кайрĕ. Эпир пĕрпĕрин патне çырусем çӳретме тытăнтăмăр.

Çапла пĕр каçхине эпĕ хам тусăм Олег патне çыру çырма лартăм. Ман пата Петĕр шăллăм пычĕ те:

— Эсĕ, пиччем, мĕн тăватăн?— тесе ыйтрĕ.

— Çыру çыратăп-ха,— терĕм эпĕ.

— Ҫам патне вара?

— Украинăри Олег тусăм патне,— ăнлантартăм ăна.

Петĕр урăх пĕр сăмах та каламарĕ. Вăл хутпа кăранташ илчĕ те ман ҫума сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ.

— Эпĕ те Олег патне ҫыру ҫыратăп,— терĕ вăл.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, Петĕр хăй умне сарса хунă хут листине ҫырса та тултарчĕ.

— Ну, пичче, халĕ эпĕ мĕн ҫырнине вула ĕнтĕ,— терĕ вăл.

Эпĕ ун ҫырăвне илтĕм те тĕлĕнсех кайрăм: унта мĕнмĕн кăна тĕрлесе пĕтермен-ши!

— Ҫу вара санăн мĕнле кайăк?— ыйтрăм унран.

— Вăл ман салама Украинăна, Олег патне, илсе каякан кăвик-кăвакарчăн,— терĕ шăллăм.

— Ҫу мĕнле ялав тата?— каллех ыйтрăм эпĕ.

— Вăл — пирĕн туслăх ялавĕ,—калать Петĕр.

Манăн пĕчĕк шăллăм ҫакăн пек ăслă ҫыру ҫырнишĕн эпĕ хĕпĕртесех кайрăм.

— Ну, халĕ эсĕ хăвăн ҫырăвна вуласа пар ĕнтĕ,— терĕ мана Петĕр.

Эпĕ хам умра выртакан хут листине илтĕм те вулама пуҫларăм:

«Хаклă тусăм Олег!

Сана Ҫĕнĕ ҫул ячĕпе чăваш ачисенчен салам яратпăр!

Украинăри тусăмăрсене лайăх вĕренме ыр сунатпăр! Пурте ҫирĕп сывлăхлă пулăр!»

Эпĕ мĕн вуланине Петĕр каҫса кайсах итлесе ларчĕ. Вăл ман ҫине темиҫе хутчен те савăнăҫлăн пăха-пăха илчĕ.

Ирхине эпир хамăр ҫырусене Украинăна, сывăх тусăмăр Олег патне, ятăмăр.

## ĔНЕ ПĂРУЛАНĂ

Виҫҫĕмĕш ҫул ĕнтĕ пирĕн анне фермăра ĕнесем пăхать. Эпир Петĕрпе кашни кун ун патне каятпăр, аннене пулăшатпăр. Пĕр ирхине анне пире:

— Паян ёне кётёвне вӑрмана илсе каятпӑр,— терӗ.

Эпир унран хӑйпе пӗрле пире тата Хураҫка йытта илсе кайма ыйтрӑмӑр.

Анне хирӗҫ пулмарӗ.

Вӑрманта сывлӑш уҫӑ. Пур ҫӗрте те кайӑксем юрӑ шӑрантараҫҫӗ. Хӗвел каҫ енне сулӑнсан, эпир Петӗрпе пӗр уҫланкӑна ҫырла татма кӗтӗмӗр. Анчах унта нумай ҫӳреймерӗмӗр. Кӗтмен ҫӗртен анне пире:

— А-у! А-у! Кунта килӗр!— тесе кӑшкӑрчӗ.

Аннене тем пулман-ши тесе, эпир часах ун патне чупса ҫитрӗмӗр.

— Ула ёнепе Хураҫка ҫухалнӑ. Шырарӑм-шырарӑм, тупаймарӑм,—терӗ анне. Хӑй питӗ хӑраса ӳкнӗ вара.

— Ҫук, капла хӑраса тӑнипе ӗҫ тухмӗ. Эсӗ, Петӗр, кунта юл. Эпир Сантӑрпа иксӗмӗр ёнепе Хураҫкана шырама кайӑпӑр,— терӗ вӑл.

Йывӑҫсем хушшипе сулхӑн ҫил вӗрме тытӑнчӗ. Эпир аннепе вӗтлӗхсене кӗре-кӗре тухрӑмӑр, тарӑн ҫырмана анса пӑхрӑмӑр, анчах ёнепе Хураҫка ниҫта та ҫук.

Аннепе иксӗмӗр те хуйха ӳкрӗмӗр.

Анне пире хӗвел анса лариччен ёне кётёвне яла антарма хушрӗ.

— Эпӗ ҫухалнӑ ёнене шырама юлам,— терӗ вӑл.

Эпир ёнесене вӑрмантан хӑваласа тухрӑмӑр.

Унччен те пулмарӗ, Хураҫка вӗрни илтӗнсе кайрӗ.

— Хураҫка! Хураҫка!— кӑшкӑрса ячӗ Петӗр.

Хураҫка пирӗн пата чупса пычӗ. Петӗрпе иксӗмӗре сӗртӗнкелесе илчӗ те ҫавӑнтах вӑрмана каялла чупса кӗрсе кайрӗ. Эпир ӑна вӑрҫма пуҫларӑмӑр:

— Аташса ан ҫӳре, хӗвел аниччен киле ҫитмелле!— терӗмӗр.

Хураҫка каллех пирӗн пата сиксе тухрӗ, пӗр-икӗ хутчен хам-хам! тесе вӗрсе илчӗ.

— Сана нимӗн те мар. Пирӗн хуйхӑ: ула ёне ҫухалнӑ,— терӗ ӑна Петӗр.

Хураҫка Петӗр каланине хӑлхана та чикмерӗ, каллех вӑрмана кӗрсе кайрӗ. Мӗне пӗлтерет-ха ку?.. Эпир Хураҫка хыҫҫӑн чупрӑмӑр. Хураҫка пӗр лапсӑркка ху-

рӑн патне ҫитрӗ те ун тавра вӗре-вӗре ҫаврӑна пуҫларӗ. Ак тамаша, ҫак хурӑн ҫумӗнче пирӗн ҫухалнӑ ӗне тӑра парать. Унччен те пулмарӗ, пирӗн Петӗр: «Пӑру! Пӑру!»— тесе кӑшкӑрса ячӗ. Чӑнах та, пӗр тунката ҫумӗнче хушка пуҫлӑ хура пӑру выртса парать. Ӑна ӗне ҫула-ҫула типӗтет.

Эпӗ чӑтаймарӑм, савӑннипе:

—Пӑру! Пӑру! Ула ӗне пӑруланӑ!— тесе кӑшкӑрса анне патне чупрӑм.

Анне эпир кӑшкӑрнине илтнӗ-мӗн. Вӑл хӑй те пирӗн пата васкать. Эпир ӗнесене киле хӑваласа килтӗмӗр. Анне пирӗн хыҫран ула ӗнен пӑрушне йӑтса таврӑнчӗ. Фермӑна ҫитсенех, эпир пӑрӑва ят патӑмӑр, ӑна Сатур тесе чӗнме пуҫларӑмӑр.

## АШКӐНЧӐК

Эпир пурӑнакан урама ҫуллахи вӑхӑтра яланах шыв сапса тӑраҫҫӗ. Шыв сапнӑ хыҫҫӑн сывлӑш уҫӑлать, тусан пусӑрӑнса юлать.

Ҫапла пӗр шӑрӑх, хӗвеллӗ кун урампа автомашина шыв сапса хӑпарать. Вӑл сирпӗтекен шыв ярӑмӗсем симӗсӗн-кӑвакӑн курӑнса каяҫҫӗ. Ытарма ҫук илемлӗ!

Автомашина умӗнче ача-пӑча чупса пырать. Хӑйсем пурте йӗп-йӗпе пулнӑ.

Унччен те пулмарӗ, пӗр ача кӑшкӑрни илтӗнсе кайрӗ. Машина ҫавӑнтах тӑп чарӑнчӗ.

Пӑхатӑп та: ҫул варринче пирӗн кӳршӗ ачи Тимуш выртать. Вӑл, машина умӗнче сиккелесе пыраканскер, такӑнса ӳкнӗ, тӑнӑ чухне пӗр юпа ҫумне пырса ҫапӑннӑ иккен.

Шофер кабинӑран сиксе тухрӗ, Тимуш патне чупса пычӗ. Вӑл ӑна майӗпен йӑтса тӑратрӗ те ҫапла каларӗ:

— Ун пек юрамасть! Атӑл хӗрринче пӗр вырӑн пур, шыва кӗме ҫавӑнта каяс пулать,— терӗ.

Автомашина малалла кайрӗ.

Тимуш, вӑтанса, пуҫне чиксе юлчӗ.

# ЙЫВĂРЛĂХ КИЛСЕН

Пирĕн ĕне хушка пуçлă ула пăру туса пачĕ. Пăрушĕ вара питех те сĕкме юрататчĕ.

Пĕррехинче анне çырма хĕррине кĕпе çума анчĕ. Хăйпе пĕрле вăл пире те илсе кайрĕ. Эпĕ, пулă тытма тесе, вăлта илтĕм.

Çырма хĕррине çитсен, анне кĕпе чўхеме пуçларĕ. Петĕр йывăççем хушшинчи çерем çине чечек татма юлчĕ.

Эпĕ вăлтана шыва ятăм та ларатăп. Нумаях та вăхăт иртмерĕ, вăлтана пулă йĕкĕлтеме тытăнчĕ. Эпĕ хам ăшăмра пулла: «Ан йĕкĕлте, манран пурпĕрех хăтăлаймастăн»,— тетĕп. Çапла шухăшласа ларнă çĕртех ман вăлтана пулă сĕтĕрсе кĕме пуçларĕ. Анчах унччен те пулмарĕ:

— Анне, пăру сĕкет!— тенĕ сасă илтĕнсе кайрĕ.

Эпĕ çаврăнса пăхрăм та курах кайрăм: пĕчĕк Петĕр умĕнче пирĕн сĕкекен пăру тăра парать.

Анне пăрăва:

— Қай унтан, кай! Ан ашкăнса çўре!— тесе кăшкăрать.

Петĕртен инçех те мар кўршĕ ачи Тимук кăвакалсем хăваласа пырать. Вăл Петĕр патне пăру сĕкесшĕн хăмсарса пынине курнă та аллине çапса ахăлтатса кулать.

Эпĕ ăна:

— Пăрăва хăвала! Петĕре ан сĕктĕр!— тесе кăшкăратăп.

Тимук ман сăмаха хăлхана та чикмерĕ. Вăл каялла çаврăнчĕ те çерем çинчи пĕр хурăн айне, сулхăна, кайса выртрĕ.

Эпĕ хăвăртрах Петĕр патне чупса пытăм та пăрăва хăвалама пуçларăм:

— Ах, усал, ялан пĕчĕк ачасене сĕкесшĕн çўретĕн!— терĕм ăна. Унтан Петĕре çавăтрăм та хампа пĕрле çырма хĕррине пулă тытма илсе антăм. Эпĕ пăру

хăваласа çӳренĕ вăхăтра пулăсем вăлтари ăмана йăл-тах çисе кайнă-мĕн.

— Питех ан ашкăнăр. Манăн ăман тата пур,— терĕм те эпĕ вăлтана, ăман тирсе, шыва ятăм.

Ак тамаша, вăлтана янă-яманах пулă йĕкĕлтеме пуçларĕ. Анчах хальхинче те ăна туртса кăларма май килмерĕ.

— Сантăр! Сантăр! Ай-ай!— тесе кăшкăрнă сасă хăлхана пырса кĕчĕ. Çаврăнса пăхрăм та çырма хĕррин-че Тимук путса ларнине курах кайрăм.

Эпир Петĕрпе иксĕмĕр те ун патне чупса пытăмăр, ăна иккĕн ик аллинчен тытса туртса кăлартăмăр.

Тимук куçĕнчен куççуль пĕрчисем юха-юха анчĕç. Хăй пирĕн çине айăплăн пăха-пăха илет, паçăр Петĕре çăлманшăн ӳкĕнет.

## АМАНТНĂ ХУРĂНСЕМ

Пирĕн пӳрт умĕнче виçĕ хурăн пур. Вĕсене атте хăй çамрăк чухне лартнă пулнă. Çуркунне çитсен, хурăнсем çулçă сараççĕ, вара пĕтĕм тавралăха илем кӳрсе ла-раççĕ. Вĕсен тураттисем çинче кайăксем кунĕн-çĕрĕн селĕм юрăсем шăрантараççĕ. Пĕррехинче эпĕ çак кăтра хурăнсене сăнасарах пăхрăм та тĕлĕнсех кайрăм: вĕсен яштака шурă вуллисем хĕреле-хĕреле кайнă. Эпĕ ça-вăнтах пӳрте, атте патне, чупса кĕтĕм. Ăна хурăнсем хĕрелни çинчен каласа патăм.

— Тĕрĕслесе пăхас, мĕн пулнă вара вĕсене?— терĕ атте.

Эпир урама тухрăмăр. Атте хурăнсене пăхса çав-рăнчĕ те:

— Ну, ачамсем, тĕрĕсне калăр: хурăнсене кам ка-са-каса тухнă?— тесе ыйтрĕ.

Эпĕ Петĕр шăллăм çине пăхса илтĕм. Вăл, пуçне усса тăракансккер, пĕр-икĕ утăм каялла чакрĕ те:

— Эпĕ вĕсене касман, шăтарса шывне çеç ĕçрĕм,— терĕ.

Атте Петĕре хăй патне чĕнсе илчĕ.

— Петĕр, халĕ аçу мĕн каланине итле ĕнтĕ,— терĕ вăл.— Эсĕ хурăнсене йывăр амантнă. Куратăн-и, вĕсем пурте хурланса макăраççĕ. Акă, эсĕ шăтарнă вырăнсенчен вĕсен куççулĕ сăрхăнса тухать...

Петĕр атте умĕнче ним чĕнмесĕр тăрать. Атте ăна çаплах ăса вĕрентет. Юлашкинчен Петĕр чăтаймарĕ:

— Қаçар ĕнтĕ, атте. Эпĕ хурăнсем те çынсем пекех йĕме пултарнине халиччен пĕлмен. Малашне вĕсене нихăçан та тивместĕп,— терĕ.

Атте хушнипе эпир хурăнсен шăтарнă вырăнĕсене шурă тăмпа сĕре-сĕре тухрăмăр.

## КУКУРУЗА ХИРĔНЧЕ

Пирĕн колхоз кашни çулах хире кукуруза нумай акса хăварать.

— Қукуруза вăл — питĕ усăллă япала. Ăна пур выльăх та юратса çиет,— тет яланах пире атте.

Пĕр-икĕ кун каялла кукуруза акса таврăнсан, вăл пире хăй патне чĕнсе илчĕ те çапла каларĕ:

— Хирте кураксем нумай. Вĕсенчен кукурузăна сыхлас пулать. Çак ĕçе колхоз правленийĕ шкул ачисене хушма шутлать,— терĕ.

Шкул ачисене тесен, эпĕ савăнсах кайрăм. Хам ăшăмра: «Пире те çакăн пек пысăк ĕç шанма пултараççĕши?»— тесе шухăшласа илтĕм.

— Қукурузăна сыхлама манăн та каясчĕ,— терĕм эпĕ аттене.

— Питĕ аван. Қолхоз председателĕ Василий Васильевич шăпах сана çак ĕçе ертсе пыма ыйтасшăнччĕ,— терĕ атте.

Петĕр, эпир калаçнине итлесе тăраканскер, пирĕн çинелле пăхрĕ те:

— Эпĕ те Сантăрпа кукурузăна сыхлама çӳретĕп,— терĕ.

Тепӗр кунне эпӗ ирех хампа пӗрле вӗренекен ачасем патне кайрӑм, вӗсене кукуруза хирне тухма чӗнсе ҫӳрерӗм.

...Кукуруза акнӑ уйра, чӑнах та, кураксем туллиех. Хӑйсем час-часах пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна вӗҫсе кайса ларaҫҫӗ, ҫӗре чава-чава кукуруза пӗрчисене шыраҫҫӗ.

Эпир малтан ним тума пӗлмесӗр аптраса тӑтӑмӑр. Хамӑр «кӑшша! кӑшша!» тесе кӑшкӑркаласа та пӑхрӑмӑр. Анчах мӗн тӑвас тетӗн! Тутлӑ апат тупнӑ кураксем кукуруза уйӗн тепӗр хӗррине вӗҫсе кайрӗҫ те каллех чакаланма пуҫларӗҫ.

— Ха, татах анса ларчӗҫ. Вӗсем пиртен куҫ умӗнчех кулаҫҫӗ-ҫке!— терӗҫ ачасем.

— Мӗн тумалла? Кукурузӑна мӗнле ҫӑлса хӑвармалла?— ыйтатпӑр хамӑр пӗр-пӗринчен. Шӑпах ҫав вӑхӑтра пирӗн пата колхоз председателӗ Василий Васильевич персе ҫитрӗ. Вӑл ачасене сывлӑх сунчӗ те:

— Эсир хире мӗн ӗҫлеме тухнӑ тата?— тесе ыйтрӗ.

— Кукурузӑна сыхлама!— терӗмӗр эпир.

Ҫапла калани Василий Васильевич кӑмӑлне кайрӗ пулас. Вӑл пирӗн шухӑша ырларӗ:

— Маттур, ачасем! Кукурузӑн пӗр пӗрчине те ҫухатмалла мар. Вӑл — пирӗн пуянлӑх, сӗт-ҫу, аш-какай,— терӗ.

Эпир кукуруза уйне катемписем, ҫилпе авӑракан пӗчӗк армансем тӑва-тӑва лартрӑмӑр, хут ҫӗлен пек хӳреллӗ, вӗлтӗр-вӗлтӗр вӗҫсе тӑракан япаласем туса, шалчасем ҫине ҫака-ҫака ятӑмӑр.

— Ҫитет! Кураксене текех иртӗхме парас мар!— терӗмӗр хамӑр.

Хир хуралҫи Макар мучи те пире:

— Тӗрӗс калатӑр, ачасем, кураксене кукуруза пуссинчен тасатмалла!— терӗ.

Вӑл ҫавӑнтах хӑй аллинчи пӑшалӗпе кураксем еннелле тӗллерӗ. Унччен те пулмарӗ, пӑшал сасси кӗрлесе те кайрӗ. Эпир пурте кураксене хӑвалама пуҫларӑмӑр. Пӗтӗм кукуруза уйӗ янӑраса тӑрать.

Кураксем пире хирĕç тăма хал çитереймерĕç. Вĕсем ушкăнăн-ушкăнăн аяккалла вĕçе-вĕçе кайрĕç.

Пĕр-икĕ эрнерен пирĕн кукуруза капăрах шăтса тухрĕ. Унăн сип-симĕс парка калчисем илемлĕн курăнса ларакан пулчĕç.

## КОЛХОЗ ПАРНИ

Çурхи ĕçсем пĕтсен, кашни çулах пирĕн ялта юрă уявĕ пулса иртет. Унта кӳршĕри колхозсенчен те хăнасем нумай килеççĕ. Çак кун иртен пуçласа мĕн каçченех сăвă-юрă янăраса тăрать. Пĕтĕм халăх савăнать. Кăçалхи юрă уявĕ вара нихçан та ман асăмран тухас çук.

Ĕç çапла пулса иртрĕ.

...Çуллахи ăшă кун. Тӳперен хĕвел савса пăхать. Вăрман хĕрринче халăх туллиех. Хуларан килнĕ оркестр марш калать. Пире атте хăй патне чĕнсе илчĕ те:

— Ачамсем, таçта кайса ан çухалăр, часах уяв пуçланать,— терĕ.

Чăнах та, нумай та вăхăт иртмерĕ, трибуна çине хамăр ялти ятлă çынсем, кӳршĕри колхозсенчен килнĕ хăнасем хăпарса тăчĕç. Уяв пуçланчĕ. Чи малтан пирĕн «Хĕрлĕ çăлтăр» колхоз председательне Василий Васильевич Алмазова сăмах пачĕç. Вăл уява пухăннă çынсене саламларĕ, уй-хир паттăрĕсене сывлăх сунчĕ. Василий Васильевич сăмах каланă чухне çынсем темиçе хутчен те алă çупса илчĕç. Председатель юлашкинчен колхоз правленийĕ ячĕпе çураки ĕçĕсенче мала тухнă çынсене парнесем пама пуçларĕ. Трибуна умне уй-хир паттăрĕсем пĕрин хыççăн тепри тухаççĕ. Унччен те пулмарĕ, Василий Васильевич:

— Ятманов Сантăра кукуруза уйне кураксенчен лайăх сыхланăшăн парне — алла çыхмалли сехет!— терĕ.

Ман ята асăнсан, уява пынисем тăваллăн алă çупса ячĕç. Эпĕ нимĕн тума та пĕлместĕп, савăннипе вырăнтан та хускалаймастăп.

— Сантăр, трибуна патнелле ирт, унта сана кĕтеç-çĕ,— терĕ мана атте.

Эпĕ васкаса малалла утса кайрăм, унтан трибуна çине улăхса тăтăм. Мана Василий Васильевич çӳлелле çĕклерĕ те мĕнпур халăх умĕнче ыталаса чуптурĕ. Қаллех алă çупни кĕрлесе кайрĕ...

Тепĕр кунне ирех пирĕн пата Василий Васильевич пычĕ. Вăл аллине хаçат тытнă.

— Сантăр, эпĕ сирĕн пата çĕнĕ хыпарпа килтĕм. Акă кур: сан сăнна хаçатра пичетленĕ,— терĕ вăл савăнса.

Эпĕ тĕлĕнсех кайрăм. Чăнах та, «Çамрăк коммунист» хаçатăн малтанхи страницинчех ман сăнăм пур. Ун тăррине пысăк саспаллисемпе «Сантăр Ятманов пек ĕçчен ачасене чыс та мухтав!» тесе çырнă.

Эпĕ хĕпĕртенипе Василий Васильевича çапла каларăм: «Председатель юлташ, эпĕ малашне те ĕçчен, маттур пулма сăмах паратăп!»— терĕм.

## АПЕЛЬСИН

Иртнĕ çул пирĕнпе кӳршĕллĕ пурăнакан Антун мучин Джульбарс ятлă йытти виçĕ çура туса пачĕ. Джульбарс вăйлă, ăслă йытă. Эпир унтан пурте тĕлĕнеттĕмĕр. Тĕлĕнмесĕр, ара! Пĕрре çапла Антун мучи хăйĕн картузне пахча вĕçĕнчи хурлăхан тĕмĕсем хушшине пытарса хучĕ те:

— Ну, Джульбарс, манăн картуз çухалчĕ, тупса пар!— терĕ.

Джульбарс çавăнтах хĕрсе кайрĕ: каллĕ-маллĕ чупкаласа çӳреме пуçларĕ, çине-çинех хам-хам! тесе вĕркелесе илчĕ. Нумай та вăхăт иртмерĕ, çак ăслă, шăрша лайăх туякан йытă картуза йăтса та килчĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ, Антун мучи унăн пĕр çăварне пире парсан, эпир пурте савăнтăмăр. Петĕрпе иксĕмĕр ун валли ятарласах пĕчĕк пӳрт турăмăр. Йытă çурине ят патăмăр, ăна Хураçка тесе чĕнме пуçларăмăр. Пирĕн Хураçка хă-

вăрт ӳсме тытăнчĕ, часах ачасемпе туслашса кайрĕ. Малтанах хамăрăн хăмăр кушакпа кăштах ҫапăҫкалатчĕ, пĕр-икĕ эрне иртсен вара унпа та килĕштерсе пурăнма тытăнчĕ. Хăй вăл апата тиркеместчĕ, мĕн паран, ҫавна ҫиетчĕ. Пурăна киле йытă ҫури аттепе пĕрле сунара ҫӳреме те хăнăхса ҫитрĕ. Ăна эпир пурте юрататтăмăр. Анчах пĕррехинче Хураҫкана ним сăлтавсăрах айăпа кĕртрĕмĕр. Ёҫĕ ҫапла пулса иртрĕ...

Пĕр шăматкун пирĕн анне магазинтан икĕ килограмм апельсин илсе килчĕ. Апельсинĕсем хĕрлĕрех сарă тĕслĕ, ырă шăршăллă, шултра. Анне вĕсене вĕри шывпа ҫурĕ те пире уйăрса пачĕ.

— Ку вара аҫу валли пултăр,— терĕ вăл, пĕр апельсинне сĕтел ҫине хурса.

Эпир хамăра панă апельсинсене ҫиме пуҫларăмăр.

— Эх, тутлă та-ҫке!— терĕ пирĕн пĕчĕк йăмăкăмăр Илемпи. Хăйĕн пайне вара вăл пуринчен малтан ҫисе ячĕ.

Эпир Петĕрпе иксĕмĕр ҫырма хĕррине пулă тытма чупрăмăр, анне колхоза ĕҫлеме кайрĕ. Илемпи киле юлчĕ.

— Манăн Хураҫкапа выляс килет,— терĕ вăл.

Эпир ҫырма хĕрринче чылаях лармарăмăр. Пирĕн телее, вăлтана пулă нумай ҫакланчĕ. Кăларса ĕлкĕрме те ҫук. Хамăр пĕчĕк чĕрессене партас, ырашпăтри пулăсемпе тултартăмăр та килелле савăнса утрăмăр. Киле ҫитсен тĕлĕнсех кайрăмăр: сĕтел ҫине хурса хăварнă апельсин ҫухалнă. Мĕнле кăна шырарăмăр пулĕ, ниҫта та ҫук! Кĕтмен ҫĕртен курах кайрăмăр: апельсинăн хĕрлĕ хупписем сĕтел айĕнче выртса параҫҫĕ. Кĕҫех анне ĕҫрен таврăнчĕ. Вăл та йĕри-тавра пăхкаласа ҫаврăнчĕ те:

— Аҫăр валли хурса хăварнă апельсин ăҫта кайнă вара?— тесе ыйтрĕ.

Эпир пĕр-пĕрин ҫине пăхкаласа илтĕмĕр те пӳрнесемпе сĕтел айне тĕллесе кăтартрăмăр.

— Кам ҫисе янă-ши ăна?— каллех ыйтрĕ анне.

Эпир картишĕнче выляса çӳрекен Илемпие пӳрте чĕнсе кĕртрĕмĕр.

— Илемпи, сĕтел çине хурса хăварнă апельсина эсĕ çимен пуль?— ыйтрăмăр унран.

Илемпи пуçне сулкаласа илчĕ те:

— Ăна эпĕ мар, Хураçка çисе ячĕ,— терĕ.

Эпир йытă çурине кӳрентĕмĕр, ăна вăрçса та илтĕмĕр. Пирĕн калаçăва анне итлесе тăнă-мĕн. Вăл сĕтел патне утса пычĕ те пăртак куларах:

— Апельсина кам çинĕ-ха?— терĕ.

Эпир пурте:

— Хураçка çинĕ,— терĕмĕр.

Анне пĕр самах та чĕнмерĕ. Вăл çавăнтах пăлтăртан тепĕр апельсин илсе кĕчĕ те ăна, çурмаран касса, Хураçка умне хучĕ. Йытă çури апельсин татăкне шăршласа пăхрĕ те малалла утса кайрĕ.

— Хураçкана эсир ахалех айăпа кĕртетĕр. Вăл апельсин çименнине хăварах туйса илтĕр пулĕ ĕнтĕ,— терĕ анне.

Илемпи çак мыскарана, хăй пĕчĕккĕ пулин те, лайăх ăнланса илчĕ пулас. Вăл хăй те апельсин пекех хĕрелсе кайрĕ. Хураçка Илемпи хĕрелсе кайнине сисрĕ-и, тен? Вăл ун патне пычĕ те ăна малти урисемпе темиçе хутчен те ачашласа илчĕ.

## ЧĔКЕÇ ЧĔППИСЕМ

Пирĕн лупас тăрринче чĕкеç йăви пур. Вăл пире мĕн чухлĕ савăнăç кӳмен пулĕ. Картишĕнче, çурт таврашĕнче ирех чĕкеçсем вĕçнине курса савăнатпăр вара. Вĕсен ыра, илемлĕ сасси чуна уçса ярать. Пĕрре çапла, хĕвеллĕ ăшă кун, эпĕ чĕкеç йăви çине чылайччен пăхса тăтăм та тĕлĕнмелле япала куртăм: чĕкеç чĕпписем пуçĕсене йăваран кăларнă, каçса кайсах чĕвĕлтетеççĕ, пурте ирĕке тухса каясшăн çӳлелле туртăнаççĕ. Эпĕ шиклентĕм: вĕсем кун пек йăваран тухса ӳкме те, аманма та, вилме те пултараççĕ...

Чăтаймарăм — пӳрте чупса кĕтĕм, хам мĕн курнине, сăнанине аннене йĕркипе каласа патăм. Анне эпĕ çав тери хумханнине сисрĕ пулас, мана лăплантарма пăхрĕ:

— Ан хумхан. Чĕкеç хăй чĕпписене лайăх сыхлать, вĕсене пурне те йăва çумне урисенчен хĕлĕхпе çыха-çыха лартать,— терĕ.

— Вĕсен вĕçмесĕрех йăвара пурăнмалла-и вара?

— Çук, ун пек мар,— терĕ анне,— чĕкеç чĕпписем пăртак ӳссе çитсен, вăй илсен, хăйсемех хĕлĕхсене тата-тата ирĕке вĕçсе тухаççĕ...

Чăнах та, тепĕр кунне эпĕ çакна хам куçпа хам куртăм: вăхăт çитнĕ-мĕн, чĕкеç чĕпписем ирĕке тухнă...



# ТУПМАЛЛИ

Сатин кĕпе *(повесть)* . . . . . . 3

## ҪАЛАВСЕМ

Ҫăлтăрлă ҫĕлĕк . . . . . . . 61
Пилĕк пуслăх укҫа . . . . . . . 62
Ку мĕне пĕлтерет? . . . . . . . 64
Пирĕн улмуҫҫисем . . . . . . . 65
«Ку вăл — эпĕ!» . . . . . . . 66
Ҫайăк тусĕсем . . . . . . . 67
Илем вăл — туслăхра! . . . . . . . 69
Кĕтмен инкек . . . . . . . 71
Укҫа . . . . . . . . . 73
Ҫич ураллă лаша . . . . . . . 76
Утарта . . . . . . . . . 80
Манман иккен . . . . . . . . 83
Кампур . . . . . . . . 84
Куршанак Мишши . . . . . . . 85
Тирпейлĕ пул . . . . . . . . 86
Чи пысăкки, чи тутли . . . . . . 87
Шурă палăк . . . . . . . . 88
Кулля . . . . . . . . . 90
Пĕрремĕш урок . . . . . . . 92
Пĕчĕк тимуровец . . . . . . . 93
Ҫырлана кайсан . . . . . . . 95
Петĕр айăпĕ . . . . . . . . 97
Сехет . . . . . . . . . 98
Пирĕн тусăмăр Олег . . . . . . 99
Ёне пăрулана . . . . . . . 100
Ашкăнчăк . . . . . . . . 102
Йывăрлăх килсен . . . . . . . 103
Амантнă хурăнсем . . . . . . . 104
Кукуруза хирĕнче . . . . . . . 105
Колхоз парни . . . . . . . . 107
Апельсин . . . . . . . . 108
Чĕкеҫ чĕпписем . . . . . . . 110



20 п.

ЧĂВАШ КĔНЕКЕ
ИЗДАТЕЛЬСТВИ